К84.09(=Чув)6
К89
Ч-41510

Владимир Кузьмин

# Вăрланă юрату



Национальная библиотека ЧР
4-041510

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Кф К 84.09(=Чув)6
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Владимир Кузьмин

# ВǍРЛАНǍ ЮРАТУ

Кф

Шупашкар
2002 çул

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос-Чув) — 44
К 89

ПРОВЕРЕНО
20 10

Ч-41510

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

ISBN 5-86765-221-1

© РГУП «ИПК «Чувашия», 2002

# ВĂРЛАНĂ ЮРАТУ

## 1

Патшалăх комиссийĕ лайăх паллă лартса панă хыççăн строительсем хăйсен ĕçне тата лайăхрах паллă турĕç. Калуш завочĕн культура керменĕ хула илемне капăр сăнпа çутатса ячĕ. Тахçантанпах вăрманта вăрттăнланса пытанса ĕçлекен завод калушпа мечĕк те кăларать-çке. Çавăнпа халăхра "калуш завочĕ" ят сарăлнă.

Виçĕ çул тĕрмешрĕ Малышкин управленийĕ Шупашкарăн кăнтăр-анăç енче. Тĕрĕссипе - Карсаков прораб участокĕ.

Çырă хулăн çӳçлĕ, сенкер куçлă, кĕске мăйăхлă, çаврака тулли питлĕ, юман кĕрешĕ пек Вася-Василек, Ваçлей; пуçне сарă каска, кĕлеткине шыв яман курткăпа шалпар шăлавар, урине кирзă атă тăхăннă Карсак; канмалли кунсемпе уявсенче мăнаçлăн утакан сарлака шлепкеллĕ, йăрăмлă костюмпа çап-çутă пушмаклă, зонтиклă Василий Николаевич ĕнтĕ вăл - Карсаков.

Тухăç енчен ӳкнĕ хĕвел пайăрки ăна ăшăтса вăратрĕ. Сарлака ывăç тупанĕпе питне çине-çине сăтăрсан та хăйне ачашлакан ăшă вăйран хăтăлаймарĕ, тĕлĕкĕнчен йывăррăн уйрăлса куçне уçрĕ те сасăсăр кулса ячĕ. Тĕлĕкре хĕвел çутисем, хĕр пек ясарланса, перекки ярăнаççĕ пек, юман тăррине вĕçсе анаççĕ те, уçă чӳречерен унăн пичĕ çинех юхса кĕреççĕ, ташă картине çаврăнса тăраççĕ. Хĕрсен ташшипе питçăмарти кĕçтет, кăтăкланать. Çамкаран тута хĕррине çити ункăланă хĕр хĕлхемĕ пĕçертет те пĕçертет, вĕсен варрине хупăннă сăмса хытса каçăрăлать. Ташăçăсен ертӳçи, сăмса тавра тăпăртатса çаврăннă хыççăн, тута хĕррине чечек пылĕ сĕрсе тухать, хăйĕн ушкăнĕпе тепĕр вăр саврăм тăвать те, куç умĕнчен çухалать.

Ваçлейĕн тути çаплах кулать-ха, тĕлĕкри ташăçăсен ертӳçи алтăрпа ăсла пырса ĕçтерессе кĕтнĕ пек пылакланать, анчах темле кĕтсен те тĕрленĕ кĕпеллĕ хĕрупраç куç тĕлне пулмасть, хăпнă ăша никам та кантармасть, хăлхана çеç шăпчăксем тьăвлатни кĕвĕлентерсе ярать. Хăй те шит-штит, ӳ-ӳ-ӳ-и-и-ить, чи-чи-чи, чью-ю-юшь-шь тутарса юрласа ярать те, çывăхри шăпчăксене çĕнĕ хăватпа

астарса пĕр çаврăма пуçтарать. Ун аллине кĕрсе ўкнĕ вĕçенкайăксем çутта тухнă тавралăха, унта пурăнакан çынсене çĕнĕ кун ситнине палăртса, кĕвĕллĕ хум сапаççĕ, çутçанталăк сыхăнăвĕнче кăмăллă туйăм çуратаççĕ.

Упăшка тупайман Манька-крановщица юрату пылакне сăмсаран сĕрсе хăвармарĕ-ши тесе те шухăшласа пăхрĕ Ваçлей, анчах туйăм кĕлеткере урăхларах йăшăлтатрĕ. Каска пуканĕ пек Манька сĕмĕ мар ку. Тутари шăршă та ун шăрши мар. Чун-хавал хĕрўлĕхне шăнăçтараймасăр, кран кабинине силлентерекен Манькăна ăшри туйăма палламан шăршă сарса ўсĕртекен ирхи шăпчăкпа танлаштарса пăхрĕ. Тĕлĕкри пике, юманлăхри шăпчăк кĕлеткене кĕрсе чуна, юна хутшăннă пекех, пике енчен вăрттăн кĕрсе кайнă вăйлă хум утияла çĕклерĕ, Манькăна таçта çити курăнми хўтерсе ячĕ. Ку туйăм мĕне пĕлтернине ытлашши шута илмесĕрех Ваçлей хăйне ирхи йĕркене кĕртрĕ. Паçăртанпах сăмсана кăтăклакан суханпа аш шăршине татах та тутлăлантарса, кухньăна кĕчĕ. Арăмĕ çĕрулми ăшаланă. Сĕтел çине çур литр лартнă. Ваçлей пĕр черкке ярса мухмăр чĕртрĕ те арăмĕ çине куç айĕн пăхса тутине култарчĕ, пысăк преми пулать, терĕ. Укçа та, япала та самаях перекетленĕ вĕсем стройкăра, укçалла та, сыпмалла та, тусла-тăванла та сахал мар ярăнтарнă, виç уйăх маларах туса пĕтернĕ кермене. Уйăрнă укçа-тенкĕрен хавхалантармалăх пурне те çитет - хуралçă таранах.

Апатланнă хыççăн Ваçлей балкон çине тухса карăнчĕ, ĕнерхи шалу укçине вырнаçтарма каякан арăмне алă сулса ăсатса ячĕ те юманлăха чылайччен сăнарĕ, пирус туртса ячĕ. Хĕвел куçа шартарать, шăпчăк сасси тамалнă, вăрман енчен вĕри сывлăш капланса килет.

Çĕнĕ кермен йывăççем витĕр курăнмасть. Тўрĕрен вара вăл кунтан икĕ çухрăмран ытла мар. Утас пулсан, кукăр-макăр çул-сукмакпа - виççе те çывхарать. Строительсем пек каласан, нуль шайĕнчен - никĕсрен - пуçларĕç кăткăс çурта тумашкăн. Малышкин ăнах шанса пачĕ хĕрĕхĕмĕш позицие. Ун умĕн хулан пĕр райадминистраци çуртне кăлтăксăр шăрантарса лартнă хыççăн, трестра ырă ят сарăлчех пулмалла çав унăн. Унччен тунă çурт-йĕр пирки те япăххине илтмен. Хула тăрăх çўренĕ чухне хăй тунă кашни çурт умĕнчен чарăнса сăнамасăр ниепле те иртсе каяймасть, нумай-нумай асаилў ытамне кĕрсе ўкет. Лайăххи те, япăххи те, тем те пулнă. Ялтан хулана çĕтĕк тумпала килсе ура сырнă. Училище, техникум, стройфак. Стройкăра ăна-кăна тăвакан, “тур шывĕ” патне чупакан, каменщик, бригадир, мастер, прораб - ĕç тăвакан. Тĕп ĕçе тăвакан, ĕçе йĕркелекен, çĕршер çул маларах пăхса типтерлĕ, илемлĕ, çирĕп ĕç пурнăçлакан. Никĕсĕ те ан антăр, стени те ан çурăлтăр, кирпĕче тыттармалли ирĕлчĕкĕ те хытсах, çирĕпленсех пытăр, кĕтес тўрĕ, çăтă, тăрĕ яка, тикĕс пултăр - çакă унăн тĕп хакĕ.

Каçпа паян кун пирки мухтав шавĕ янăрарĕ. Калуш завочĕ кермен тăвакансене чыслать. Унашкал савăк каççенче Ваçлей Карсаков миçе пулнă-ши - шутламан, анчах паянхи уяв

мĕскершĕн ун чунне канăçсăрлантарать-ха, чĕрене йăшкаттарать. Хăма урай тăрăх кумланă май хăйне хăй лăплантараймасть. Ĕçне туса пĕтернĕ, кермен хатĕр, кайса лар та мухтав сăмахне итле, преми-парнине ил, юлташусемпе куç курми пуличчен савăн, киле йĕркеллĕ çит. Урăх никам та ним те ыйтмасть санран, урăх эсĕ, арăмусăр пуçне, паян никама та пит кирлех мар. Çук вĕт, никотин та пусараймасть тапраннă пăлхава. Пуçри усăсăр шухăша сирсе ярас тесе вара вăл Артемьевăн “Салампине” вулама пуçларĕ. Ун пек чухне ялан кĕнеке пулăшать ăна. Пĕчĕклех амăшĕсĕр тăрса юлнă Ваçлей чăваш çыннин хуйхи-суйхине ĕненмелле уçса панă хайлавсене куççуль кăларсах чĕри витĕр сăрхăнтарать.

Арăмĕ чаплă кĕпе, пальто туянса килчĕ. Упăшкине пушмак лартса пачĕ. Шăпах юрăхлă. Хĕсмест.

- Тăхăнса пăхмасăр мĕнле илме пĕлнĕ эсĕ? - кĕнекине пуç вĕçне хурса тĕлĕнчĕ Ваçлей.

- Виç çул пурăнса та упăшка размерне пĕлмесен вара ман арăму тесе мĕнле курăнас сан умăнта? - савăнăçне пытараймасăр çĕнĕ тумпа тĕкĕр умĕнче явкаланчĕ арăмĕ.

Мăшăрне юратать-ха Ваçлей. Хăй каланă тăрăх, çӳпçи май хупăлчиех тупăннă. Ывăл ӳсет вĕсен. Кăмăл-туйăмĕ иккĕшĕн пĕрпекрех. Çапăçса, япала çĕмĕрсе кӳршĕ-арша тĕлĕнтермен, ашшĕ-амăшне (амаçури амăшне) ăш хыптарман. Килти кашăк-чашăка шакăртаттарса куркаланă ĕнтĕ, унсăр епле-ха пурăнан. Кăмăл-туйăм сикки мар-и-ха вăл?

Арăмĕпе калаçнă чухне те пуçра такам хуçаланать унăн. Вăл арăмĕпе мар - такампа калаçать. Аптранипе арăмĕ эс ĕçнĕ пулас-ха тесе шăршласа, кĕленчене тытса пăхрĕ.Лешĕ юрĕ-çке, хăнăхнă эп сана пĕрмай хăвăн кирпĕчӳсемпе тимĕр-бетону çинчен шухăшласа пуçна ватнине, эп кирлĕ мар сана тесе мăртлатса илсен тин арăмне ыталаса илчĕ, ячĕшĕн чуптукаларĕ, ачашланса ун тавра йăпшăнчĕ, каçпа кермене пĕрле кайма чĕнчĕ. Арăмĕ килĕшмерĕ, вăл каçпа амăшĕ патне каять иккен. Ачи унта-çке вĕсен. Кун пирки мирлех калаçса татăлчĕç.

Вăхăт çитерехпе Ваçлей Карсаков хваттерĕнчен васкаса тухса утрĕ. Кермен патне троллейбус-автобуспа çаврăнса каймалла. Çурран, çырма урлă, тӳрĕрех. Такам хыçран хăваланă пек, умра ылтăнахах купи кĕтнĕ пек авăстарса пырать вăл вăрăм урисене. Чăнкă çыранран чупса анчĕ, тăвалла пĕр утас вырăнне иккĕ туса ăнтăлчĕ. Кермен умĕнче кукалесе тăракан юлташĕ, Йăван Павлов, кулкаласа ун чĕрине тытса итлерĕ:

- Сиксе тухать вĕт, мĕн, арăму хыççăн чупать-им? - тесе çурăмĕнчен хытах шаплаттарчĕ.

Бригадира Карсаков хăй арăмне пĕрле чĕнни, анчах вăл ерçейменни çинчен каласа ăнлантарчĕ те, шӳте туйса йышăнмасăрах мрамор картлашка çине ярса пусрĕ. Чĕре кăлт-кăлт тăвать. Юлташĕсемпе сăра ĕçнĕ хыççăн пуç пушшех пăтранса кайрĕ, тем шухăшĕ явăнать.

Пуян чысларĕ вĕсене калуш завочĕ. Паха керменшĕн тав турĕç. Ваçлей Карсакова яппунсен телевизорне парнелерĕç. Савăнма концерт, вăйă-ташă хатĕрленĕ. Кермен тул енчен те, шалтан та капăр пулсан, уяври халăх кăмăл-туйăмĕ те савăк пултăр тенĕнех хатĕрленнĕ ăстаçăсем.

Кăштах хĕрнĕ Йăван Павлов анчах ăна пĕç çĕклесе ташлакан хĕрупраçсен çара ура илемĕ пирки ахлата-ахлата тăнлантарма тытăннăччĕ, анлă сцена çине çӳхе кĕпине вĕлкĕштерсе шур акăш ишсе тухрĕ. Сылтăм аллинчи чечеклĕ тутăрне сулласа, чакăр куçĕпе зала ялкăштарса ячĕ те пирĕшти Ваçлее сывлайми туса лартрĕ. Хăй сисмесĕрех вăл чĕрине ярса тытрĕ, кăштах çĕкленсе малалла ӳпĕнчĕ, юрăç сăмахĕсене виç кун çимесĕр пурăннă хыççăнхи пек çăтма пуçларĕ:

Эпĕ саншăн, эсĕ маншăн,
Çуралман-ши тĕнчене?
Эсĕ маншăн, эпĕ саншăн
Çунтарман-ши чĕрене?

Уçăмлă сасă кĕвĕленсе юхать, çепĕç хумлăн çапăнса пит-куçа кăтăклантарса ярать, курăнми туртăм çиппине карса лартать юрăçпа Ваçлей хушшине. Баянист выляса кĕвĕ çаврăмĕ тунă хушăра кăкăрне каçăртса сывласа илет те ăрăмçă пике каччă чунне асам çиппи тăрăх хăй ăшнелле туртать:

Вăрансам-ха, асамлан-ха,
Çывхарсам ман патăма.
Вăтанмасăр ытала-ха,
Ăшăтса яш чунăма.

- Пăх-ха эс тути çăварне, - кăлт тĕртет Йăван Павлов. - Сан Манька-крановщицуннинчен виç хут пĕчĕкрех. Титьки-питьки те ывăçа кĕмелĕх çеç, Манька-ĕненни мар. Пĕчĕк туталлин ун тутлă тути те пĕчĕк тет. Тăвăр, тет.

Ваçлей юлташĕн аллине ыраттармаллах чăмăртаса лартрĕ, çамки çине шăпăртатса тухнă тарне шăла-шăла малалла итлерĕ:

Вут чĕремĕр сыввăн таптăр
Хĕрнĕ ӳт ытаменче.
Юн вĕретĕр, канлĕх сиктĕр
Юрату хуранĕнче.

- Санах чĕнет ку йăкăлти. Ваçлей, хăюллан, чуп часрах, на чечек,- хĕтĕртет Йăван. - Çав Манька-ĕнепе намăс куран.

Тепĕр енче ларакан каменщик та хулпуççинчен сисĕмлех çатлаттарса илчĕ ăна, ыттисем кулса ячĕç. Пăлханнипе ахаль те юн тулнă пичĕ анис улма пек курăнакан пулчĕ Карсаковăн, вара вăл чăтаймарĕ, сĕннĕ чечек çыххине силлесе сцена патнелле таплаттарчĕ. Шăпах ĕлкĕрчĕ. Баянистпа юрăçă пуçĕсене пĕке-пĕке каялла утма пуçланăччĕ. Пăлханса та вăтанса, урисене урлă-пирлĕ пуска-

ласа çывхарчĕ Васлей вĕсем патне, баянистне алă пачĕ, куçран пăхмаименсе чечек çыххине пикене тыттарчĕ, хăюлланарах кăххăмлатрĕ те, саламларĕ:

- Чиперккеçĕм, хамăр строительсем ячĕпе чĕререн тухакан ак çак ăшă салам сире. Мĕнле чаплă юрларăр...

Алă çупни вăйланса пычĕ, чарăнмасăр чылайччен кĕрлерĕ, шăхăракан та, кăшкăракан та илтĕнчĕ. Концерта ертсе пыраканĕ юрăçпа баяниста вĕсен ыйтăвне тивĕçтерме сĕнчĕ.

Пике алли пĕçертнипе вĕриленсе кайнă Карсаковăн кĕлетки тăр-тăр чĕтренсе илчĕ, часрах вара вăл картлашкапа анса малти рете ларчĕ. Кунтан питĕ уçăмлăн курăнать. Çӳхе кĕпе айĕнче хускалакан пĕçсен паллипе çинçе пилĕкĕ, мечĕк пек чĕччисем, çаврака питçăмартийĕсем, хăмăртарах хура куç, кăтралатнă çăра кĕске çӳç, хайхи Йăван Павлов мухтаса пĕтернĕ тăпăлкка тута. Шапа çăварĕ пек карăнакан хăшпĕр юрăçсен çăварĕ мар ĕнтĕ, чуптума меллĕ çӳхерех тута, кăшт каçăртарах хитре сăмса. Хăй çине кăна пăхса, хăйне çеç юрласа панăн туйса ларчĕ Васлей çемçе пукан ăшшинче. Ытти юрăçсен юррисем хăлхана та путлĕн кĕмерĕç, концерт вĕçленессе çеç кĕтрĕ вăл.

Ташша тухсан Карсаков юрăç-пикене асăрхарĕ. Вăл хăйĕн пуçлăхĕпе Малышкинпа çаврăнать. Çӳхе кĕпе варкăшăвĕ çĕкленĕ сывлăш хумĕ сăмсана кăтăклантарса хăварчĕ, чĕре хыттăнрах тапма пуçларĕ, чун вĕриленчĕ. Хăй патнелле çывхаракан Манька-крановщицăран хăпас шутпа вăл хыçалалла чакса-чакса уçça тухрĕ те чупсах тепĕр еннелле васкарĕ. Акă вальс çемми вĕçленчĕ. Ташлакансем ушкăнсене пуçтарăнчĕç. Васлей хĕсĕнсе мала тухса тăчĕ. Ун умĕнчех хайхи пике çамрăксемпе кулкаласа калаçать. Мĕн пулать те мĕн килет тесе ăшра сăхсăхрĕ те Карсаков кĕвĕ пуçланнă-пуçланман хĕр умне çитсе ăна ташша чĕнчĕ. “А-а, эсир-çке ку, хавасах”, - тесе хĕр килĕшрĕ. Васлей пике аллине ывăçласа тытрĕ, сылтăммипе пилĕкне хупласа хучĕ. Ток çапнă пек кăрт тунине туйрĕ кавалер. Паçăрхи курăнман çип халĕ вĕсене, çаврăннă май, явакларĕ те явакларĕ, ăнсăртран сĕртĕннĕ чĕчĕ витĕр çиçĕм ялтлатса кăкăра çунтарса илчĕ. Ташăçсем ăшра вăрттăн шухăшласа-калаçса пĕр хушă куçран пăхаймасăр нушаланчĕç, хĕрĕ чăтаймарĕ, ачашшăн ыйтрĕ:

- Эсир тунă-и çак çурта?

- Эпир.

- Мĕн тери пысăк усă кӳретĕр эсир халăха.

- Эсир те.

- Юрланипех пурăнаймăн. Пурăнма пӳрт, юрлама-ташлама кермен кирлĕ.

- Юрлакан-ташлакан пулмасан, пӳртпе керменĕ те кирлĕ мар.

- Çапах та эсир маттурсемех, паттăрсемех. Ĕмĕр-ĕмĕре юлать сирĕн ĕç. Çавăнпа сирĕн умра чуна уçса юрлас килчĕ. Эпир - çырма леш енчен.

- Ăçтан? Хăш театртан?

- Музыка училищинчен. Ыран экзамен-ха. У-у-ух, хăратать.

- Эсир паян экзамен тытрăр. Çавăн пек йышлă эртелпе "пиллĕк" лартса патăмăр. Çиччас алă пусатпăр. Урăх мĕн кирлĕ?

Хĕр çемçен кулса калаçрĕ:

- Эсир алă çупса алă пусни çитмест çав. Нумай тертленмелле.

- Ман пĕр пакăлти юлташăм Йăван Павлов пур. Çавă хăлха çумĕнче чăшалтатнипех эп сирĕн ята илтсе юлаймарăм. Паллашмаллах пуль...

- Марина Ларина эпĕ. Эсир?

- Васлей Карсаков.

- Вася-Василек пулатăр апла эсир маншăн çак самантран пуçласа. Юрать пуль çапла чĕнме?

- Эп хирĕç мар. Мана çавах. Ăçта пурăнатăр? Общежитире-и?

- Ялта та, хулара та.

- Ак тата?

- Çур ял-çур хула урамĕнче.

- Э-э-э, пĕлтĕм, пĕлтĕм. Мир урамĕнче мар-и?

- Çавăнта. Чукун çул хыçĕнче. Хамăр килтех.

- Ай вай-вай, кĕçех çăтса ярать вĕт сирĕн килсене аслă урам. Мотор завочĕ валли мăн çуртсем лартма тытăнатпăр. Ĕçне тума треста укçине те куçарса панă.

- Аннесем те кулянаççĕ. Шалккă. Ачалăх килĕ, сад пахчи пĕтет. Улмуççисем...

- Мĕн тăвăн, хула варрине илемлетме тунă аслă урам ĕмĕрĕпех хулапа ялран тăраймĕ ĕнтĕ. Атту халь пĕр енче чул çурт, тепĕр енче йывăç пÿрт. Хула хăюллăнах таптать яла.

Çапла калаçкаласа вĕсем пĕр-пĕрне хăнăхса пычĕç. Манька-крановщица çулса илчĕ-илчех Васлее, аларан ямасăр, ирĕксĕрлесе тенĕ пек пурпĕрех ташлаттарчĕ икĕ ташă, кĕçĕр улаха чĕнчĕ. Карсаковăн халĕ пуклак лапа ват хĕрпе кайма мар, унпа юнашар та тăрас килми пулчĕ, мана кĕçĕр арăм кĕтет-ха, саняттăй тесе суйрĕ те вăл ăна Маринăсен ушкăнне кĕрсе кайрĕ. Маринăн та тин çеç паллашнă мăнттайран уйрăлас килмерĕ-ши, куçне-пуçне чалкăштарса ун еннелле шикленÿллĕреххĕн те, хăюлланса та пăха-пăха илчĕ, унпа татах та ташларĕ, ташă хыççăн хăналанса пуян строителĕн коньякне те тутанса пăхрĕ, шоколадне те астиврĕ, хăйне Вася-Василек ăсатса яма ыйтсан... хăвăрт тем шухăшларĕ те, тăрук килĕшрĕ, ачалла сиккелесе илчĕ.

Телевизор леçме Карсакова стройтрест хуçи хăйĕн "Атăлне" ирĕк пачĕ. "Чиперккÿпе ирччен чупма пултаратăн, Малышкин парни çумне хушнă парне пултăр", - тесе машина алăкне уçса Марина Ларинана ларма сĕнчĕ, мĕнпур ырлăх сунчĕ.

Акă вĕсем Чапай поселокĕнчен тухса Октябрь кĕперĕ çине йăрлаттарса кĕчĕç. Çурхи садсемпе вăрман шăрши, хăвăртлăха çĕнтерсе, уçă кантăкран сăрхăнса кĕрет, хăй вăхăтĕнче имлĕ сывлăшпа сывласа юлăр, çур шăрши çуркуннечченех шăмшака çапать, мĕн виличченех ăшра юлать тенĕнех чуна уçать.

Калаçу çыхăнмарĕ. Марина Ларина кĕлте пек чечек çыххине пĕççисем çине тăратнă, икĕ аллипе те çавăрса тытнă. Васлей шо-

фер çумĕнчи телевизорне асăрхаса пырать. Павлов мичман урамне çитнине сиссе те юлаймарĕç. Карсаковпа шофер телевизора пиллĕкмĕш хутри хваттере кĕртсе лартнă вăхăтра Марина шухăша кайрĕ:

"Мĕн пулчĕ-ха мана паян? Иртенпех канăçсăрланатăп. Пĕртте хам шутланă пек пулса пымасть. Ыранхи экзамен умĕн концерта хутшăнас мар тенĕччĕ - сăмахсăрах килĕшрĕм. Урăх юрă юрлас тенĕччĕ - хам çырнă сăвă-кĕвĕпе сиксе тухрăм, якатса çитерейме-сĕрех. Валерккăна киле пыма каларăм - хам темле прорабпа ярăнса çӳретĕп. Вунпĕрмĕш троллейбус патне утса тухаймасттăмччĕ-ши? Вунă минутра вокзала илсе çитерет. Унтан ансан чукун çул айĕпе тух та - анкарти, сад, улмуççи, кĕтнĕ тĕлпулу вырăнĕ. Мĕнле вăй урăх çул-йĕрпе илсе пырать мана? Хама хам итлейместĕп, хама хам итлеттерейместĕп. Мĕн, арçын çуккă-им урăх? Кунсăр та, Валерккăсăр та ăсатас, калаçас, ыталас текенĕ лăк тулли. Çапах çав Шуркасси ачинех юрататăп. Химкомбинат айне пулнă телейсĕр ял каччинех кĕтетĕп - кашни каç. Кĕçĕр вара... Вуннăра пыма хушрăм, халĕ çурçĕр çитет. Пăрахса та кайрĕ пуль. Çиллине шăнараймасăр тепĕр чух çурранах утакан. Ик хула хушшинчи автобус çӳреме пăрахсан вăл ахаль чухне те ялне тухса чупатчĕ. Халĕ ĕнтĕ комбинат панă çĕнĕ хваттерне çитрĕ пуль. Мĕскершĕн вĕриленсе канăçсăрланатăп-ши?"

Арçынсем подьездран тухрĕç, аллисемпе хăлаçланса тем çинчен калаçса çывхараççĕ.

- Марина, кĕттернĕшĕн каçарăр. Халĕ сире киле ăсататпăр. Хирĕç мар-и? - çума кĕрсе ларчĕ Карсаков.

- Тавтапуç. Хăвăртрах çитесчĕ, - пуçне пĕксе килĕшрĕ Ларина.

Вĕсем ĕнтĕ пушă урампа ӳхĕрттерсе çеç пыраççĕ. Вася-Василек чечек кĕлтине ыйтса илчĕ, каллех Марина аллине сĕртĕнсе хĕмленчĕ. Мир урамне çитсе чарăнсан, вырăнтан та хускалма хăрарĕ, çаплах юнашар ярăнас, ярăнас килчĕ унăн, анчах тухмалла, хĕре калитке умне  çитиччен ăсатса ямалла.

Шоферĕ Маринăна алăк уçса тухма пулăшрĕ. Ачи вăл кунашкаллине хăнăхнă-ха пуçлăхпа çӳресе, хăйне хăй тытма вĕреннĕ, çул çинче те, ахаль чух та çын калаçăвне хутшăнмасть, кам мĕн пупленине-мухтаннине тăнласа çеç пырать, хушнине итлет, вăхăтра тăвать, машинăна типтер тытать.

Маринăшăн шофер алли ним пек те туйăнмарĕ, çак упан алли вара, сцена çинче пуçласа сĕртĕнсенех темле хăрушла туйăм кĕртсе ячĕ кĕлеткене. Çав туйăм хуçаланть халĕ ăшра. Юнашар ларса пынă чухне, тĕлĕнмелле, намăссăрлăх шухăшĕпе пĕç хушши нӳрелчĕ, канăçсăрлăха кĕрсе ӳкнине пула куçа хупса, темле нихçан курман ырăлăха ĕмĕтленсе ярăнчĕ ларкăчра. Туйми тунă асап саманчĕ иртсе кайнă хыççăн, хăйĕнчен хăй вăтанса, темиçе сехет каярах паллашнă капăр арçын çине пăхма та хăяймарĕ. Хăйпе мĕн пулса иртнине вăл ăнланчĕ пуль тесе çăварне те уçмарĕ, типсе пыракан тути хĕррисене чĕлхепе çуллакаларĕ. Кĕлеткери çакăн пек алхасу

вăхăтĕнче унăн çăварĕ типет, чĕлхи çĕтет.

Сăмсана пырса çапнă юрату шăрши вара Вася-Василека эрехрен те хăватлăрах ӳсĕртсе ячĕ. Туйăм туртăмĕ курăнман çип тăрăх йăкăртатса иккĕшне те пĕрешкел канăçсăрлăха куçарчĕ. Çĕкленекен шăлаварне чечек кучĕпе пусса лартрĕ те вара вăл хĕрпе хăйĕн хушшинче пулма пултарас ӳкерчĕкпе ăсра киленсе, шухăш-ĕмĕтне пике ан пĕлтĕрччĕрех тесе вăтанса хĕрелчĕ. Шухăшпах арăмĕ те, Манька-крановщица та вăратман шăллĕн туйăмне. Йĕпеннĕ сулахай шăлавар пĕççине аллипе хупласа вăл хĕрпе юнашар утрĕ, калитке умĕнче хăйне чараймарĕ, алăкран кĕчĕ, тепĕр алăк витĕр сад пахчине тухрĕ, улмуççи патнелле çывхарчĕ. Хыçалтан шофер кăшкăрнине илтсе çаврăнчĕ те, ăна кĕтме ыйтса, аллине сулчĕ.

Улмуççи айĕнчи пĕчĕк чуччу ларкăчĕнче темле çын ларать. Вĕсене курнипе чалтах сиксе тăчĕ те вăл хĕре аллисенчен ярса тытрĕ.

- Ирччене х кĕттеретĕн-им эс мана?! Ку тата мĕнле камит? Кам ку?

- Валерка, эс тӳрех вĕри çатма çинчи пăрçа пек ан сиккеле-ха, этемле пул, йĕркипех каласа паратăп, паллаштаратăп та, - тесе майĕпен каччă аллинчен вĕçерĕнчĕ. - Эпир паян “Салютра” концерт патăмăр-çке, сана систерейменрĕм, каçар, ытла васкавлă пулса тухрĕ те. Çав кермене тунă Василий Николаевич Карсаков прорабпа паллашрăмăр унта. Вăл мана машинăпа сан патна çитерсе ячĕ. Акă вăл. Тав ту ăна.

Чалăшшăн тăракан йĕкĕтĕн шур куçне Ваçлей тулли уйăх çутинче витĕрех курать. Валерка текенскер, тарăхнипе, шăлĕсене шатăртаттарса илчĕ. Вăрçас-мĕн пулсан Карсаков унран, йăпшакскертен, хăраса тăрас çук. Сахал юсанă-и вăл хăй вăхăтĕнче чăркăшпуçтаха. Ку таранччен ăна урараН ӳкерекенни пулман-ха.

- Салют хыççăн салют патăр пуль-ха, ахальтен çав таранччен çӳрес çук, - чакаланчĕ каччă. - Калуш завочĕ кăларакан ракетăсăрах тупнă эс авăрланă ракета, Суйпике.

- Ухмах эс, хăвна ху йĕркеллĕ тытма пĕлмен лапша, - тесе Ларина ларкăча кĕрсе ларчĕ, урипе тапса ячĕ. - Э-эх! Ярăнтарăр мана!

Ларкăч пăявне маларах Ваçлей ярса тытрĕ, хыттăн сулса ячĕ, чечек кĕлтине хĕр чĕрçи çине хучĕ. Тĕлпулăва килнĕ йĕкĕт те вара чуччăва тепĕр енчен ярса илчĕ. Пĕр-пĕрин çине пăха-пăха иккĕшĕ те чуччу пăявне унталла-кунталла силлерĕç. Ахăлтатакан Марина канлĕн ярăнчĕ. Йывăрăшпа авăнакан турат, пăяв йăлли куçнă майăн, те савăннипе, те хурланнипе хăй-йăк, хăй-йăк туса çĕрлехи шăплăха вăратрĕ. Чечекри сад имлĕхĕнче ишекен виçĕ чĕре виçĕ тĕрлĕ тапрĕ.

- Çитĕ, - илтĕнчĕ Марина сасси. - Ярăнса тăрантăм. Тавах иксĕре те.

Валерка хĕре çанăран туртса аяккалла пăрасшăн пулчĕ, Марина ăна тем каларĕ. Каччи вара, мăкăртатса, лăпланчĕ. Ыр кăмăллă Вася-Василек та лăпланнăччĕ ĕнтĕ, паян Турă панă пике куçĕнчен тепре пăхса илетĕп те килелле вĕçтеретĕп тесе шутланăччĕ çеç, пӳрт алăкĕ çинче çакăнса тăракан пысăк çăрана асăрхарĕ. “Пӳртĕнче

никам та çук пулас, пĕчченех пурăнать-ши?" Карсаков алăк çине пăхнине асăрханă Марина:

- Аннесем хăйматлăхĕн менелникне кайнăччĕ, таврăнайман, уççине те хăварман, хамăн та çук, халь тин ĕнтĕ... - терĕ ыйтуллăн, ассăн сывласа.

- Урхамах пур вĕт санăн, ун йĕнерĕ çинче сиксе те çĕр каçма пулать, - каллех чăрсăрланса йĕплерĕ каччă. - Эп çурранах...

Марина унăн çăварне пĕчĕк ывăçĕпе хупларĕ. Ăна пўрнипе юнарĕ:

- Ах ытла тулăксăр-çке эс. Пуçпа çавăрттарса калаçма пĕлместĕн. Культурăллă çын тетĕн тата хăвна, эп инженер, тетĕн. Пĕр химичить тума кăна пĕлетĕн шăршлă комбинатунта. Çынна вĕлермел...

- Шăпăрт! Ун пирки çăварна уç тулĕк. Мана...

- Мĕн, сана... Эс ĕçлен, хими чури, комбинату пур, тĕнчешĕн - çук. Калуш завочĕ пекех вăрттăнлăх купи. Çынçиен нуши.

Ăна-кăна илткеленĕ Карсаков çатăлтатса тăракан хыткан йĕкĕт ăçта мĕн кăларнă çĕрте химичить тунине тўрех ăнланчĕ, хăйĕн вăрттăнлăхне сыхласа хăварассишĕн çине тăнине те туйрĕ. Анчах темле вăрттăнлăх та майĕпен çиеле тухать-çке, упăшки арăмне, арăмĕ тантăшне, тантăшĕ çывăх çыннине "шăпăрт пул, сана çеç хăлхаран пĕлтереп" тесе чунне уçса парать. Чĕрĕ чунăн чĕлхи кĕçĕтсех тăрать çав, пуçĕ пăтранать те ыратать. Çўл тўперен сăнаканшыракан та пур. Хальхи саманара нимĕн те пытараймăн, санран лайăхрах пĕлсе тăраççĕ эс мĕнпе аппаланса сывлăхнă пĕтернине укиян леш енче.

Аптăраса ўкмерĕ Карсаков, хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ:

- Итлĕр мана, Марина, каччуна Çĕн Шупашкара леçсе хăваратпăр та сире аннўсен хăйматлăхĕсем патне çитерсе яратпăр. Килĕшмелле-и?

Çапла турĕç те. Çăмăл машина Сĕнтĕрвăрри çулĕпе мĕкĕрсе ўхĕрет. Çул уçă, яка. Икĕ арçын хушшинче хĕсĕнсе ларса пыракан Марина Ларина шухăшĕпе пăтранать:

"Мĕншĕн маларах тĕл пулмалла пулнă-ха манăн çак Валерккăна? Университетра питĕ лайăх вĕреннĕшĕн-ши, комбинатри вăрттăн ĕçре укçа нумай йăтăнтарнăшăн-ши, икĕ пўлĕмлĕ хваттершĕн-ши, юмахри пек телейлĕ пурнăç пулать тесе хавхалантарнăшăн-ши, чиперкке сăнĕшĕн-ши? Мĕншĕн юратнă ăна, Шупашкарта, Атăл хысакĕнче ăнсăртран тĕл пулнăскерне?

Мĕншĕн сиксе тухрĕ-ха шăпа çулĕ çине çак упа? Пăхаттирле кĕлеткишĕн-ши, калаçнă чухне ăшă кулă парнеленĕшĕн-ши, чечек çыххишĕн-ши, ташăра меллĕн çаврăннăшăн-ши, катаччи чуптарнăшăн-ши?

Мĕншĕн кĕлеткине силлесе пăрахрĕ-ха унăнне сцена çинче ăна пуçласа курнăскер? Акă халĕ те сылтăм айăкка кăвар пек çунтарать, каллех пaçăрхи туйăма вăрататъ, чăтăмлăха çапса хуçса хăй еннерех тайăлтарать. Мĕнле туйăм ку, ирпе ирех пуçлан-нăскер?"

Сулахайран туйăмсăр лĕп ăшă çеç тивет кĕлеткене. Чĕрĕ этем ăшши ĕнтĕ. Нимĕн те шухăшлаттармасть, ĕмĕтлентермест, нимĕн

те асаплантармасть. Урам кукăрĕнче машина çавăрттарса илсен те сулăнас килмерĕ унталла Маринăн, Вася-Василек хулĕнчен ярса тытрĕ. Тормоз шăхăртса ярсан вăл тĕлĕкри асамлăх асапĕнчен вăранса карăнчĕ, икĕ аллине те икĕ еннелле сарса хучĕ: "Мейĕр, тытăр, хăшĕ вăйлăрах, çавă йăтса кăларать". Валерка та, Вася-Василек та пике аллине тытса ачашлама пуçларĕç. Кĕлетке канлĕхĕ тамалнă май Марина аллисене туртса илчĕ, пурне те тухма ыйтрĕ, алăкра шофера çеç алă пачĕ.

- Тавтапуç сире, Василий Николаевич, сире те, маттур ямшăка, ӳркенменшĕн, - çаврăннă кăмăлне кăтартса подьезд еннелле çавăтсах хӳтерчĕ шупашкарсене Валерка Янташов. - Кĕрĕр-ха ман пата. Хăна пулăр.

Ахаль чухне паллана-палламан çын патне кĕрес те çукчĕ-ха Карсаков, Марина та чĕнчĕ те, шоферĕ те хирĕçлеменскер, килĕшрĕ сĕнӳпе.

Карсаков строитель куçĕпе картлашкаран пуçласа мачча таранах витĕр куçпа сăнаса ăшĕнче хак парса пычĕ çурт тăвакансене. Тул енче те, шалта та кăлтăкĕ тем чухлех. "Ытла та мăшкăллатпăр çав çынсенчен, хамăр вара апатне те пит тутлă çиесшĕн, пит паха тумтир тата ыттине те туянасшăн, çав хушăрах çавсене хатĕрлекен-тăвакана куç хупмасăрах улталатпăр, пĕртте совĕç çук", - калаçрĕ вăл ăшра.

Пĕччен пурăнакан хусахăн хваттерĕ епле таса, типтерлĕ, кашни япала хăй вырăнĕнче. Чăкрашма юратсан та, йĕркеллĕ çынах пулас. Хусахла пурăнакан строительсенни пек лăпăр-лапăр çук.

Кухньăра Марина та ăна пулăшма пуçларĕ. Темтепĕр ăшăтса-ăшаласа сĕтеле тултарса та лартрĕç. Ал-ура çаврăнать хĕрĕн. Ахăртнех кунта вăл пуçласа мар, ытла хăйне хăнăхуллă, хăюллă тытать.

Шампань эрехĕ уçрĕç, ура çине тăрса телейшĕн ĕçрĕç. Камăн телейĕшĕн-ши, калакан пулмарĕ, кашниех ăшĕнче темле вăрттăн пулăм пирки шухăшларĕ пулас. Кайма тăрсан... Кил хуçи Маринăна çавăрса тытрĕ те:

- Хам юратупа эп хам хуçа, ниçта та парса ямастăп ăна, никама та, - тесе хĕре çемçе креслăна лак лартрĕ.

Хĕр, килĕшсе, алă сулчĕ:

- Чипер çитмелле пултăр. Ырă кăмăлушăн тав, Вася-Василек. Тепре тĕл пуличчен.

Çапах та хăй, тăрса, шоферпа Ваçлей Карсакова вĕри аллине пачĕ, тăпăлкка тутине кулăллăн йăлкăштарса, куçĕпе пăталарĕ. Тинкернĕ май Ваçлей хĕрĕн куç шăрçисем сарăлса, пысăкланса пынине курчĕ. Пике куçне вăрттăн хĕлхем сапса хăварчĕ те Карсаков алăкран тухрĕ. Янташов шофера хутпа чĕркенĕ эрех кĕленчи тыттарчĕ. "Эпир ĕçнĕ-савăннă вăхăтра чăтас пулать, шереметсен, машина лартиччен".

Ваçлей çӳлелле пăхрĕ. Пĕртен-пĕр çутă чӳречере хура пуç курăнать. Карсаков çавăрттарса аллине сулчĕ. Урхамах малалла ыткăнчĕ. Кăштах шӳтлекелесе илнĕ хыççăн та шоферпа иккĕшин хушшинче калаçу малалла хĕрмерĕ. Хыçалти ларкăчра сарăлса пыракан Васи-

лий Николаевич кӳтнĕ чунне лăплантарма тăрăшрĕ.

“Мĕнех вара, ҫынна усал туман. Никамăнне те нимĕн те вăрламан. Вăрламан... вăрламан... Вăрламан-ши? Тата мĕншĕн Марина пуҫран тухмасть? Хĕрĕн юн таппийĕ чĕрене ҫĕнĕлле таптарать. Шăнкăрав сассийĕ хăлхара янăрать. Акăш юххийĕ умран тасалмасть. Чун хавалĕ ют кĕлеткере ăшă кĕтес шырать. Туйăмлă куҫĕ ман куҫра мĕлтлетет. Арăм та кирлĕ мар халь. Манька-крановщица та таҫта ҫăва патнех анса кайтăр-и. Хăвармалла марччĕ Маринăна, ҫинех тăмаллаччĕ. Енчен те вăл ман ăшăма кĕрсе хӳтлĕх тупрĕ пулсан, манрах, Валерккăра мар. Чун икĕ ҫынра пулма пултарать-и-ха харăсах? Паллах, ҫук. Апла-тăк, эпĕ вăрă - юрату вăрри. Вăрларăм пулас Шуркасси ачин пĕртен-пĕр юратăвне... Ах, каяллах тавăрса парасчĕ, арăмран та вăтанасчĕ... Анчах... мĕнле, мĕнле майпа, мĕнле вăйпа хӳтерсе кăларас-ха манăн ҫав туйăма, ирпе тĕнче хăвăртлăхĕпе вĕҫсе килнĕ курăнман туйăма ăшран?”

Шупашкара ҫитсе Етĕрне ҫулĕ ҫине тухнине те сисмен. Университет патне ҫывхарнă май вăл шофера чаркăҫлама ыйтрĕ.

- Ну катаччи чупрăмăр та чупрăмăр вара иксĕмĕр кĕҫĕр. Ҫĕнĕ Шупашкара ҫитсе салют та патăмăр. Пит аван. Тавах сана. Эпĕ халь ҫурранах утатăп, - тесе ҫулташне алă тытрĕ Карсаков.

Тул ҫутăлса килет. Уйăх Йăлăм енне тайăлнă. Юманлăх шăпчăксен ытаменче. Вĕсен янравлăхĕнче вăл “Салютра” каҫса кайса итленĕ шăпчăк сассине уйăрса илчĕ, ăна хирĕҫ хăй те шăпчăкла юрласа ячĕ. Ҫурхи ире ытамласа ҫывăхри ҫурчĕ еннелле хуллен утрĕ. Хваттерте ăна никам та кĕтекен ҫук. Аҫта кĕтекен пур-ши? Арăмĕ тĕлĕкре курать-ши? Манька-крановщица тепĕр айăкĕ ҫине ҫаврăнса выртнă май пуш вырăна ыталаса илет-ши? Е Мир урамĕнчи юлашки сывлăшĕпе сывлакан ял хĕрĕ, улмуҫҫи айĕнче ярăнакан, Ҫĕнĕ Шупашкара ҫывăрма юлнă юрăҫă-ăрăмҫă?

2

Машина кĕтесре курăнми пуличченех чӳречерен уйрăлмарĕ Марина. Хăнасене ăсатнă Валерка кĕриччен сĕтел ҫинчи кашăк-чашăка кухньăна йăтма пуҫларĕ.

- Ҫапах та темскер пур сирĕн хушăра, - йăрă куҫне чуптарчĕ Валерка. - Тахҫанхи мар-и?

- Тахҫанхи, тахҫанхи, сана тĕл пуличченхи. Эпир унпа ҫӳренĕ, кĕҫĕр те аснă... - чĕри хĕссе лартнипе Марина алăри ывăса вĕҫертрĕ, урайне черккесемпе турилккесем тăкăнса вакланчĕҫ.

- Калап вĕт ахальтен мар тесе, тӳрех хумханса ӳкрĕн, - шăлне йĕрчĕ Валерка. - Хĕрсем вĕсем... Чармасан... Ничево! Ҫапах та, телей манра. Парса ямарăм сана. Хăвартăм. Хам патрах. Урăх ниҫта та кăлармастăп. Ман арăм пулатăн. Кĕҫĕрех. Халех, - пуҫне чиксе тăракан ҫураҫнă хĕрне Валерка пырса ыталарĕ, пичĕ-куҫĕнчен чуптуса пĕтерчĕ, Марина хирĕҫлеменнине кура хăюлλансах пычĕ, ăна ҫывăрмалли пӳлĕме ҫавăтса кĕчĕ.

Училищĕре экзаменсем пĕтсенех вĕсем пĕрлешме калаçса татăлнăччĕ-ха. Ашшĕ-амăшĕсем те хирĕç мар. Валерка халех унран арăм тăватăп тени çеç малтанлăха хăратса пăрахрĕ. "Мĕншĕн васкать-ха вăл? Икĕ çул кĕтнине темиçе эрне кĕтме çук-ши? Е урăххи пуçса çиесрен хăрать-ши юрату çуне? Çак прорабах сехĕрлентерсе пăрахрĕ пулас ăна. Унран чĕтресе ÿкрĕ. Унччен усал шухăш кĕмен пуль пуçне. Сăлтавне нихăш енчен те кăтартман. Ытаклашса чуптусах ирттернĕ савăк вăхăта. Чĕчĕпе выланисĕр пуçне аллине аялалла ярса курман. Пăх-ха ăна халĕ, епле хăюлланса пырать. Мĕн тумалла-ши? Туйчченех хĕрарăм пулас килмест-çке. Хĕр чысĕпех Турă умĕнче пуççапас килет. Ах, ма ĕçрĕм ку кăпăклă эрехе? Керменти коньяк çумне хутшăнса, пăтранса кайрĕ. Ах... Вася-Василекпа юнашар ларса пынă чухнехи асап туйăмĕ килмест-çке. Мĕнле капла?.."

Чÿречерен сăрхăнакан шурăмпуç çутинче Валерка васкаса ăшталанать. Кравать çивиттине хуçлатса çакрĕ, утиялне сирсе пăрахрĕ, шăлаварне сиккелесе хыврĕ, малалла карăннă труссийĕпе унăн уçă пĕççийĕ çумне çитсе çапăнчĕ, савнине чуптăва-чуптăва хывăнтарчĕ: çÿхе кĕпине, аялти йăпăрка кĕпине... чĕчĕ çыххине салтаймасăр çаклашкине татсах пăрахрĕ. Вырăн çине ăна вăшт çĕклесе хучĕ те юнашар выртрĕ, тутаран, чĕчĕ пуçĕсенчен чуптурĕ, хăйĕн трусийĕнчен хăтăлнă хыççăн унăн чĕнтĕрлĕ йĕмĕ çумне сивĕ аллине тăсрĕ, аялалла туртса антарчĕ, мăшăлтатса çÿлех хăпарса выртрĕ...

Çак самантра Маринăн куçĕ ялл! çуталса кайрĕ те, лапах хупăнчĕ. Хăй çинче Валерка мар, куç пăвса хăварнă Вася-Василек выртнăн, ăна ĕме-ĕме чуптунăн, çанçурăмне астарса ачашланăн туйăнса кайрĕ. Сарăлнă пĕçсем хушшинче мĕн пулса иртнине сиссе юлаймасăрах айй! айй! тесе нăйкăшса ячĕ те вăл, вăрăммăн сывласа, пĕтĕм кĕлеткипе кăрт туртăнчĕ, çÿлте хăшăлтатакан арçынна ытакласа илчĕ. Чĕркуççи çине майĕпен çĕкленсе тăма пуçланă арçын хăйне чечек парнелекен Вася-Василек маррине, кĕвĕçсе чăкрашакан Валерка Янташов пулнине тавçăрса илсе куçне хупрĕ, юнланнă йĕпе пĕç хушшине простынь кĕтессипе хупларĕ, вара хускалмасăр чылайччен выртрĕ, ачалăхне, хĕрлĕхне, Валерккăпа чуптума вĕреннине, амăшĕ арçын айне кĕрсе выртма, хĕрĕм, ан васка тесе тăн панине аса илчĕ. "Хĕртен хĕрарăма куçасси наччасах иккен, темиçе минут каялла çеç кăра чунлă, хăюллă хĕрччĕ, вырăн çинчен тăрать те, акă, хăрав чунлă хĕрарăм пулса утса каять. Уçнă çеремрен çутçанталăк парка хунав, тутă тĕшĕ кĕтет. Пултарайĕ-ши вăл çемьене савăнтарма, хăйĕн халăхне йышлантарма? Хуйхăру, асап, чир-чĕр, инкек-синкек пуçланать тинех. Тивĕçтерĕ-ши вăл, упăшка тени, ăна пурнăçра арçын хăвачĕпе, лăплантарса кантарĕ-ши хĕрарăм туйăмне, çĕклентерсе чечеклентерĕ-ши ÿт-пÿ ыйтнине пĕрле шайлаштарса. Савăклăх, сывлăх парайĕ-ши хăйне çак самантра хĕр чысĕ хамах лекрĕ тесе арăсланла вăйлă туякан арçын?" Шухăш таçта та пырса çапăнать. Ăна-кăна нимех те ăнланса юлаймарĕ-ха çамрăк хĕрарăм, ыратнине çеç туйрĕ.

- Пĕлтĕн-и халь паçăрхи строительпе ман хушăра мĕн пурри-

не, эпĕ унпа асса пурăннине? - куç айĕн пăхса сисĕмлех тăрăнтарса илчĕ Марина. - Вырăн çине хума пултартăн пулсан çураçнă хĕрна, йăтса тăратма та ан ман çуралнă арăмна, юратнă упăшкамçăм.

Валерка йăпăртатса чупса пычĕ те чуптуса, арăмне алă çине çĕклеме пуçларĕ:

- Каçар эс мана. Чăннипех ухмах эп. Чăнах лапша. Пустуй кӳрентертĕм эп сана кĕвĕçсе. Тинех пирĕн савăк пурнăç пуçланчĕ. Çемье пурнăçĕ. Юлашки экзамен хыççăнах çырăнатпăр, урăх пĕр кун та ирттерместпĕр.

- А мĕншĕн тата паянах, пĕрремĕш экзамен хыççăнах мар? Каçхи те, ирхи те пĕрремĕш пултăр.

- Эп хирĕç мар, паянтанах пĕрле пурăнма тытăнмашкăн та хатĕр. Хусах пурнăçĕ во! йăлăхтарчĕ.

Валерий Николаевич Янташов хваттерне те Çуркунне этемлĕх аташăвĕн ачашлăхне хуса кĕртрĕ, икĕ юратăва пĕр хушша хупрĕ, арлă-арăмлă савăклăхпа явакларĕ. Упăшки ĕçе тухса кайрĕ, арăмĕ - экзамена.

Музыка училищинчен Марина Ларина питĕ лайăх вĕренсе тухрĕ. Савăнăç каçне вăл Вася-Василека чĕнесшĕнччĕ, ĕçне телефонпа шăнкăравларĕ, чăтаймарĕ, Лакрей вăрманĕ çумĕнчи пĕр пысăк çуртра кантурне шыраса тупрĕ, унтан хурланса таврăнчĕ. Чернобыль инкекĕ хыççăн Карсаковсем Украинăра çĕнĕ хула тăваççĕмĕн. Василий Николаевич Славутичран сайра-хутра кăна килсе каять-имĕш. Çыру çырма адресне илме те манчĕ.

Хăйне çеç манаймарĕ. Пĕрле вĕреннĕ тантăшĕ, “Çăлтăр” ансамбльте юрлама пуçланăскер, виççĕмĕш кавалер тупса янă хыççăн, ун патне, музыка шкулне пычĕ. Ирĕклĕ вăхăтпа усă курса вĕсем хĕрарăм юмахне ячĕç.

- Эх Марина, Марина, пĕлетĕн-и эп мĕн тупрăм?

- Ылтăн-и? Ахах-и?

Тутине чăпăрт тутарса пуç пӳрнипе тантăшĕн сăмси тăрăх сăтăрса тухрĕ те:

- Во телей тупрăм! Чăн-чăн арçын!

- Мĕнле çын-ши вăл, чăн-чăн арçын? - ăнланаймасăр хăшкăлчĕ Марина.

Тантăшĕ ăна сывлăш тухми пуличчен пăчăртаса лартрĕ.

- Ак çакăн пекки. Ăнланмалла-и? “Салютра” эс Ваçлей-упапа паллашнăччĕ-çке, вăт çавнашкалли.

- Курсаччĕ те...

- Ăçта вăл халь сан?

- Вася-Василек-и? Сана чуна уçса калатăп: ман пулман вăл нихçан та, пулаймарĕ... Йĕркеллĕ калаçса та кураймарăм. Çухатрăм. Те каччă пулнă вăл, те виççĕ авланнăскер...

- Эх, тăнсăр. Ма хам çавăрса илмерĕм ташланă чухне. Ман алран вăл вĕçерĕнейместчĕ. Çавăрăттăм, тĕрĕслесе пăхăттăм. Тен, шăпах юрăхлă калибрччĕ.

- Эс ун пирки мар, хăвăн чăн-чăн арçынну çинчен кала-ха

хăвăртрах: негр-и, араб-и, Кавказран-и?

Чăвашленăк. Хамăрăннах пур пирĕн рысаксем. Чувашскисем - вăш-вашлисем. Шырамалла çеç вĕсене. Эх, туяс пулсанччĕ эс унăн пĕр сеансне - тепре çуралса яшланмалла. Яшлаттарса лартать те нателă... Унччен, унччен тата... Чуптунипех ухмаха кăларать. Эп хам та унпа тĕл пуличчен чуптума пĕлмен, пĕр арçын та кăтăклантарса çулламан мана. Ку кĕрешӳçĕ, самбист, во! мускулĕсем, тута хĕррисене хĕртнĕ майăн чĕлхе айне кĕрсе кайрĕ те ... авăнтăм та ӳкрĕм эп. Пирн, хĕрарăмăн, чĕлхе айĕнче курăнман икĕ çăлкуç тапса тăрать иккен. Арçын чĕлхи çулласа уçсан, вĕсем сиплĕ шĕвек пĕрхĕнтерме пуçлаççĕ. Арçын лăнкăртаттарса ярать те çавна, çав тери хастарланса каять. Ман кĕрешӳçĕ вара çапла ирччен чуптуса йăпанма хатĕр. Малтанхи меммесемпе тутана тăк тĕксе йĕпетсе илнĕ те шăл тунине ыраттарнă пулсан эпĕ халĕ çăварпа, чĕлхепе, шăлпа усă куратăп. Çăвăнса тасалнă хыççăн чуптуман вырăн та хăвармасть кĕлеткере, мана та тута канлĕхĕ тупса парать. Таçта, тĕнче уçлăхĕнче авăна-авăна, явăна-явăна ишнĕ пек, ӳт-пĕве астарса ярса канлĕх кăпăкĕнче çăвăннă пек, сывлайми пулса ларса тăна çухатнă пек самант тул çутăличчен тăсăлать. Упăшка пекки ман, иккĕ-виççĕ хашлатса сапса ярать те кунтăкри пăрлăхне... Çĕтĕличченех çĕтсе вырт вара купарчапа тӳшеке, круççуль пек çаврăнса. Арăмĕ те пур çав чупкăнăн. Арăмĕн ăна юрăхлă мар, тет. Шайлашăнмасть вĕсен. Тивĕçтерӳ çук. Манах лутăркать. "Российăра" номер туяннă. Ман валли. Хăна çуртĕнче хăналанса пурăнатăп. Укçа ун... миллиарда та çывхарать пуль. Арăмĕнчен уйрăлмасть, мана качча илмест. Намăс иккĕ авланма, тет. Асма намăс мар. Ăна та. Мана хама та. Намăс-симĕс, çылăх тесе çĕр çинчех ар тамăкĕнче кĕл пулмалла-и? Çук, хăвармастăп эп çав типĕтнĕ пулă пек арăмĕ валли нимле ясар туйăмне те унăнне, йăлтах ĕмсе, çăтса яратăп, апат вырăнне тăранса пурăнатăп. Эх, тĕнче!.. Çуралнăшăн савăнатăп! Ой, пакăлтатса кайрăм. Сан хăвăн мĕнлеха тата арçын йăпатмăшĕ. Упăшку юрлаттарать-и каçхи концертра?

Марина тантăшне итленĕ хушăрах упăшки çинчен аса илсе ăна унăн çав чăн-чăн арçыннипе танлаштарса ларчĕ-ха, кăшкăрса ярсах ӳлес килчĕ, тути хĕррисене чĕтретсе те пăхрĕ, чарăнчĕ, ыйту çине мĕнле хуравласси пирки шухăшларĕ.

- Пурнас пулать ĕнтĕ, пĕрре ăша кĕртнĕскер, пĕрре çырăннăскер... Хырăм юлчĕ. Пăрахас пуль теп. Химикрен çуралнă сусăр пушшех авса хурĕ те кун-çула... Пĕлместĕп. Те сан çулупа каймалла. Çулсем иртеççĕ, хĕрарăм та пулса пăхас килет, чăн-чăн хĕрарăм та пулас килет шăпам арçын патаккинче телей карчĕ тупсан.

- Итле эс мана, шыра çав хăвăн упа-утаманна - Вася-Василекна. Шупашкар Мускав мар - тупатăн.

Ахаль те çунакан кăвар çине тантăшĕ бензин сапса ялкăштарнă пекех пулчĕ ку. Тантăшĕ хĕрарăм канлĕхĕн тӳпине çитнипе мухтанчĕ, унăн чунĕ каç пуласса кĕтсе хурланчĕ. Каллех упăшки ун çумне кĕрсе выртать, каллех вăл арăмĕн йăпанăвне илесшĕн нушаланать, ăна астарса ярать те, асаплантара-асаплантара йĕртет. Валеркки ӳт-пĕвĕпе кăна мар, кут-пуç хăвачĕпе те хытса-хăрса пы-

нине сисет. Мĕншĕнне те пĕлет. Ăна урăх ĕçе куçма та сĕнсе пăхрĕ ĕнтĕ. Кăлăхах. Акă паян та вăл ĕшенсе таврăнчĕ. Куçĕ айĕнче - хура йĕрсем. Хăйĕнчен яланхилле шăршă перет. Хулана вĕçсе килекен шăршă мар вăл - урăхларах, çивĕчрех.

- Мĕн нушаланан-ши, Валерка, - пуçĕнчен ачашлать упăшкине Марина. - Пурăнмалла-çке пирĕн, тата нумай ĕçлемелле. Хăв мана суннă телей пурнăçне курмалла.

- Хырăм ма пăрахрăн? - куçне тарăхуллăн йăлкăштарать упăшки. - Çынсен арăмĕсем çуратаççĕ-çке.

- Çаплах çуратаççĕ, анчах ... камсене? Иртнĕ эрнере каллех пилĕк сусăр çут тĕнчене сиксе тухнă. Кама савăнтарма? Ашшĕ-амăшне-и? Кама усă пама? Çĕршыва-и? Кама малалла аталантарма? Чăваш халăхне-и, этемлĕхе-и? Çав сусăрсенчен малашне кам тата мĕнле инкек пуласси те паллă мар-ха.

- Çук, урăх эп санпа килĕшместĕп, сана ирĕк памастăп аборта кайма. Çурататăн. Пур-çке сывă ача та. Йĕркелли те.

- Куç курĕ-ха унта, эсĕ йĕркеллĕ çĕре куçсан, сывалсан... Ĕлкĕрĕпĕр пĕр-ик ачана тумашкăн. Ватă мар. Валерка, тархасшăн итле арăмна. Сан вăрăм укçу та кирлĕ мар, сывлăху, вăю кирлĕ. Хĕвел çиçтерсе ташлаттарас килет ман сан сăнунта. Анне Шупашкарта ĕç те тупнă сан валли. Инженер вырăнех. Шалăвĕ те кунтинчен нумай пĕчĕк мар. Çӳреме пулать. Шупашкара çитсе килесси мĕн вăл. Килĕшетĕн-и манпа?

Душа кĕрсе çăвăннă Валерка апата ларчĕ. Хĕрхенсе пăхать ун çине арăмĕ, сисмесĕрех сывлăшĕ кăкăртан хашлатса тухать. Ăшаланă чăх тукмаккине ирĕксĕррĕн кăшласа ячĕ те упăшки, лимон янă чее лĕрĕплеттерсе ĕçрĕ, тарланă çамкине пукан пуçĕнчи алшăллипе шăлса типĕтрĕ.

“Апат çиме те вăй юлмарĕ иккен, сĕтел хушшинчех тарлать, нумаях каяс çук”. Арăмĕн шухăшне сиснĕнех, Валерка Янташов каласа хучĕ:

- Анчах... эпир пулнă, пур, пулатпăрах-ши? Ах... пурăннă май, çулсем иртнĕ май пуçăмра пĕр ыйту ытларах та ытларах вăйланса, çиеле тухса пынине туя пуçларăм, Марина, чунăмçăм, эсĕ - ман юратуçăм.

- Мĕнле ыйту, Валерка, кала. Урăх çиместĕн-и?

- Тăрантăм, - вилкине ăшаланă çĕрулми çине хучĕ упăшки. - акă мĕн. Этемлĕхшĕн усăллă ĕçех турăм-ши эпĕ çак çутă тĕнчере? Каç та, кăнтăрла та канăç памасть вăл мана.

Калаçăва Марина та хутшăнчĕ.

Хамăн пуçăм, ăсăм çитнĕ таран хуравне тупса парас-и?

- Тавай, эс ялан ăслă сăмах калакан.

- Пурăнмашкăн çуралнă пулсан, - терĕ арăмĕ, - çыннăн ĕнтĕ хырăм тăрантармалăх, кĕлеткене хупламалăх, хӳтлĕх тупмалăх ăçта та пулин ĕçлемеллех. Анчах ăçта ĕçлемеллине те пăхмалла.

- Эс каллех хăвăн юрруна юрлаттарасшăн-ха мана, çавăнталлах пăратăн, çав нота çинех.

- Паллах.

Ч-41510
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Валерка тăрса чӳрече умне пычĕ, урамри йывăççене сăнарĕ, янахне чавсипе тĕкĕлесе шухăша кайрĕ, унтан калаçăва малалла тăсрĕ. Ăшра тулнине тасатас терĕ пулас.

- Эпĕ те, этем тĕнчин уйрăлми пĕр пĕчĕк пайĕ, çутçанталăкăн çак йĕркипех пыма тăрăшрăм. Чăваш университечĕ хыççăн "хăрушă" комбината лекрĕм. Эпĕ унта хамăн тахçанхи ĕмĕте пурнăçламашкăн çеç чунтан ăнтăлнă. Мĕншĕн тесессĕн эпĕ химие ачаранах хытă юратнă. Олимпиадăсенче çĕнтернĕ чухнехи хĕпĕртӳ палли халĕ те чĕре çумĕнчех. Мĕн шухăшланине тунă. Ĕç-шĕн пĕртте ӳкĕнместĕп. Патшалăх аслă шкулĕ панă пĕлĕве харама ямарăм. Юратнă специальнăç кăмăла уçнă манăнне. Кайрĕ вара пĕлӳ урапин кустăрми малалла кусса. Университетра вĕреннĕ чухне пуçласа "Химпрома" лекрĕм. Астăватăн-и иксĕмĕр мĕнле паллашнине?

- Атте патне пырсан-и?

- Аха. Аçу пире машинăпа ăсатнăччĕ. Эсĕ те пĕрлех ларса çӳрерĕн. Сан çивĕçтӳ, купарчу çинче ташлакан çивĕтӳ, пит кăмăла кайнăччĕ, каярахпа - хăв та. "Химпромра" органикăллă çурма продуктсемпе тата сăрă пĕветмелли имçампа ĕçлекен лаборатори пулса. Вĕреннĕ чухнех манăн пĕветӳ енĕпе хатĕрленĕ наука ĕçне лайăх хак пачĕç. Каларăм-çке, специальнăçне те, ĕçне те юратнă эпĕ çамрăклах. Çын вăл тата ытларах пĕлесшĕн, çав пĕлӳпе хавасланса, çĕнĕрен те çĕнĕ тĕпчевсем, сăнавсем тăвать, шырать, тупать те савăнать. Пирĕн шутсăр вăйлăччĕ çамрăклăх хавхаланăвĕ, пурнăç илемĕ йăлтах юратнă ĕçреччĕ.

- Çавăнпа эс авланасси çинчен те манса кайнă, çӳреттĕнччĕ анраса Мир урамĕнче, - çума пырса тăнă Марина упăшкине ыталаса илчĕ.

- Эпир юлташсемпе авланиччен хими наукисен кандидачĕ пуласшăнччĕ-çке, çавăнпа авланма васкаман, - арăмĕн сапаланса кайнă çăра çӳçне шĕвĕр пӳрнисемпе турарĕ Валерка.

"Халĕ хими кандидачĕ - вилĕм кандидачĕ пулса юлтăр", - таçтан муртан вĕçсе килчĕ Марина патне усал сăмах.

Упăшки хавасланчĕ, унччен арăмне йăлтах пĕлтерменнине чунне уçса каларĕ:

- Эсĕ ачарах пулнă, эпĕ лайăхах астăватăп. Халăх çӳлтен мĕн хушнине Турă сăмахне итленĕ пек итлетчĕ. Пирĕн тĕнчере мала тухмалла-çке, пирĕн этемлĕхе сыхласа хăвармалла. Çавăнпа та чи вăйлă, чи витĕмлĕ хӳтлĕх хĕçпăшалĕ тумалла. "Химпром" та çак кирлĕрен те кирлĕ, вăрттăнран та вăрттăн ĕçе тытăнчĕ.

- Эсĕ мана ун пирки каламанччĕ...

- Эх, Марина, ытла айван эс. Каккуй сана калама... Пуç яраççĕ вĕт уншăн, тĕп тăваççĕ. Мана халь пурпĕрех... Эс çырт шăлна.

- Апла-тăк, ан кала, - кӳренчĕ арăмĕ.

Малалла чăнах та калас-и, калас мар-и тесе анлă пӳлĕмелле тухрĕ те Валерка, арăмне чĕнсе илчĕ.

- Никамран та, нимрен те хăрамастăп халĕ эпĕ, хамăн çывăх çынна хамăн вăрттăн ĕçпе паллаштармасăр чун чăтмасть паян. Чун

кӳтрĕ. Кăнтăр апачĕ хыççăн сĕтел хушшинчех пуçа хурса кăтăш пулнă та... тĕлĕкре аттесемпе асаттесене, аннесемпе асаннесене, тăванпĕтене, хамăр ялсене масар çинче куртăм. Йĕркипе тăрса тухнă та вĕсем, эпĕ варрипе утатăп, кашнине алă паратăп...

Арăмĕ ой-ой! тесе пуçне пăркаласа илчĕ:

- Ытла аван мар тĕлĕк.

- Ан кулян. Хамăр ялта пулнăран вăл. Комбината эп ĕçleме кăна мар, тăван яла - ачалăх килне пурăнма каятăп-çке. Хваттертинчен нумайрах пулатăп эпĕ унта - эрнере пилĕк кун. Шăпах пирĕн Шуркасси тăрринче сарăлса ларать вĕт "Химпром". Масара наркăмăшласа. Несĕлсене пĕтерсе. Хамăра кăшласа. Çавăнпа эпĕ макра-макрах ĕçлетĕп. Виççĕмĕш площадка текен çĕрте хăрушăран та хăрушă япала тăватпăр.

- Тахçан аттесем пирĕнтен вăрттăн калаçса ларнă чухне хăлхана кĕнĕччĕ, анчах ăнлансах пĕтмен, - ассăн сывласа ячĕ арăмĕ. - Уй куçлă, вăрман хăлхаллă тени тĕрĕсех пуль çав.

- Манашкал пакăлтатакан тупăнма пултарнă. Этем нервине аркатса, шалкăм çаптарса çынна тăрук пĕтерсе хумалли им- çам хатĕрлетпĕр. Курнă пуль тинĕсри пулăçсем аçам евĕрлĕ тум тăхăннине. Çавăн пек тумпа, противогазпа ĕçлеççĕ. Эпир, лабораторире, унашкалах мар. Унта ĕçлекен арçынсене вунă çултан, хĕрарăмсене çиччĕрен çăмăллăх параççĕ. Ман та виçĕ çул çеç юлать. Пенсие тухсан вара тĕнче тăрăх курса çӳреме тытăнатпăр.

Марина аллинчи хаçата уçкаласа хупрĕ, анчах куç курни пуçа кĕмерĕ, упăшкин сăмахĕсем хăлхана çурса ячĕç.

- Çын вăл малашнехи кун-çулĕ, ачисен, йăх кун-çулĕ çинчен шухăшлать-и пĕрре ĕçе кӳлĕнсен, - терĕ вара вăл, кулянса. - Вăхăтлăх çăмăллăхсемпе хăйне хăй лăплантарса, "Эй, мĕн, ик ĕмĕр пурăнмалла-им" текен йăнăш, ултав туйăмпа çав вăхăта ĕçлесе ирттермех тăрăшса тапаçланать. Кайран чĕрĕ скелет пулса юлать. Этемлĕх тăшманĕн тамăк хуранĕнче çын хăй ирĕкĕпех, савăнсах вĕрет иккен.

Валерка пуçне, хытанка питне сăтăра-сăтăра калаçрĕ:

- Эх, çылăх. Эпир те, хамăра хамăр хĕрхенме пĕлмесĕр, хамăр кама хирĕçле ĕç тунине пуç тавра тăнпа çавăрттарса пăхма васкамасăр этемлĕх умĕнчи çылăха ӳстерсе те ӳстерсе пыратпăр. Американецсем унашкал хĕçпăшала кăларма пăрахнă, ăна пĕтермелли майсем шыраççĕ. Эпир вилĕм наркăмăшне снаряд е бомба пуçĕсене ăмăртса тултаратпăр. "Пире хăратаймăр, эпир те вăйлă" тетпĕр пулас.

- Ĕçĕ пит йывăр-и? Ывăнатăн та. Сывлăшĕ çитмест-и? Хăшкаса сывлатăн та, - хĕрхенсе ларчĕ арăмĕ.

Упăшки ăна куçран пăхмарĕ, пуçне чиксе каларĕ:

- Çăтмахри пекех. Йĕрки те çирĕп. Ăçта йĕрке - унта ăнăçу. Технологи дисциплинине çирĕп пăхăнатпăр. Пĕр ушкăн хĕç-пăшал хатĕрленĕ хыççăн вырăнне çуса тасататпăр. Сывлăшне те озонпа пуянлатса сиплентерсех тăратпăр. Чечексем ӳсеççĕ. Кайăксем юрлаççĕ. Вăт çапла вăл "Химпром" райĕ. Ялĕ те, ĕçĕ те чуна туртать. Анчах

ăш вăркать. Темле хăрушлăх туйăмĕ вăйланать. Шутла-ха, Марина, эпир вĕт хамăра хӳтĕлемелли, тăван çĕршыва сыхламалли хĕçпăшал мар, хамăра пĕтермелли хăрушлăх хатĕрлетпĕр-çке. Çынна йӳнĕрех хакпа йышлăрах та хăвăртрах çулса тăкмалли "эмел" тăватпăр. Мĕн чухлĕ купаланса, шаршанланса выртать вăл! Усă курмасан та... хăйне пĕтермелле пулсан... Ăна сиенсĕрлетме вара ăçта çуратнă - çавăнтах вĕлермелле. Апла-тăк - хамăр патрах. Пĕтересси, тунинчен те кăткăсрах, хаклăрах. Хăрушăрах. Американецсемпе япунсем ăслă, сывлăхшăн сиенлĕ вырăнта роботсемпе усă кураççĕ, пирĕн "Химпром", çăмăллăхпа илĕртсе, чĕрĕ çынна вилĕмпе улăштарать. Ой, хăрушă. Çылăх вĕт, Марина?

- Мĕн каламаллине те пĕлместĕп ĕнтĕ, пуçăм çаврăнать.

- Çылăх. Нихçан никам каçарми çылăх, - сăхсăхса илчĕ Валерка. - Кама айăпламалла уншăн? Камран ыйтмалла? Кам умĕнче сăхсăхса пуççапмалла? Паллах, халĕ ĕнтĕ айăпне никам та йышăнасшăн пулмĕ. Пурте "Мĕн хушнине çеç пурнăçданă" теме пăхĕç. Эпĕ те çаплах шухăшлатăп, - цех, лаборатори пуçлăхĕ, директор таранах. Уншăн чи хуравлисем леш тĕнчере ĕнтĕ. Вĕсем хăйсем хурав тытĕç. Турă умĕнче. Анчах та пирĕн, чĕррисен, çав хăрушлăха хамăр алăпа хатĕрлекенсен, ман шутпа, хамăрăн совĕç умĕнче каçару ыйтса чуна лăплантарасси çеç юлать. Эпир мĕншĕн тесессĕн ни Турă умĕнче, ни Этемлĕх умĕнче айăплă мар. Çылăхлă мар...

Арăмĕ çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе вырăн хатĕрленине те сисмерĕ Валерка, "кил, выртса кан" тенине илтсен тин калаçăвне татрĕ. Ытла та кӳтсе çитнĕ вăл. сывлăхĕ йăшнипе, арăмĕ умĕнче юрату йăпанăвĕн айăпне кĕнипе, ачи-пăчине кĕтсе илейменнипе сасăсăр макăрать чунĕ. Арăмĕ, вăл хастарлантармалли эмел хыпнине курнипе, чĕтреме ерет, хывăнса упăшки çумне ирĕксĕр кĕрсе выртать.

Качча кайнăранпа та савăк сăпкинче сиктермен çак вырăн уншăн - "Химпром" имçамĕ пекех. Кунран-кун, çултан-çул хавшатса, чире ярса, уртарса кĕллентерет çамрăк ут-пĕве. Пуçласа арçын тутине астивсе курнă каç аякран вĕçсе килнĕ канлĕх туйăмĕ çеç кĕлеткере пытанса пурăнать, ăна хĕрарăм шутĕнчех тытса тăрать. Юмахри пек лăпкă канăçлăх çеç çав вăл. Тантăшĕ хăпартланса каласа панă чăн-чăн арçынна курĕ-ши вăл хăçан та пулин е тĕл пулаймасăрах вилсе кайĕ? Шăпа çулĕ тата ăçта илсе çитерĕ-ши? Эмел те, ним те пулăшайми пулса пырать ĕнтĕ упăшкине. Куç умĕнчех сӳнет.

Ирччен нушаланса асапланнă хыççăн пуç кунтăк пек. Пĕтĕм шăмшак сурать. Хал çук. Ĕçе те ирĕксĕртен тенĕ пек çеç тухса утрĕ Марина. Сăвă çырма та, юрă кĕвĕлеме те, юрлама та тахçанах пăрахнă ĕнтĕ. Пултарулăхĕ сӳнсе пынине туять, курать вăл, пурпĕрех çулăмланмалли хĕм куç умĕнче йăлкăшмасть.

Ах, мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ши ăна юрату? Хăвăртрах тĕл пулса Шуркасси Валерккин йăпăр-йăпăр чупакан куçĕнчен пăхса улмуççи айĕнче ирччен ярăнмашкăн-и? Çĕнĕ хулари вĕр-çĕнĕ хваттере концерт тумĕпе арăм пулса пырса кĕмешкĕн-и? Упăшкана ĕçе чуптуса ăсатса ярса ĕçрен чуптуса кĕтсе илмешкĕн-ши? Вырăн çинче вăтанмасăр упăшкапа ытакланса выртмашкăн-ши? Виличчен пĕрне-пĕри

пӑрахмасӑр пулӑшатпӑр, улталамастпӑр тесе тупа тунӑшӑн-ши?

Качча кайичченхи хавхаланулла шухӑш, ҫунатлӑ сӑмах чӑн юрату мар иккен. Ҫумри каччӑн вӑйне, хӑватне, пултарулӑхне ӳт-пӳпе, пӗтӗм кӗлеткепе туранса тӗрӗслесе пӑхмасӑр чӑн-чӑн юрату ҫавӑрса илеймест чун-чӗрене. Ҫапах туять Марина Ларина (хушаматне пӗрлешсен те улӑштармарӗ вӑл) юрату хӑй таврах явӑннине, ӗненет вӑл пуррине, кӗлеткере вӑйланса чуна ӑшӑтасса, чӗрене вӑратасса, канлӗхре савӑнтарасса. Ҫӗр ҫывӑрмасӑр, кунӗн-ҫӗрӗн кӗтет.

Ӑнланмасӑр тунӑ утӑм Шупашкар хӗрне куҫҫуль кӳллине кӗртсе ячӗ. Упӑшки пурнӑҫ кӗсменне вӑйпах авӑсрӗ, анчах кимми, хӑрушӑ юхха лексе, куҫпа курсах умри авӑралла ишрӗ, халран кайса, кайса пычӗ, арӑмӗ кимме вӑйлӑ юхӑмран кӑлараймарӗ. Чарӑнма пӗлмен ҫавраҫил ҫавӑрттарса тӑвӑл кӑларчӗ. Хӑрушӑ вӑй туртӑмӗ кимме хӑй патнеллех ҫыхартрӗ. Шывсикки юхтарса авӑра сиктерчӗ. Упӑшкине ҫӗр ҫӑтрӗ. Темле чӗрӗ вӑй тапса кӑларнипе Марина шыв ҫийне тухса выртрӗ. Месерле сарӑлса выртакан ҫамрӑк хӗрарӑма Хӗвел ӑшӑ пайӑркипе сиплесе чӗртрӗ. Вӑл вара чӑнкӑ ҫыраналла пӗтӗм вӑйран ишме пуҫларӗ. Кӳлӗ чакмарӗ-ха. Ҫыранӗ те аякра...

Упӑшкине пытарнӑ хыҫҫӑн Маринӑн пуш хваттере кӗрес те килми пулчӗ. Валерка чӗрӗ чухне хӑть унпа калаҫма, тавлашма, хирӗҫме, ҫураҫма, ӗмӗтленме пулатчӗ. Пӗччен тӑрса юлсан пӳлӗмсенче мӗлке куҫа курӑнакан пулчӗ, хӑлхана Валерка сасси хӑйӑлтатарах кӗрсе каять:

“Анчах... эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр. Пурнӑҫ нумай шухӑшлаттарать. Этемӗн хырӑм тӑрантарассишӗн, кӗлеткене хупласишӗн тата пуҫа хӳтлӗх тӑвассишӗн ҫеҫ ӗҫлемелле мар иккен, вӗсемпе пӗрлех хӑвӑн тата ыттисен сывлӑхӗшӗн те, хӑвӑн тата ыттисен ырлӑхӗшӗн те, хӑвӑн тата ыттисен пурнӑҫ илемӗшӗн те, тӗнче илемӗшӗн те ӗҫлемелле. Ҫавӑн чухне ҫеҫ эпир телейлӗ. Ҫавӑн чухне ҫеҫ эпир этемлӗх умӗнче ҫылӑхсӑр пулӑпӑр”.

Пӳлӗмрен пӳлӗме пӗчӗк ачасем чупнӑ пек. Малтанхине вӑл амӑш ячӗпе Лариса теме пуҫланӑччӗ, иккӗмӗшне ашшӗ ячӗпе - Хветӗр. “Чунӗсем ӑҫта вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ-ши? Кун ҫути кӑтартнӑ пулсан вӗсене? Сывах ҫуралман пулсан та, тен, сусӑрах пулмастчӗҫ. Сываткаласа ӳстереттӗмӗрччӗ. “Химпромра” ӗҫлекен ытти ҫынсем пекех. Ашшӗ те выляса савӑнса куратчӗ пепкисемпе. Йӑхӗ те малалла тӑсӑлаймарӗ унӑн. Тӳнчӗ, тӗп пулчӗ янташсен несӗл йывӑҫҫи. Хамӑрӑн та темле. Пӗртен-пӗр ача-ҫке эпӗ. Пичче Венгрире такам ирӗклӗхӗшӗн ҫапӑҫса пуҫне хучӗ. Авланса та кураймарӗ. Лейтенант тумӗпех пурӑнать килте, анчах йӑха малалла тӑсаймасть. Эп айӑплӑши Валерккӑсен йӑхне малалла тӑсманшӑн?” Ҫак шухӑша вӑл хӑйӗнчен хӑвалать. Тӗп айӑпне “Химпромра” шырать, тупать, йӗрейӗре вӑрҫать такампа хӑйсен ҫемйине телейсӗр ҫунтарнӑшӑн, ӑна ача-пӑчасӑр, упӑшкасӑр тӑратса хӑварнӑшӑн. Ун пек нушаланакан, хур куракан ҫӗршер хӗрарӑм ҫак вилӗм вучахне Чӑваш ҫӗршывӗнче чӗртме палӑртнӑ, Шуркасси таврашӗнчи ялсене ҫунтарса вӗсен масарӗсем ҫине ҫав вучаха чӗртме ирӗк панӑ пуҫлӑхсене Турӑ умӗнче ылханать пуль. Атӑл ҫумӗнчи инкеклӗ ҫӑпан парӗ чӑваш халӑхӗн

ӳтне миҫе ӗмӗр хушши нушалантарӗ-ши? Юхакан суран, ӗт-пӗве кӑшлакан мур хуҫаланать Ҫӗнӗ Шупашкарта.

Ансамбльте юрлакан тантӑшӗ пыра-пыра каять, хушӑран ун патӗнче юлса ҫывӑрать. Усламӑҫ-кӗрешӳҫӗпех пурӑнать вӑл. Хитреленсе, ҫуталса кайнӑ. Чӑнах та юрату пур тӗнчере тесе мухтанса та илет. Упӑшку вилни ҫулталӑк ҫитсенех шырама пуҫлатпӑр ак сан валли те, тупатпӑр, чӗрӗлетпӗр тесе ӑна хавхалантарма та манмасть.

Хӑраххӑн тӑрса юлнӑ хитре арӑм ҫине куҫ хывакансемпе ҫумма ҫыпҫӑнакансем те курӑнма пуҫларӗҫ. Марина васкамарӗ-ха, никама та чӗри патне ҫывхартма шутламарӗ, каллех йӑнӑшасран хӑрарӗ. Тантӑшӗ "Эп турӑ калашле виҫҫӗмӗшӗнче тин чӑн-чӑн арҫын тупрӑм, ытларах сав, тӗрӗсле", - тенипе килӗшесшӗн пулмарӗ. "Салют" керменти туйӑм ытамӗнчен тухаймарӗ. "Ҫавӑ-ши ман чӑн-чӑн юрату, чӑн-чӑн арҫын тени?"

Амӑшӗсем патӗнче те Марина канлӗх тупаймасть. Сада тухсан, улмуҫҫи чӗрене ыраттарать. Пӑявӗ ҫӗрнӗ хыҫҫӑн ларкӑчне сарайне кӗртсе хунӑччӗ. Амӑшӗсем те хуйхӑраҫҫӗ хӗрӗшӗн. Уншӑн ҫеҫ мар. Кунти килсене пӗтереҫҫӗ иккен. Кӗҫех ҫуртсем лартма тытӑнмалла, тет. Вӗсен ватӑ ялӗн юлашки урамӗ - Янка Купала ячӗллӗ урам - ҫине те чул купи пӗтӗмпех хӑпарса выртать. Вӑл ҫуралнӑ пӳрт арканать, вӑл выляса, улма ҫисе ӳснӗ сад ҫухалать, йӑх йӑви пӑчланать. Хӑмпӑ пек сарӑлса пыракан хула миҫе ял ҫыннине йӗртермерӗ-ши, миҫе пин хресчен ҫемйишӗн хура элчел пулса тӑмарӗ-ши?

Музыкӑра, позире, шкулта вӑл кӳтнӗ чунне кантарать. Хӑй мӗн пӗлнине, пултарнине ачасене парать. Асаплана-асаплана ҫӗнӗ кӗвӗ йӗрри ҫине ӳкет. Юхса пыракан ҫемӗ, куҫҫульсӗр макӑртса, туйӑмлӑн аталанать, вӑй илет:

Анне мана, асапланса, ма ҫуратрӑн-ши?
Атте мана, хавхаланса, ма юратрӑн-ши?
Качча парса, анне мана ма ҫухатрӑн-ши?
Арҫын пулса, атте мана ма ҫӑлмарӑн-ши?

Мӑшӑр пулса, савни сана упраймарӑм-ҫке,
Мӑйӑр татса, сар тӗшшине параймарӑм-ҫке.
Сарӑм пирки, чунӑм санран уйрӑлмарӗ-ҫке,
Арӑм пулсах, сан ятупа пурӑнатӑп-ҫке.

Шӑпчӑк пулса, сад пахчине вӗҫсе килӗн-ши?
Шанчӑк парса, пуҫ тӑрринче юр юрлайӑн-ши?
Чуччу ҫинче, пӗрле ларса ярӑнайӑн-ши?
Чӑп чуптуса, ытакласа ӑшӑтайӑн-ши?

3

Мир урамӗ Шупашкарӑн тухӑҫ енчен пуҫланать те Иван Яковлев урамне тухать. Аслӑ урамӑн илемӗ ҫукрах. Заводсемпе базӑсем, складсем темиҫе ҫухрӑма тӑсӑлаҫҫӗ. Эгер бульварӗнчен иртсен тин сулахай енче пилӗк хутлӑ ҫуртсем курӑнаҫҫӗ. Сылтӑмра - ялтан юлнӑ

юлашки пӳртсем: хӑтлӑраххи те, тӑйлӑк-тайлӑкки те пур. Ҫак вырӑна тасатса Карсаковсен нумай хутлӑ ҫуртсем лартмалла. Ҫӗнӗ автовокзал ҫывӑхӗнче тӑрхала хӗрлӗ курупкасем ӳсе-ӳсе ларнӑччӗ-ха. Унтан ҫул урлӑ, тепӗр енче, прораб "хули" куҫса килчӗ хула варринчен. Дзержинскипе Ленинград урамӗсем кӗтесленнӗ ҫӗрте, ӗлӗкхи сӑра завочӗ вырӑнӗнче, капӑр ҫурт парнелесе хӑварчӗҫ вӗсем хула ҫыннисене.

Стройка штабӗ - прораб пӳрчӗ - Ларинсен пахчи ҫумӗнчех. Василий Николаевич ӑна ятарласах ҫавӑнта ларттарчӗ. Ытти вакунпӳртсем, урамланса, икӗ ретӗн вырнаҫнӑ. Электролини, телефон кабелӗ карса килчӗҫ. Акӑ пӗрремӗш шӑнкӑрав янраса кайрӗ. Карсаков телефон авӑрне хӑлха ҫумне хӗстерчӗ:

- Смольнӑй итлет!

Калаҫаканни, управлени пуҫлӑхӗ Малышкин, кулса ячӗ те хастар прораба ҫӗнӗ позицире ӑнӑҫу сунса уйрӑм кӑтартусем пачӗ, ҫынсен пӳрчӗсем пирки ыйтса пӗлчӗ.

- Пӑсаҫҫӗ, турттараҫҫӗ, ыран-виҫмине бульдозерсем кӗртсе ятатпӑр, - терӗ прораб салтакри пек тикӗссӗн те ҫирӗппӗн.

Ӗҫ вӑхӑтӗнче прораб пӳрчӗ чӑнах та революци штабӗ пекех. Мастерӗ, бригадирӗ, шоферӗ, электрикӗ, заказчикӗ, тӗрӗслекенӗ, хушу параканӗ хӗвӗшет, телефон шӑнкӑртатать, такӑшӗ тавлашать, кӑшкӑрать, ҫыпӑҫуллӑ намӑс сӑмахӗ хӑлхана кӗрет, чӗлӗм тӗтӗмӗ сывлӑша пӳлет. Кӗрлет штаб-хваттер. Тахҫан кутшӑтӑк хӗрсен персе янӑччӗ те Карсаков ҫапла, кайрӗ вара вӑл, халӗ кашнинчех "Смольнӑй итлет". Юлашки ҫулсенче ун пирки пӗтӗм Шупашкар пӗлет ӗнтӗ. Сасса илтсенех кампа калаҫнине ӑнланаҫҫӗ.

Штаб-хваттерте "революци пуҫличчен" ирӗклӗн сывламашкӑн тесе Василий Николаевич тулалла тухрӗ, картлашка ҫинче мӑнаҫлӑн сарӑлса тӑрать. Славутичра ӗҫленӗ чухне Киевра туяннӑ капӑр куртка, якатнӑ шӑлавар, Индире ҫӗленӗ ҫутӑ пушмак тӑхӑннӑ, ҫӑварне вӑрӑм сигарет хыпнӑ, ирпе кӑна кастарнӑ тӑпӑлкка ҫӳҫӗ ҫилпе якалать. Хӑнӑхнӑ йӑлапа пуҫне шӑла-шӑла тавралӑха сӑнать. Уйӑх ҫуттинче тахҫан тӗл пулнӑ улмуҫҫи ӑна ҫурӑлнӑ чечекӗсене юлашки хут татса юлмашкӑн чӗннӗнех туйӑнать. Тӑварахра хуҫасӑр тӑрса юлнӑ улма-ҫырла йывӑҫҫисене, хурӑнсемпе тирексене, пилешсене йӑвантарни аванах курӑнать. Унӑн юлташӗ, тепӗр прораб, кран вырнаҫтарма та ӗлкӗрнӗ. Уҫӑрах вырӑн лекнӗ ҫав ӑна. Карсаковӑн ӗҫ лаптӑкӗ тасалман-ха. Улмуҫҫи ҫинчен вӗҫсе килнӗ пыл хурчӗ тапӑнчӗ ӑна. Сӗмсӗре хӑваласа ярасшӑн аллисемпе ҫатӑлтатрӗ-хӑлаҫланчӗ вӑл, ҫапах унран ниепле те хӑтӑлаймарӗ. Хурт ярханах кӑкӑр ҫумне ҫыпҫӑнчӗ те чӗчӗрен аяларах сисӗмлех сӑхса илчӗ. Тарӑхма та пӗлмерӗ вӑл ҫурхи пыл хуҫине, макӑракан улмуҫҫин сахӑрлӑ сӗткенне активсе пӑхтарнӑ чӑрсӑра. Хӑй пӗтрӗ, ӑна, сӑрӑлтаттарса, шухӑша ячӗ:

"Ӑҫта-ши эсӗ халь, "Салют" керменӗнчи акӑшӑм, юмахри пикеҫӗм? Мӗншӗн кайса ятӑм-ха сана эпӗ Ҫӗнӗ Шупашкара? Хам тупнӑскерне ҫынна патӑм. Пӑрахса хӑвармаллаччӗ те каччине ҫакӑнта, кайтӑр пачӗ вӑл ҫурранах, хӗре-юрӑҫа ирччен ка-

таччи ярăнтармаллаччĕ. Хваттер те пушахчĕ. Мĕнехчĕ, хăй килĕшнĕ пулсан. Арăм умĕнче совĕçе тахçанах çухатнăскер, тепринпе йăпанма юрамастчĕ-и-ха. Ултав шухăшĕ мана малтан, арăмпа пурăнма тытăнсан, пуçа пырса та кĕменччĕ те... Арăм ача çуратма хатĕрленнĕ, хăй патне çывхарма юраман вăхăтра, кран çине чакаланса хăпаракан Манькකăна темшĕн куç курми пуличченех пăхса тăтăм-çке, ĕç хыççăн кĕпине уçса пăхма тиврĕ. Чăтăмлăха чарайманшăнах. Халĕ те, арăм уйăхра пĕрре канса илнĕ хушăра е ĕçсе лартсан, унпах вирăмайнăланас килет. "Çемьене те пăсмастăп, вăрттăн çыхăнăва та татаймастăп. Эх, пĕри ĕнер, тепри паян пылакрах пек. Нумайрах пурăнсан, пылакки те йўçĕхет иккен. Эп анчах çапла пурăнатăп-им? Тĕнче çавăн çинче тытăнса тăрать. Манăçмасть Марина. Килĕнче кам пур-ши? Кĕрсе ыйтса пăхсан? Эсир пире тĕп тăватăр тесе турчкапа хуса кăларса ярсан? Ку тустару манран килмест-ха та, çын вăл ăна-кăна ăнланать-и, халăх кăмăлсăрри палăрать, ятлаçаканни те, бульдозерсене ватса пăрахаканни те тупăнать. Манран килмест те çав, мансăрах йышăннă Шупашкар çумĕнчи ялсене пĕтерсе хума, хулана сарма. Хули вара ытти çĕрти пушанса юлнă ялсенчи яшкĕрĕмпе тулать. Çырма-çатра тавра йывăç ўстерес вырăнне хăмаран çапса тунă "шанхайсем" ўстереççĕ. Ĕçлекене хула çăтать, хăй ытамне илет. Чул купи сарăлать, пĕлĕтелле кармашать, тырă пĕрчине асфальтпа хуплать, пин-пин çемьене пăтратса çĕр пин çынна йĕртет. Ку таранччен эпĕ кунашкал усал ĕç туса курманччĕха. Ялан уçă лаптăкра е хула варринче уйăрса панă çĕр çинче кермен, шкул, пульница, пурăнмалли çурт тунă. Акă хальхинче чăваш ялне тĕппипе пĕтерсе, çĕрпе танлаштарса, ун вырăнне никĕс хывса, тем пысăкăш çуртсем каплантармалла. Мирлĕ вăрçă мар-и-ха çакă? Марина ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ тата авалхи несĕлĕсем мĕн калĕç пире? Анлă урама капăрлатса ял халăхĕн тымарне кăкланăшăн çылăх мар-ши? Эй Турăçăм, кĕлтăватăп сана - эпĕ айăплă мар. Марина, каçар. Эх, туйăмлă пикеçĕм. Алăкку та уçă. Ура çеç утмасть.Тем сăнчăрларĕ. Улмуççи айĕнче ярăнакан чунçунтармăш. Курасчĕ сана. Калаçасчĕ санпа. Çак çулсенче хам мĕнле тунсăхланине пĕлтересчĕ..."

Шухăшлав ытамĕнче хула шавне илтми пулнă Карсаков хăлхине темле кĕвĕ кĕме пуçларĕ. Малтанах вăл радио сасси пек илтĕнчĕ, майĕпен вара вăйланса, илемленсе тăлăх пўрт енчен вĕçсе килни паллă пула пуçларĕ. Кĕвĕпе хутăш çинçе уçă сасă, çурхи куна уçăлтарнăн, сад пахчине сарăлать. Юрă вылянчăклăн Василий Николаевича ытамласа илчĕ. Вăл вара, хĕвĕнчи пыл хуртне хыпашласа тупса ывăçне хучĕ, улмуççи сĕткенĕ ўт-пўре вăй хушнипе хастарланса картлашкапа çĕре анчĕ, Ларинсен карти урлă сиксе каçрĕ, улмуççине çитсе ыталарĕ. Пўртрен ĕнтĕ уйăрса илмелли сăмахсемех кĕвве пуянлатса ун патнелле вĕçеççĕ:

Сана курсан, чуна пытартăм
Куçпа пăхсан - куçа тартса.

Телей сунсах ăшра ăсатрăм
Малашлăх çулĕ кăтартса.

Кăвар чĕрем çăмхи саланчĕ,
Çиппийĕ вĕçрĕ сан енне,
Чĕрӳ кăкне явса вăл илчĕ,
Хывайрĕ туслăх кĕперне.

Ăша кĕрсе мана вăратрăн
Лексе ăш туйăм читлĕхне.
Савни ытамĕнчен вăрларăн,
Пытартăн канăç хӳтлĕхне.

Чавман, ним акса-лартман пахча сукмакĕпе Василий Николаевич пӳрт патнелле чупсах кайрĕ, картлашка умĕнче хашкаса чарăнчĕ. Пӳртре пианино пăнлатать. Ун умĕнче ларакан Марина Ларина пуçне пăркаласа тунсăхлăн юрлать:

Чечекленсе çеçке эп çуртăм,
Улма пулса пылак тутлантăм.
Кĕпер çинчи хăватлă туртăм
Чĕре вăййи тесе шутларăм.

Пăнтăр-пантăр, пăнтăр-пăнтăр, пăн-пин-инн тутарса пӳрнисене клавишсем çийĕн вылятса илнĕ хыççăн Марина ура çине тăчĕ, ӳпĕннипе ывăннă пилĕкне тӳрлетсе пуçне ухрĕ, сапаланчăк çӳçне майларĕ, сылтăм аллипе кăкăрне шăлса алăк еннелле çаврăнчĕ. Хура-хăмăр куç шăрçисем ыйтуллăн сарăлса кайрĕç, Вася-Василек куçĕпе тĕл пулса çиçĕм кăларчĕç, вут-хĕм иккĕшне те çывхартса, çывхартса пычĕ те... алăк сакки урлă пуçласа ыталаттарчĕ. Тута хĕрри хĕриччен, питçăмартисем йĕпениччен, чĕлхисем кăтăкланса типиччен, кĕлетке явкаланса кăртлатиччен сăмахсăр, шухăшлăн, ĕмĕтлĕн тĕрĕслерĕç юрату паллисене. Хĕрнĕ туйăм лаççи хĕм сирпĕтсе хăй ăшшине туртрĕ. Маринăн сылтăм алли алăк шашулккине тем вăхăтра урлă яма ĕлкĕрчĕ. Уйрăлмасăр, чуптусах шалалла кĕрсе пычĕç вĕсем, пуçтарман кравать çумне сĕвенчĕç. Марина хăйне “упа” аяла мĕнле пĕтĕрсе чикнине те сиссе юлаймарĕ, ирĕклĕх киленӳ алăкне яри уçса ячĕ, тăвăлпа уласа ывăннă вăрман чăтлăхне аçа çапнă пек хăватлă вăй кĕрсе кайсан, таçтан тухнă вăйпа çĕклене-çĕклене ярăнтарчĕ те юрату вăййине хутшăннă прорабăн сарлака çурăмĕ çинче пӳрнисемпе хĕрес хурса тухрĕ, таçтан çӳлтен тăкăнакан ясарлăх шывне çăта-çăта, ӳт-пӳри канăçлăха вĕрете-вĕрете, çухатнă тăнĕпе таçта çити вĕçсе, вăйлă кĕлеткене пăчăртаса виличчен вĕçертмелле маррăн хăй çумне çыпăçтарчĕ, кĕлеткине вĕрилентерсе чăтайми канлĕхе куçса пыракан йăрăлтату “ах турăçăм, ах анне!” тесе кăшкăрттарса ячĕ, çанçурăма имлĕн çемĕçтерчĕ. Çав самантрах “упа” та канăçлăн мĕкĕрсе илчĕ. Аллисене сарса пăрахнă Марина куçне уçма та хăрать. Аллисемпе тĕкĕленсе выртакан “чăн-чăн арçын” каллех хăй ăшне кĕрсе кайнине туйса,

ăна ытакласа илчĕ, канлĕх кустăрмине малалла кусма пулăшрĕ.

Вырăн çине тăрса ларсан тин сăмах хушрĕç вĕсем.

- Эпĕ сире, Вася-Василек, "Салют" уявĕнченех кĕтрĕм. Ĕ мĕтленнине-шухăшланине каласа та пĕтереес çук, - куçран пăхаймасăр вăтанчĕ Марина Ларина.

- Кунĕ чăннипех пирĕн кун пулчĕ пулмалла ун чухне. Эпĕ те кĕлеткери асаплăха çак таранччен чăтса пурăнтăм. Тем, Турриех çырнă пуль пире тĕл пулмашкăн, - тесе тăхăнма пуçларĕ Карсаков. - Килӳ-çурту пит-пит шалккă.

Марина простыньпе витĕнсе выртрĕ.

- Мĕн тăвăн ĕнтĕ. Эпир çĕнтерееc çук. Халăх - вăйсăр. Аннесем кĕçех çĕнĕ хваттере куçĕç. Манăн хамăн хваттер пур.

- Упăшкун, ачусен...

Тарăннăн сывласа ячĕ те Марина, хăяккăн çĕкленсе, чĕтревлĕ сасăпа каларĕ:

- Упăшка та, ачасем те çук. Пĕчченех эпĕ. Тăр-пĕччен.

- Мĕнле-ха капла?

- Упăшкана, сан пек Николаевича, "Химпром" кăшласа ячĕ. Хăраса унран ача тумарăм. сусăр ача нушине куриччен...

- Шел, шел, юрату ăнмарĕ апла сирĕн, Марина, - тесе Вася-Василек усăнса тăракан чĕчĕ пуçне чуптуса илчĕ. Хĕрарăм кăрт сиксе ăна шутсăр туйăмлăн чуптурĕ, ачашларĕ, хывăнтарчĕ.

- Турă калашле виççĕ пултăр-и?

- Виççĕ çеç мар, виççĕр вăтăр виççĕ те, виççĕр пин ...

Куçа хупнă Марина йăпату сăпкинче ярăннă пек, хурăн айĕнче ăна юратнă каччипе тин çеç паллашнă пĕлмен арçын сиктернĕ пек, Валерккăн алли шăнтса ярас пек, Вася-Василек алли пĕçертсе ярас пек туйăнать. Чăннипех пĕçертет-çке Вася-Василек, антăхтарса ярса вĕçтерет те вĕçтерет хĕрарăма юрату уçлăхне.

- Кӳр-ха, тепре чуптăвам сире, Вася-Василек, - йывăррăн сывласа илсе туртăнчĕ Марина. - Эсир мана вăратрăр, чăннипех хĕрарăм чунне вăратрăр манра. Эпĕ те халĕ хам чăн-чăн хĕрарăм пулнине тантăшăма кăна мар, такама та вăтанмасăрах каласа пама хатĕр. Тин ĕçрĕм эпĕ юрату пылне, юрату имне, юрату шерпетне. Ӳсĕртсех ятăр. Хырăм выçмасть-и? Пĕçерни пур ман. Анне те кĕçех килмелле-ха. Атте вăл университетрах апатланать.

Карсаков васкарĕ. Унăн ĕç нумай. Вăл тутă.

- Çĕн Шупашкара пыратăр-и?

- Хăçан?

- Хăçан ирĕкленетĕр - çавăн чухне. Алăк уçă.

- Юрĕ, "Салют" юратăвĕ.

Виçĕ салют парса тухнă Карсаков штаб-хваттерне ирхи хĕвел пек йăлкăшса çитрĕ. Ăна Хайлов кĕтсе ларать. Управленин тĕп инженерне курсанах унăн савăк кăмăлĕ хăрăк турат пек хуçăлчĕ. Чун туртмасть çак чăкăлташа. Ялан вăл тем усалли шырать, вĕçĕмсĕр хăлтăкланать.

- Ăçта çапкаланса çӳретĕр ĕç вăхăтĕнче? - сывлăх сунма мансах тĕпчеме пуçларĕ Хайлов.

- Мана хăçан куртăр çапкаланса çӳренине? Хамăн обьектра, хамăн ĕç вырăнĕнчех эпĕ, - алă панă май хуравларĕ Карсаков.

Кĕлеще уралла Хайлов тапăртаткаласа çаврăнчĕ те, прораба кăчăк туртрĕ:

- Килĕр-ха, хăлхаран пĕр сăмах калам?

- Мĕн вăрттăнлăхĕ пур иксĕмĕр хушăра, пурин куçĕ умĕнчех калăр, - терĕ тĕп инженерăн чеелĕхне сиссе Карсаков, мĕншĕн тесен пĕлет вăл "хăлхаран пĕр сăмах калап" тесе прорабсемпе мастерсене сыпнипе-сыпманнине шăршласа çӳренине. Çавăнпа унран Хайлов-хăлха тесе мăшкăллаççĕ.

Прораб хăйне итлеменнине кура сассине хăпартрĕ:

- Апла-тăк, управленире калаçăпăр. Начальник умĕнче. Куртăм эсир мĕнле обьектран тухнине. Кил хуçисемпе тем каварĕ тунă-ха. Сăмакун ĕçтерчĕç пуль-ха, çавăнпа манран хăратăр.

Василий Николаевич тарăхсах кайрĕ:

- Тунă, тунă пултăр! Эп вăл пӳртре мĕн тунипе сирĕн мĕн ĕç пур?! Калăр тӳрех, мĕн кирлĕ сире? Пăтратса çӳретĕр. Ĕçлеме памастăр.

Тĕп инженер сĕтел пуçне пырса ларчĕ, хăй çине кударах пăхакан бригадирсене çухăрчĕ:

- Тухса кайăр! Шăлйĕренсем. Апат тахçанах вĕçленнĕ. Йĕрке çук сирĕн, Василий Николаевич. Пулă пуçĕнчен çĕрет.

- Хăлха вара кутĕнчен çĕрет, - тесе йĕкĕлтесе хăварчĕ Йăван Павлов.

Иккĕшĕ юлсан, Хайлов ыйтрĕ:

- Çурт проектне парăр-ха?

- Акă, тархасшăн, - сунтăхран хулăн кĕнеке туртса кăларчĕ прораб.

- Иксĕмĕр тепĕр хут пăхса тухар-ха, мĕнтен пуçламалла...

- Никĕсрен ĕнтĕ, урăх мĕнтен пултăр. Проекта эпĕ мастерсемпе тата бригадирсемпе букварь пекех вĕреннĕ.

- Апла пулсан, çиччас тĕрĕслетпĕр. Çапах та эсир хăвăр кам умĕнче ларнине ан манса кайăр, ĕç тăвакан.

- Линейнăй инженер, прораб кĕнцеляри йĕкехӳри умĕнче ларать, - тесе алăк патнелле таплаттарчĕ Карсаков.- Хăвăрах паллашăр. Ман вăхăт çук ача вăййи выляма. Сирĕн те лайăх пĕлмелле. Эсир - тĕп инженер.

- Василий Николаевич! Малышкин умĕнче хурав тытмалла пулать куншăн.

- Тытатпăр: хуравне те, экзаменне те. Çуртне те тăватпăр - сирĕнсĕрех, - хыттăнах каласа хăварчĕ вăл.

Кашнинчех çапла çĕтĕлтерсе çӳрет çынсене. Кантура çитсен управлени пуçлăхне элеклесе парать. Акă халĕ те шăнкăравланă вăл ун патне, алăк уçса кăшкăрчĕ:

- Василий Николаевич, телефон! Малышкин чĕнет.

Пуçлăх прораба тĕп инженера итлеменшĕн чиперех пăсăрлантарать. Мĕншĕнне ăнлантарса парсан тин лăпланчĕ. Хайлов-хăлха та хăйĕннех тăвасшăн.

- А ну-ка, чӗнӗр-ха кунта мастерсемпе бригадирсене, ҫурт чертежӗсемпе тӗплӗнрех паллашатпӑр, хутлав таблицине пӗлнӗ пек пӗлмелле ӑна вӗсен те, - мӑнкӑмӑллӑн хушу пачӗ вӑл.

- Мӗн, пиртен мӑшкӑллама килтӗр-и эсир кунта? Управлени начальникӗн куҫӗ умӗнче пурте тӗплӗн шӗкӗлчесе тухнӑ эпир ӑна. Кашниех ак ҫак алӑри пилӗк пӳрнене пӗлнӗ пек пӗлет...

- Ҫапах та ман тӗрӗслес килет. Эп - тӗп инженер.

- Эп - прораб. Эп хуравлӑ ку ҫуртшӑн!

- Субординацие пӑхӑнмастӑр!

- Парап ак субординаци, ҫиччас чи аялти карта анса ларатӑр, - тесе Карсаков Хайлов-хӑлхана пуканӗ-мӗнӗпех ҫавӑрса тытрӗ те, алӑк уҫса, ҫӗре лачлаттарчӗ.

Пукан лачӑрр арканчӗ, тӗрӗслевҫӗ кучӗпе лачакана анса ларчӗ. Хайлов-хӑлха хӑвӑрт сиксе тӑчӗ те, вар тытса кулакан строительсене чышкипе юнаса, Карсаковпа ятлаҫса, кутне аллипе шӑлашӑла танкӑшрӗ.

Кун пирки кайран Малышкин та шарламарӗ, ҫакӑн хыҫҫӑн Хайлов-хӑлха хӑй те чылайччен килсе курӑнмарӗ. Унсӑрӑн йӗркипе пӗр тикӗс пулса пырать ӗҫ. Карсаковӑн хӑйпе виҫӗ инженер, бригадирӗсем пурте техникум пӗтернӗскерсем. Чертежне хӑйсем ҫӗнетме, унти йӑнӑшсене тупма пултараҫҫӗ. Сахал ҫурт купаланӑ-и вӑл вӗсемпе? Йӑван Павлов Хайлова хӑртнине лайӑх астӑвать.Тӗп инженертан хӑрамасть вӑл. “Эс, Хайлов-хӑлха, ку таранччен ху аллупа сарай туса курман. Йӑпӑлтатса, ҫынна сутса, кантуртах тӗп инженера ҫитрӗн. Эпир ҫак алӑпа шӑратнӑ укҫана сӑптӑрса пурӑнатӑн, намӑссӑр сӗлӗх”, - тесе тӗртсех хӳтерсе янӑччӗ. Маннӑ пулас ун ҫинчен, каллех сӗтӗрӗнсе ҫитнӗ. Ҫамрӑксене вӗрентесчӗ, вӗсемпе юнашар тӑрса ӗҫлесе пӑхасчӗ пӗрре.

Пианино урӑх пӑнпанлагмарӗ, кӗвӗ те, юрӑ сасси те тухмарӗ Ларинсен пӳртӗнчен сад пахчине. Тепӗр куннех вӗсем япалисене тиесе таҫта илсе кайрӗҫ, пӳрт-ҫуртне пӑсса турттарчӗҫ. Карсаков пулӑшма хӑйӗн ачисене ячӗ. Кӳршисен те пӳрчӗсем юлмарӗҫ. Ҫаралнӑ пахчасемпе садсем ҫеҫ, хӑйсен усал шӑпине кӗтсе, ҫынсене ҫур шӑрши сапаларӗҫ-ха. Шупӑр тӑхӑннӑ чиесемпе улмуҫҫисене касакансем ҫине пӑхса тӑнӑ май Карсакова вӗсем шурӑ шупӑр тӑхӑннӑ чӑваш пикисене ураран ӳкерсе пынӑнах туйӑнчӗ. Ваттисем сӑхсӑхса, пилӗк таран пуҫ тайса, хӗвел ҫине пӑхса уйрӑлаҫҫӗ кил вырӑнӗсенчен. Вӗсене курнипе куҫҫуль пӑчӑртанса тухать. Карсакова ҫирӗплетсе панӑ бульдозерсем, хӑватлӑ ҫӗҫҫисене лак! антарса лартрӗҫ те, хура ҫӑра тӗтӗм кӑларса, ҫӗр тӗкме пуҫларӗҫ. Темиҫе кун каялла кӑна пурӑнмалли капӑр пӳрт вырӑнӗнче яка лаптӑк выртса юлчӗ. Маринӑпа асамлӑх ташши ташланӑ юрату вырӑнӗ шӑпах никӗс тӗлне лекет. Кӗҫех вӗсем ҫӗр чавса унта тимӗр-бетон никӗс ярӗҫ, ун ҫине ҫурт купаланса ларӗ. Карсаков хывнӑ никӗс ҫинче вӗсен Юрату керменӗ хӑпарӗ-ши? Акӑ, йывӑҫ касакансем ҫывхарсах килеҫҫӗ. Вӑл вӗсене хирӗҫ утрӗ, палланӑ улмуҫҫи тураттинчен сулахай аллипе ҫакӑнса тӑчӗ.

- Кӑна хӑварӑр, ачасем, - терӗ лӑпкӑн.

- Пире пурне те касма хушнă.

- Уншăн эпĕ личнă хурав тытатăп. Авă епле çурăлнă. Çулçи курăнмасть. Кĕркунне улмине çиме килĕр.

Лешсем итлерĕç, ытти йывăççене çаратса тухрĕç.

Ытла та пăтăрмахлă пулчĕ Марина Ларина улмуççийĕ. Каллех Хайлов-хăлха пирки. Асăрханă вăл юлнă йывăçа. Шăнкăравлать:

- Василий Николаевич, эсир хăрушсăрлăх техникине хăрушла пăсатăр.

- Пулма пултараймасть. Хăш енĕпе? Ăçта? Путлĕн ĕçлеме те тытăнман-çке? - тĕлĕнчĕ прораб.

- Улмуççине мĕншĕн кастармарăр? Шăпах вăл кран çаврăнмалли лаптăка лекет. Тасатăр!

Карсаков шухăша путрĕ. Мĕнле-ха капла, улмуççи çын мар, ун çине мĕн те пулин ўкес-тăвас пулсан та нимех те мар. Лартăр-и. Атту вĕреннĕ эпир стройка таврашĕнчи мĕнпур симĕс ўсекене касса тăкма. Пирĕн тĕрĕссипе хулари кашни йывăçа сыхласа хăварассишĕн çине тăмалла. Çĕнĕрен лартни хăçан ўсет вăл? Çавăн пирки тавлашса кайрĕ Карсаков.

- Касăр! Инструкци, - илтĕнет авăртан.

Çакăн хыççăн килнĕ сĕмсĕр моториста кутран тапнă пекех хўтерсе ячĕ прораб, Хайлов управлени пуçлăхĕпе çитрĕ, хăрушсăрлăх техникин инженерне те хăварман. Тăсланкă инженерпа пуклак инженер утасласа виçеççĕ. Малышкин вĕсем çине кулкаласа пăхса тăрать. Кран çаврăнмалли диаметр чиккинчен улмуççи пĕрин пилĕк утас, теприн вунă утас шаларах ларать.

- Касмалла! - алă сулчĕ моториста Хайлов.

- Кастармастăп! - улмуççине ытакласа илчĕ Карсаков. - Пĕрле хама та касăр!

Малышкин алă сулчĕ те икĕ инженерне те çăмăл машинине лартса кайрĕ. Пăтăрмах кунпах вĕçленмерĕ-ха. Хайлов треста пĕлтернĕ, унтан тĕп инженерĕ те, управляющийĕ те Малышкина хĕсеççĕ: “Мĕншĕн хăрушсăрлăх техникине пăхăнмастăр. Штраф кĕтетĕр-им?” Карсаков каллех çирĕп тăчĕ. Хайлов Чăвашстроя çăхав çырнă. Унтан комисси çитрĕ. Пĕрле вĕреннĕ ача Хайлов çатăлтатнине итлесе ывăнчĕ пулас:

- Шăпланăр-ха, - терĕ. - Стройка технологине йĕркипе тытса пырас чухне эсир миçе çынна чăрмантарса тĕп ĕçĕнчен пăрса ятăрха? Пĕлетĕр-и мĕн чухлĕ хур турăр, тăкак кăтартрăр? Сире эп хам Малышкин вырăнĕнче пулсан-и, тахçанах линейнăй инженера ямалла, малтанлăха мастерта тĕрĕслесе пăхмалла.

- Пулса курнă вăл мастер институт хыççăн, пăтă пиçмен ун, - кулса ячĕç пухăннисем.

- Улмуççи ĕçлеме никама та кансĕрлемест. Çуртне туса пĕтерсен, ун айĕнче ĕçкĕ тăвăпăр, - çăхав çырнă хут таткине Хайлова персе пачĕ хăрушсăрлăх ĕçĕн пуçлăхĕ. - Кут шăлма кирлĕ пулĕ. Тĕрĕслеме вара сирĕнне, ытти обьекчĕсене, урлă-пирлĕ çавăрса пăхсах тĕрĕслетпĕр. Хăвăрах чĕнсе илнĕ. Ăнăçу сунатăп, Ваçлей. Улми тутлă пултăр.

Çĕнĕ ĕç пуçласа янă хĕрӳ тапхăрта Карсак (строительсем хушшинче ăна çапла чĕнеççĕ) ыйхă çухатрĕ. Кăнтăрла телефонпа çухăрса та такампа-такампа "тытăçса", кирпĕч хатĕрлесе (май килнĕ чух запас туса хурать вăл) халран кайрĕ. Килĕнче ерçӳ пулмарĕ. Хунькассине тата çуралнă ялне хăнана чĕнчĕç. Арăм та çумрах тытасшăн. Пуçран Марина сăнарĕ тухма пĕлмерĕ пулин те, çитеймерĕ вăл кĕтнĕ ăш вырăна. Участока икĕ сменăна куçарчĕç. Хăлхара - сăвай çапакансен сасси, самосвал-автокран ямшăкĕсен çухăрашăвĕ, урам шавĕ, телефон шăнкăравĕ... Штаб-хваттерте анчахрах Малышкин пулчĕ. Ытлашши сасă хăпартмасть вăл, йĕркипе итлет, ун хыççăн тин хăйĕн шухăшне уçать, мĕн те пулин сĕнет, кирлĕ чух хĕстерсе те илет. Çăркаç Карсаков пĕр мастера хăй вырăнне хăварнăччĕ. Управлени пуçлăхĕн çурçĕр тĕлнелле мĕн сăлтавпа çитмелле пулнă унта, пĕлме çук, вăл улмуççи айĕнчи тенкел çинче эрех ĕçсе ларакан строительсене тытнă. "Хайлов пĕлтернине малтанах ĕненменччĕ, халĕ урăхларах шухăшлаттарать. Тилхепене хавшататăн мар-и. Ĕçмен строитель тупма йывăр, çапах та ачусене асăрхаттар. Çирĕпрех ыйтма пуçлатăп", - тесе пуç пӳрнипе сăмсаран шакканă пекех, пуçлăхлах каларĕ.

Кăмăл хуçăлнă çак самантра алăк ерипен уçăлчĕ те, аллине чечеклĕ сумка тытнă, çӳхе плащ тăхăннă кăтралатнă хура-хăмăр çӳçлĕ Марина шăппăн кĕрсе тăчĕ. Çамрăк хĕрарăм куçĕ сапнă шĕл-кăвар пысăках мар тăрăхла пӳлĕме çутатса ячĕ. Шупка пушмак шаклатнипе Ваçлейĕн чĕри кăрт турĕ те ăна ура çине чалтах сиктерсе тăратрĕ. Пӳлĕм хуçи хăнана хирĕç чупнă пек хыпăнса тухрĕ те... урай варринче юпа пек хытса тăчĕ. Пăлханнипе унăн чĕлхи çĕтрĕ, чĕркуççийĕсем лăштăрах кайрĕç.

- Мĕнле килме пĕлтĕр, Марина? - упа ытамне çавăрса тытрĕ вăл çинçешке хĕрарăма. - Каçар мана, ниепле те май пулмарĕ çитме...

Кĕтмен хăна прорабăн табак шăрши кĕрекен тути хĕррисене чуптăва-чуптăва, çулла-çулла сисĕмлех çыртса илчĕ аял енчен.

- Асăнмаллăх паллă хăваратăп, Вася-Василек - сумккинчен шурă тутăр кăларса юна шăлса илчĕ хĕрарăм. - Тӳрлениччен мана ан манăр. Ах, чĕрем çунать. Çакăнта, тăван килте иксĕмĕр тĕл пулнă хыççăн, путлĕн çвыăрса курман. Çĕрĕпе кĕтет сире ман чунăм. Чĕре алăк патĕнче хураллать. Туйăм кĕлеткере йăшăлтатать. Ытла та йывăрçке, кансĕр-çке мана. Сирĕн сăнарупа, сирĕн хăватупа пурăнма пуçларăм. Тин хĕвел кĕчĕ манăн вăрттăнлăх чатăрне. Тантăшăм та сана кулнине миçе çул курманччĕ-ха, халĕ ай-яй, йăлкăшса кăна çӳрет, теме пуçларĕ. Ăна эп каламан-ха хамăр хушăри вăрттăнлăх çинчен.

- Ан шарлăр, - хĕрарăма çурăмĕнчен, купарчинчен ачашласа хы-ытă чуптурĕ Вася-Василек. - Чĕлхе вăл... Вăрăм.

- Такам килсе кĕрĕ, - вăтаннă пек пулса вăрт уйрăлчĕ Марина. - Телефон чĕнет ав сире.

Карсаков алă сулчĕ те Маринăна чӳрече умне çавăтса пычĕ:

- Куратăр-и, пӳрт вырăнĕнче, сарай хыçĕнче çĕре мĕнле тарăн чавнă.

- Аха, пире иксӗмӗре Турӑ пӳрнӗ вырӑн.

- Авӑ ҫав тимӗр-бетон кӳлеписем кӗрсе выртаҫҫӗ кӗҫех унта. Ҫирӗплетсе якататпӑр та...

- Кирпӗч купалама тытӑнатпӑр. Ҫапла-и?

- Пӳрт пулать. Пы-ы-ысӑк, вунӑ хутлӑ пӳрт.

Ассӑн сывласа илчӗ те Марина:

- Ҫуралса ӳснӗ вырӑн туртать. Пӗрмаях, виличченех пуль, - терӗ. - Киле кӗрсе тухас, сире курас тесех килтӗм. Ятарласа. Улмуҫҫи мӗнле сыхланса юлнӑ-ха тата? Ниҫта пӗр йывӑҫ ҫук. Калӑр-ха Вася-Василек? Эсир пӗлетӗрех ӗнтӗ.

Карсаков вара ӑна улмуҫҫи историйӗ пирки каласа пачӗ.

- Ой мӗнле ырӑ ҫын эсир, Вася-Василек! - сумккине сӗтел ҫине хурса мӑйран ҫатӑрласа тытрӗ те чӑп чуптурӗ, урисене хуҫлатса силленчӗ.

Ҫавра купарчаран ҫавӑрса тытнӑ Вася-Василек хӑрарӑмпа пӗрле ҫаврӑнма пуҫларӗ. Алӑкран кӗрекен Манька-крановщицӑна та асӑрхаймарӗҫ вӗсем, лешӗ алӑка шалт! тутарнипе шартах сикрӗҫ, "Ой, такам!" тесе Марина аллисене ячӗ, урайне анса тӑчӗ, сӗтел патне сывхарса, сумккине ҫавӑрса тытрӗ.

- Такам курчӗ пире, - вӑтанчӑклӑн пуҫне пӗкрӗ хӗрарӑм. - Халь лекет сире арӑмунтан. Сас тухать. Ҫитереҫҫӗ ун патне. Эп те ҫав, юрату вӑрри, ӑна сирӗн арӑмунтан туртса илтӗм вӗт. Иксӗмӗр пӗрле аташнӑранпах шутлатӑп ҫав хӗрарӑм ҫинчен. Ун умӗнче айӑплӑ пек туятӑп.

- Пуриншӗн те кулянсан, - тесе аллине ласт сулчӗ те прораб телефонпа калаҫма пуҫларӗ: - Ыран валлиех! Только ыран валли! Аллӑ тонна. Нимле вуннӑ та мар. Мӗн, хӑлхуна цемент тулчӗ-им? Только мана анчах паратӑн! Раствор пирки эп, лешин пирки мар. Эп сана кӑтартӑп, панимаешь, ыттисене те кирлине!.. Тӑнла, итле мана. Сан валли эп вунӑ плитка шоколад илсе хунӑ. Ан кулян, коньякӗ те пур. Армянски. Пӗрремӗш рейс хыҫҫӑнах парса яратӑп, леш, чӗчӗ тытакан щоферӗнчен. Пулать? Ҫырса хутӑн? Юрать. Точка. Сыв пул. _- Ывӑҫ тупанӗсене сӑтӑрса сӗтеле шап! тутарчӗ те ура ҫине тӑчӗ. - Май ҫук апла ӗҫлемесен. РБУ та, кирпӗч завочӗсем те хам алӑра. РБУ вӑл - растворпа бетон узелӗ. Стройка шоколачӗ кӑларать. Диспетчерӗсем пулӑшаҫҫӗ-ха пока. Килӗшӳ ҫирӗп. Бартер. Унсӑрӑн план та, укҫа та ҫук. Мӗн панипе ҫырлахса меммеленсе ларсан стройкӑра выҫса вилен, ҫӗтӗк йӗмпе ҫӳрен. Авӑ, электриксем ҫитрӗҫ. Крана ток кирлӗ. Ҫыхӑнтармалла. Вӗсемпе калаҫмалла. Ӑҫта ҫӑвана кайса кӗчӗ-ши ку крановщица? Килме каланӑччӗ.

Хӑй кунта чӑрмантарине сиснӗ Марина кайма хатӗрленчӗ. Мӗн туса ларать-ха вӑл ҫак вакун-пӳртре ҫынсене пӑхтарса.

- Эпӗ каятӑп халӗ, - терӗ вара прораба куҫран ыйтуллӑн пӑхса. - Культура министерствинче пулмалла, хамӑр училищӗне кӗрсе тухас, музыка театрӗнче калаҫмалли пур...

- Мӗн тӑвӑн, ӗҫех пӗтерет. Тӑваттӑра пирӗн сменӑсем улшӑнаҫҫӗ, ун хыҫҫӑн ирӗкленетӗп. Ӑҫта тӗл пулӑпӑр?

- Тĕп универмаг умĕнче. Пиллĕкре, - теме ĕлкĕрчĕ çеç Марина, алăкра электриксем текен арçын ушкăнĕ курăнчĕ.

- О-о, салам, Карсак! Каллех сан кранусене чун кĕртмелле. Хатĕр-и сирĕн? - аллине тăсрĕ дипломат тытнă арçын.

- Ман яланах хатĕр, - пĕчĕк пÿлĕм еннелле пуçне пăрса кăтартрĕ прораб. Халех яратăр-и е ĕç вĕçленĕ хыççăн?

- Сан хатĕррине пĕлсех килтĕмĕр-ха. Малтан ĕçне тăвар. Унтан тин çăвăпăр.

Карсаков вĕсемпе тулалла васкарĕ. Марина урам еннелле асăрханса утать, килĕ вырăнĕнче чарăнса тăчĕ, канав урлă хывнă хăма кĕпер урлă аран-аран каçрĕ.

- Мань-кка?! - таврари пĕтĕм шава хупласа янăрарĕ Карсак сасси.

Шоферсемпе тĕрткелешсе тăракан крановщица васкамасăр çывхарчĕ, унтан, тутине камитле чалăштарса, аяккалла кайса пыракан Марина Ларина еннелле пуçĕпе сĕлтсе, йăкăр-йăкăр утса аллисемпе вĕçнĕ пек туса кăтартрĕ.

- Ăçта явкаланса çÿрен эс? - ятлаçма хăтланчĕ прораб.

- Эс ху тата штаб-хваттерÿнта мĕн якăлти кĕруççелĕ çавăран...

Прорабпа крановщицăн хĕрÿ калаçăвĕ çакăнпа вĕçленчĕ. Паçăр алăк уçса пăхаканĕ Манька пулнине Василий Николаевич ăнланчĕ.

Вăхăт иртни сисĕнмерĕ те. Смена пĕтсен ăна Манька çынсем умĕнчех кăтăкласа хăвараканччĕ. Вăл тимĕр картлашка тăрăх аннине пăхсах тăчĕ Карсаков. Манька кранне алсипе çатлаттарчĕ те ("Ыранччен!" терĕ пулас), чÿрече енне сиввĕн пăхса, хĕрарăмсен йăла вакункки патнелле таплаттарчĕ, ура тĕлне пулнă консервă банкине мечĕк пек тапса сирпĕтрĕ. Банка электрика пырса çапăнчĕ. Лешĕ Манькканă хăваласа кайрĕ. Карсаков телефонпа ĕçе арăмне пĕлтерчĕ: кĕçĕр вĕсем çĕрĕпех ĕçлеççĕ, план хăваламалла.

Марина ăна универмаг патĕнче кĕтсе тăрать. Карсаков чечек çыххипе пырать. Чечекне вăл хăйсен стройкипе хирĕç магазин умне чăмăртаннă пасарта туянчĕ. "Салют" юратăвне асăнмалăх парне илсе парас шухăш çуралчĕ. Шала кĕчĕç, япаласем пăхса çÿрерĕç. Марина кĕрĕк тăхăнса юрăхлипе юрăхлă маррине виçрĕ. Кăшт вăрăмрах пек.

- Хама́р патра химисен ытларах пулакан-ха, суйлăпăр, туянăпăр, - терĕ чаплă кĕрĕке уйрăлаймасăр ăмсанса.

Ылтăн-кĕмĕл, ахах-мерчен сутакан çĕре çитсен, Карсаков чăтаймарĕ:

- Суйлăр мĕн кирлине, - терĕ.

- Укçу çитмесен? Йĕмсĕр тăратса хăваратăп вĕт... - шÿтленĕ май куçне мăч хупрĕ Марина.

Карсаков хăлхаран пăшăлтарĕ:

- Сирĕн умăрта йĕмсĕр тăрса юлсан мана килĕшет.

Хĕрарăм ăна хулпуççийĕпе тĕртрĕ те кĕленче айĕнчи йăлтăркка таварсене ăмсануллăн выçă куçпа пăхса тухрĕ.

- Ак çак кевер чуллă мăй çыххи, икĕ куçлă çĕрĕ, çитет, - тĕллесе кăтартрĕ вăл çинçе пÿрнипе.

Карсаков таварсен хакне тата миçе тенкĕ укçа пуррине ăсра

шутласа тухрĕ те, "аха-аха, бриллиант, аха-аха, ылтăн" сăмахсемпе мăкăртатса кĕсьерен укçа ывăçласа кăларчĕ. Укçасăр нихçан та çӳремест вăл. Арăмне ĕç укçине тата премин пĕр пайне парать те ыттине тимĕр ещĕке пăрахать. Сулахаялла янă стройматериал (ытлашши яланах юлать, ăна нихăçан та никам та стройплощадкăран каялла леçсе пани пулман, е сутса ĕçсе янă, е укçа тунă) пулăшать тата.

- Юрĕ, - терĕ çунатланнă кавалер. - Тӳлетпĕр те...

Сăмса шывĕ те типсе çитеймен вăхăтра хăй çумне çыпçăннă аслăрах хĕрĕн мăйне утмăлтурат çыххи çакса янă чухнехи пек алли чĕтрерĕ унăн куçа йăмăхтаракан якатнă алмаз катăкне вĕри ӳт çумне перĕнтернĕ май. Сулахай аллинчи вăтам пӳрнене ылтăн çĕрĕ тăхăнтартнă вăхăтра Марина кĕлетки чĕтренсе илчĕ. Çĕрĕри хаклă чул куççем иккĕшĕн çине те ăшшăн пăхса кулчĕç. Марина çынсенчен именмесĕрех чăп тутарчĕ Вася-Василека.

- Мĕнле ыра тăвас тулĕк сире парнешĕн, Вася-Василек, сă-паси-пă.

- Пуян еркĕн тупнă ку майра. Çу-ук, мăйран кассан та ку упăшки мар. Тепри вăл еркĕнне юлашки йĕмне хывса пама хатĕр. Асту, пире упăшкасем çапла çавăтса çӳреççĕ пуль лавккасем тăрăх. Ха, кушак аçилле пăхать. Лешĕ мĕнле явкаланать..."

Хĕрарăмсен калаçăвне иккĕшĕ те илтрĕç, анчах пĕри те ун пирки сăмах чĕнмерĕ. Марина парнешĕн хĕпĕртерĕ. Вася-Василек парнеленĕшĕн савăнчĕ. Ресторана кĕрсе апат çирĕç, кăштах коньяк тутанса пăхрĕç. Марина театра каясшăн, сирĕн вăхăт пур-и, тет. Ирччен хăйпе кăна пулма палăртнине пĕлнĕ хĕрарăмăн чунĕ усламçу пекех ирĕлсе кайрĕ, пуçра кĕтнĕ тĕлпулу ытамĕ, юрату вылявĕ явăнма пуçларĕ.

- Оперă-и, балет-и унта паян? Эп балет ытларах кăмăллатăп.

- Çук, "Песняры" ансамбль. Хăçантанпа ĕмĕтленетĕп. Куçпа курас килет вĕсене, паллашас килет вĕсемпе. Ытла аван юрлаççĕ.

Карсаков, тем аса илнĕн, кĕсйинчен блокнот кăларчĕ.

- "Песняры" терĕр-и-ха, акă вăл, визитка, ансамбль хуçи панăскер, - хулăн çут хут татăкне сĕнчĕ Василий Николаевич. - Паллашатпăр.

- Ăçтан ку сирĕн? Хăçан панăскер? Килессе паян çеç килнĕ-ха вĕсем. Сире концерт кăтартма ĕлкĕреймен...

- Ĕлкĕрнĕ çав, ĕлкĕрнĕ, Славутичра. Атом электростанцине ĕçлеттерекенсен хулине турăмăр-çке эпир. Инкек хыççăн çĕнĕ хула лартрăмăр. Пĕтĕм çĕршывĕпе. "Славутич" кинотеатра патшалăх комиссийĕн аллине панă хыççăн Украинăна пынă кӳршĕсем, шурă вырăссем, строительсене чысларĕç, "Салютра" хăвăр пире кĕвĕюрă парнеленĕ пек кĕрлеттерчĕç вĕсем те. Вăт çавăн чухне алă тытма тӳр килчĕ шур вырăссене. Кĕçĕр, кĕçĕр вара... Атя васкавлăрах.

Троллейбусра Марина кантăкран пăхса пычĕ, пуçра тем явăнчĕ. Валерка шыв сикки авăрĕнчен аллине тăсса парать пек... Аварлă кӳлĕри чăнкă çыранран Вася-Василек алла çавăрса тытнă пек те

çӳлелле мекĕрленсех туртать пек, туртса кăларчĕ пек те, иккĕшĕ аларан-ала тытăнса чечеклĕ улăх тăрăх чупса кайрĕç пек...

- Çитрĕмĕр, тухмалла, - тесе Вася-Василек ăна сулахай аллинчен туртать.

Ыйхăри пек тĕлĕкри туйăмран хăтăлнă Марина Ларина театра хаваспах пырса кĕчĕ. Хăюллă прораб ăна хыçалти алăкран сцена патнелле талкăштарчĕ. Хăйсен ĕçĕпе ăшталанакансем хушшинче вăл мăйăхлă, капăр тумланнă сарăрах чипер арçынпа калаçма пуçларĕ. Кĕç иккĕшĕ те пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç, хулпуççийĕсенчен шапшап тутарчĕç. Ансамбль пуçлăхне Карсаков хăйĕн "хĕрĕпе" паллаштарчĕ. Концерт пуçлама вăхăт çитсе пырать, хăна сехет çине пăхать. Вĕсем, кайран калаçăпăр тесе, зала васкарĕç, вырăн тупса ларчĕç.

Шур вырăссен кĕвви-юрри Анлă Атăл çыранĕнче, Чăваш çĕршывĕнче янăрать. Марина кĕвĕри уйрăмлăхпа пĕрпеклĕх саманчĕсене, инструментсен янравлăхне, юрăçсен çĕкленӳлĕхне хăйне майлă тăнласа хак парать. Василий Николаевич кашни номер хыççăн лапшака ывăç тупанĕсем хĕриччен çатлаттарать, хушăран ура çине сиксе тăрса "браво!" тесе кăшкăрать.

"Туслăх кăшăлĕ" юрă... Ăна Чернобыль инкекĕ хыççăн хахулсене çĕнĕ хула лартма пулăшнă строительсене, вĕсен шутĕнче Василий Николаевич Карсаков прораба, вăл хăй те кунта, хисеплесе халаллатпăр" - тесе пĕлтерчĕ те ертсе пыраканĕ, зал ура çине тăрса ала çупрĕ.

Концерт вĕçленнĕ хыççăн чăвашсемпе шурă вырăссен туслăхне тĕлпулура паллă турĕç. Калаçу, ыталашу, шантару... Ансамбль хуçи строительсене ятарлă концерт пама пулчĕ. Карсаков такси чĕнсе илчĕ те вĕсем Мир урамне çитрĕç. Аслă урам çывăрать. Карсаков "хули" те шăплăхра. Иккĕмĕш смена килте ыйха туртать ĕнтĕ. Хуралçа çур литрлăх укçа тыттарчĕ те прораб (эрехне таксистсенчен вокзалта тупаççĕ) хĕрарăма хăйĕн штаб-хваттерне илсе кĕчĕ, чӳречене çăтă карчĕ.

Ала çумалли, çăвăнмалли, ăшăтмалли, шăлмалли, инкекрен сыхланмалли - пурте пур унăн. "Ресторанĕ" пĕчĕк пӳлĕмре. Ĕçмелли-çимелли хатĕрлеме Йăван Павлова хушса хăварнăччĕ. Туйăмлă ăслă çын вăл. Ĕçре те вăйлă маçтăр, йăлара та. Тӳрĕ кăмăллă. Сутмасть. Пулăшма яланах хатĕр. Шампански, эрмен коньякĕ, "столичнăй", "мадера", минерал шывĕ, пылак шыв, сервелат, балык, краб консерви, "чăх сĕчĕ" текен канфет, сигарет, спички... Пурне те шута илме пĕлнĕ-çке. Урайĕ тап-таса, хăть çарранах ут.

Хăйсене каçхи тирпей-тасалăха кĕртнĕ хыççăн вĕсем сисмесĕрех ытакланса тăчĕç. Шăплăхра пĕр-пĕрин чĕре таппине итлеççĕ. Марина чăнкă çыранран хăпарнă улăх чечекĕ ăшĕнче. Чунĕ унăн Вася-Василекăн çăмлă кăкăрĕ айĕнче пытанмалла вылять. Карсак çулăмлă çыхха майра мăйĕнчен хывать, вăта пӳрнери мăшăр куçлă ылтăн кăшăла кăларать, çурăм тăрăх хыпашласа çакă вĕçертет, чĕнтĕрлĕ çӳхе кĕпене çăра хулăн кăтра çӳç çийĕн тавăрса хурать, хускалнă туйăм пăркалантаракан купарчана икĕ енчен хыпашласа пас пӳрнисемпе резинкăна аялалла пусать, чун кĕнĕ йăпăрка, пĕççе

кăтăклантарса, ура тупанне вĕçсе анать. Тирне сÿсе пăрахнă упа, кăтра чăтлăха сирсе, канлĕх йăвине чăмать. Типекен тутине-чĕлхине упа çăварне чиксе имленнĕ май хĕрарăм, кăнт хытнă чĕчĕ пуçĕсемпе çăмлă кăкăра сĕт пĕрĕхтерсе, хулăн мăйран ахлата-ахлата уртăнать, курăнман картлашкапа киленÿ тăвĕ çине рехетленсе хăпарать, Вася-Василек мĕнпур вăйран тĕртнипе грексен авалхи Дионис турри пуçласа янă савăк уявах вĕçсе çитет. Симпыл ăшне кĕрсе ÿкнĕ кĕлетке ÿсĕрĕлсе, çемçелсе ачашланать. Чĕркуççи айĕнчен тытса çĕклет те ăна Вася-Василек алă çума илсе каять, хăй те тасалса, хăнана "ресторана" чĕнет.

- Тархасшăн, хăна пулăр?

Вася-Василекăн тути çăварĕнчи симпылне те, ар вăрлăхне те тăраниччен ĕçес те ÿт-пĕве вăхăтра варăнтарас килчĕ Маринăн. Чăнчăн арçын тĕлне пулса чăн-чăн хĕрарăм туйăмне çеç курчĕ-ха вăл, чăн-чăн хĕрарăмах пулса çитеймен. Сывă ача ăшра çитĕнтерсе ашшĕне алран тыттарсассăнччĕ - çавăн чухне кăна вăл хăйне тĕнчери чăн-чăн хĕрарăм, этемлĕхе малалла тăсма пулăшакан чăн-чăн ама пулса ниçта кайса кĕрейми савăнĕччĕ. Юлашки тапхăрĕ мĕнле вĕçленĕ-ши тесе стаканра йăрăлтатакан пылак эрех хăмписене сăнарĕ Ларина. Валерккăна кăтартман, хăй те курман ывă-лĕпе хĕрĕ ялан тĕлĕкре ун çумĕнче йăшăлтатаççĕ,чĕчĕ шыраççĕ, сассăр йĕреççĕ. Пĕри хăйне хывнă, тепри - упăшкине. Чĕпписене ачашланипех вăранса каять те вăл урăх куç хупаймасть. Çутçанталăк кĕлеткене авăрласа хунă вăй арçын патнех туртать, унран вăрлăх йышăнса тĕнчене ăслă пуç шăтарасах килет, çулçă кăларса усăллă çимĕç ÿстерес килет.

- Ытла шухăша кайрăр, тем... Шăнмастăр-и? - тесе Карсак çара ÿт çине ăшă куртка уртса ячĕ, хĕстернĕ пĕç хушшинчен уççа тăрса юлнă кăтрийĕпе выляма пуçларĕ, чĕччинчен, тутинчен чуптурĕ.

- Канлĕхре, савăкра ярăнатăп эпĕ сирĕнпе, Вася-Василек, - ăшран тухакан сасă илтĕнет. - Анчах... вăхăтлăх çеç. Ирпе уйрăлса каятпăр та, акă...

- Унччен вăхăт пур-ха, - ачашшăн чĕркуççийĕ çине хăпартса лартать вĕри кăмакана Карсак. - Ирччен ырлăх курар-ха...

Вася-Василек хăйĕн чĕри патнех уха-уха çывхарнине туйса ăна сике-сикех пулăшас килсе кайрĕ Маринăн. Кăтралăх уçланкинчи çăлкуçа пуç пÿрне пăтратса янине чăтаймасăр асап йăлмаклăхне пĕрхĕнтерсе ячĕ те вăл, хĕртнĕ тимĕр çинчи пек авкаланса, сарлака кăкăр çине каçăрлса выртрĕ. Ачашла-ачашла, ĕнсинчен, çÿçĕнчен чуптăва-чуптăва канлĕх юххине малалла тăсрĕ Вася-Василек, тута патне коньяк черкки çывхартрĕ, "чăх сĕчĕ" çăвара хыптарчĕ.

- Ĕшенмерĕр-и? - хуллен ыйтрĕ Марина.

- Мана сирĕнпе вăй кĕрсе пырать, - кăкăртан пуçласа пĕç кăкĕ таран ачашласа тухрĕ кавалер.

- Эпĕ те хама хам çунатлă туякан пултăм. Сирĕнпе вĕçес килет. Ан тартăр-ха чунăра чĕре кутĕнчен. Ак çапла, çапла... Кăларса ярас килмест ăша кĕнĕ вутта. Пĕçертсех яратăр вĕт. Çунтаратăр. Ах...

Алăри чĕрĕ пулă пек явкаланакан вутри кĕлетке пĕç кăкĕпе

çыпçăнса авăнать, тарăннăн сывласа нăйкăш сасă кăларать, чăтаймасăр, çаврăнса, ут çине утланса ларать, çăра çилхерен çавăрса тытса сиктерет те сиктерет таçталли куç курман улăхалла урхамаха.

Хĕрарăмăн тарланă пĕвĕ-сийне Карсаков шампань эрехĕпе çăвать...

- Çыврас килмест, айтăр сада, улмуççи айне, - чĕнет Марина. - Чуччу пулсанччĕ халь. Ярăнмалла хĕвел тухиччен.

- Чуччу-и? Çиччас майлаштаратпăр ăна. Пире вăл, тăвасси, мĕн...

Марина чÿречене уçса ячĕ, диван пуçĕ çине ÿпĕнсе улмуççие сăнама пуçларĕ. Чăп-чăмăр çара хыçа тата сарăларах кайнă пĕç хушшине асăрханă Карсак чăтăмсăррăн çурăма хупласа хучĕ, усăннă чĕчĕсене чăмăртаса, янахĕпе çăра çÿçе турама пуçларĕ. Хĕрарăм ăна каялла тĕксе-тĕксе, кукăрăла-кукăрăла пĕкĕ пек авăнса киленчĕ чечек çурнă улмуççипе. Çурăм тăрăх шампань эрехне çулласа тухнă Вася-Василек ÿсĕрĕлсех кайрĕ, лап выртрĕ хĕрарăм кĕлетки çине, арăмĕпе те, Манька-крановщицăпа та курман ырлăхран нихçан уйрăлмасăр юрату кÿллинче куçа хупсах ишес килчĕ.

- Ухмаха тухатпăр капла. Ах, çутçанталăк вăйĕ кĕртрĕр мана.

- Мана та. Шăмшак уçăлса кайрĕ. Кăмăл çĕкленчĕ. Уф! Вăт пурнăç та пурнăç. - Карсаков тумланчĕ. Кивĕ креслăна тытса пăхрĕ, ещĕкрен пăяв туртса кăларчĕ, вĕсене йăтса улмуççи патнелле васкарĕ.

Марина кĕпи-йĕмне тăхăнса майлашăннă çĕре чуччу хатĕр те. Вася-Василек ăна алă сулса чĕнет. Çемçе креслăна кĕрсе ларнă Маринăна Карсак майĕпен ярăнтарма пуçларĕ. Хĕрарăм çара урисене тапса янă пек каялла-малалла суллать, çăра çÿçĕ сывлăшра çĕклене-çĕклене варкăшать.

- Мĕн-ши ку пирĕн, Вася-Василек?

- Юрату.

- Вăхăтлăх канăç çеç мар-ши? Пĕрле, пĕр çемьере мар-çке эпир. Вăрттăн çеç савăнатпăр...

- Çутçанталăк, тĕнче панă телей вăл пирĕн.

- Чăнах та, çапла пуль, Вася-Василек, - пуçне каçăртрĕ Марина. - Çăмăл ача пулса...

- Мĕн?

- Ăш хыпать.

Карсаков чуччу пăявне хытăрах сулласа хăварчĕ те штаб-хваттерне кĕчĕ, унтан часах тулли сумккăпа тухрĕ, тенкел çине ĕçмелли-çимелли лартса тултарчĕ, Маринăна черкке тыттарчĕ, хăйĕнне çĕклерĕ те:

- Сирĕн киле, сирĕн йăх тымарне асăнса ĕçер. Пире, çурт тăвакансене, каçарччĕр, яла тĕп тунăшăн айăплисене хуçлатса лартччĕр. Атьăр, шăварар улмуççие.

Улмуççи кутне эрех тумлатрĕç те тĕппипе ĕçрĕç. Маринăна вăл тин пылак шыв ярса пачĕ.

- Шăпа çулĕ пĕрлешрĕ пуль иксĕмĕрĕн Мир урамĕнче. Çутçанталăк чĕрĕлнĕ вăхăтра туйăмсем пĕр-пĕринпе çитсе çапăнчĕç. Ах, çав “Салюта” кайман пулсанах...

- Турри ҫитернĕ пуль ҫав унта сире те, мана та ... кам шутланăха ăна, ҫав тĕлпулăва, пирĕншĕн историллĕ тĕлпулу пуласса, - каллех ярăнтарма пуҫларĕ кăштах ӳсĕрĕлнĕ хĕрарăма Карсак, хăйсем ăна ҫав паллă каҫ иккĕн ярăнтарнине аса илчĕ, Валерка текен каччă сăнарне куҫĕ умĕнчен хăваларĕ, анчах лешĕ пăява алăран ярасшăн мар. Хăй ҫине Марина ҫаврăнса пăхсанах йĕрĕнчĕк сăнар йăлтăрт туса сӳнчĕ. Чĕлхи уҫăлса кайнă хĕрарăм лирика туйăмĕпе, юрланă пек калаҫрĕ.

- Пирĕн ку чăн-чăн юратăвах пулсан, - хăлаҫланса илчĕ вăл, - тавах сана, Турăҫăм, тавах сана, Уйăхăм, тавах сана, Хĕвелĕм, тавах сире, Вася-Василекăм. Вĕҫĕмсĕр Уҫлăх тытăмĕ вĕт эпир, пĕрле ҫыхăннăскерсем. Пире халь иксĕмĕре никам та, нимле вăй та уйăраймĕ. Ĕненетĕп эпĕ ăшăма Юрату йăва ҫаврăнине, туятăп вăл пĕвĕм-сийĕме хăварнă ăшă сийĕпе - хӳтлĕх сийĕпе витнине. Чăн-чăн юрату вăл тĕнче чĕрĕлĕвĕпе пĕрешкел. Мĕнпур чĕрчун, ӳсентăран вăраннă вăхăтра пирĕн чĕресем те вăранчĕҫ, лăпкă ыйхăран хăтăлчĕҫ. Тымартан вулă тăрăх чĕрĕ сĕткен йăрлаттарса хăпарнă пекех пирĕн ӳт-пӳ те аталану сĕткенĕпе тулчĕ, ар вăрлăхне ытама ярса пĕрлештерчĕ, пит-куҫа ҫак улмуҫҫи пек чечеклентерчĕ. Ҫуллен килекен ҫу уйăхĕ чĕртсе, ҫеҫке ҫуртарса, аталантарсах тăтăрччĕ пире. Ҫапла мар-и, Вася-Василек?

Ҫемҫе ларкăчри хĕрарăм калаҫнине итленĕ вăхăтра ун патне арăмĕ ҫитсе тăчĕ пек те, ăна вăл та вилĕмсĕр юрату ҫинчен хĕмленсех каласа пама пуҫларĕ пек, хăйсен ҫимĕкри туй кучченеҫĕпе - Юрату кукăлĕпе - сăйласшăн пек. Тĕнчери чăн-чăн юрату пирĕн, куратăн-и пĕтĕм ҫутҫанталăк, мĕнпур тĕнче ешĕрекен симĕс йывăҫ-курăкпа ытамлать, сад-улăхра ҫурăлнă чечек кăшăлĕ тăхăнтартать, пит-куҫа имлĕ сĕткенпе ҫăвать, тесе хăй ҫумнелле туртать пек.

Куҫĕсене мăчлаттарса илчĕ те Карсак шухăш сĕмне ҫухатрĕ, пăява суллама чарăнмасăр, малалла итлерĕ.

- Ҫапла мар-и, Вася-Василек? - тепĕр хут ыйтать Марина. - Эсир, мĕн, тĕлĕрсе кайман пуль те?

- Ҫук-ха, ним калама аптрарăм-ҫке сире. Ҫу уйăхĕ, май, ҫултăкăн чи чĕрĕ, чи имлĕ уйăхĕ те ҫав... Нумаях тăсăлмасть-ҫке вăл. Ыттисен хыҫне тăрса юлать. Манăҫать... Тепĕр май ҫитсен те вăл урăх майлă, - терĕ вăл анасласа.

Ярăнма пăрахнă Марина, ҫакна илтсен, пӳрнине ҫыртса тем шухăшларĕ те:

- Ман тăсас килет ҫу уйăхне, манăҫтарас килмест иксĕмĕрĕн савăклăхне, ватăлтарас килмест ăна. Ҫухатас марах нихăҫан та.

Карсаков каллех тĕлĕре пуҫларĕ. Каллех арăмĕ чупса ҫитрĕ пек, мĕн туса тăран эс кунта ҫак хĕрарăмпа, а ну марш часрах киле, ачу кĕтет, эп кĕтеп, мĕн, ҫурхи кун сана ҫеҫ астарать-им, эп те чĕрĕ чун, авланиччен юрланă юрату юррисене мантăн-им, тесе ҫанăран туртать пек. Куҫ уҫăлса кайрĕ те, хăйне Марина аларан силлет иккен.

- Ан ҫывăрăр, итлĕр, - йăл кулать хăй. - Темле сив ҫанталăк та пулĕ пурнăҫра. Шăнтар мар юратăва, парар мар никама та, вăрлаттарар мар...

- Арăма та парар мар-и?

- Арăму пирки калаҫу пымасть кунта. Унăн юратăвĕ - хăйĕн, манăн хамăн. Сисетĕп эп, ҫуккă сирĕн юрату. Хăнăху ҫеҫ. Юратсан эсир арăмна, савмастăр та мана, суймастăр та ăна. Ултав сирĕн хушăра. Ачапа ҫыхăнтарнă та Турă иксĕре...

- Иксĕмĕре тата кам, мĕн ҫыхăнтарчĕ-ши?

- Иксĕмĕре-и? “Салют” керменĕнчи куҫ вăйĕ татăлми ҫиппе явакларĕ, иксĕмĕр хушăра ҫирĕп кĕпер хыврĕ. Улмуҫҫи хăйĕн сĕткенĕпе яшлантарчĕ, чечекĕнчен ҫĕленĕ кĕпе тăхăнтартрĕ. Ҫавăнпа пурнăҫ ачашлăхне, канлĕхне чăннипех туйса илтĕмĕр. Унсăрăн мĕн тумалла ҫĕр ҫинче? Упăшкапа тертленнĕ ҫулсем маншăн вилĕм ҫулĕсем пулнă. Сирĕнпе ҫывăхланнă самантсем маншăн сӳнми чаплă ĕмĕрлĕх. Ăнланман, вăхăтлăх юратăва ҫил-тăвăл вĕҫтерсе яратех, ĕмĕлкине ҫеҫ хăварать. Чыслăх, тивĕҫ, намăс - ним те тытса усраймасть ăна ҫынра. Чĕрене кĕрсе вырнаҫаймасть вăл. Ирĕклĕ чĕре вара хăйĕн чăн-чăн юратăвĕшĕн макăрать, вăл хăҫан та пулин ун алăкĕнчен кĕрсе каясса кĕтет. Кĕрсенех, читлĕхне шалт хупса хурать те виличчен те кăлармасть, вилсен те чунĕпе пĕрлех ҫӳрет. Манăн та Валерка юратăвĕ чĕрене кĕреймен, ман юрату валли унăн хĕрĕвĕ те, сывлăхĕ те, хастарлăхĕ те ҫитмен. Мана сирĕн чĕрӳ шыранă, шăпах ҫав ҫурхи ир шыраса тупнă. Сирĕн те чĕрӳ пушă пулнă, арăмун чĕриийĕ унта кĕме пултарайман. Ҫавăнпа эпĕ унта ҫăмăллăнах, хаваслансах кĕрсе йăва ҫавăртăм. Качча кайсан та упăшкапа пурăнман эпĕ. Сирĕнпе. Хĕрлĕхе те эсир ăсатнă каҫ ăна мар, шухăш туйăмĕнче сире тыттартăм. Вăл арҫын ĕҫне тунă чухне кашнинчех эпĕ хам ҫинче ăна мар, сире кураттăм, ăна туймастăм, сире савăнтараттăм. Юратман арҫынпа ача та тăвас килмест, юратнипе вуннă та тăвас килет. Ҫу пек ҫуллă юрату ҫеҫ хĕл сиввине те ирĕлтерет. Ман ăшчикри пăра та ирĕлтерчĕ. Эпĕ Турăран ыйтса, ун сывлăшĕпе кĕтĕм сирĕн чĕрене. Турă мана авланнă арҫынпа ҫывăхланма чармарĕ, хăй умĕнче сирĕн арăмунтан каҫару ыйтма хушрĕ. Кĕлтуса пурнăҫларăм эпĕ Турă хушнине. Ҫавăнпа сирĕн ҫума ҫилĕм пек ҫыпăҫрăм. Эсир те мансăр пурăнаймастăр. Эсир - ман чĕрере. Эпĕ - сирĕннинче. Пĕр-пĕрне туйса, пĕр-пĕрин шухăшне ăнланса, пĕр-пĕрне юратса пĕр ҫул ҫинче пыратпăр. Ой, нумай калаҫрăм. Ярăнтарăр-ха тепре. Шурăмпуҫ та саралса пырать, авă. Хĕвел хăпарать.

Улма йывăҫ авăна-авăна хăйăклатать. Ҫур чаршавĕ айĕнчи савăк хĕрарăм чун-чĕриийĕ юрла-юрла ярăнать.

4

Музыка хавалĕпе хăпартланса Марина Ларина пушă вăхăта ҫĕнĕ кĕвĕ шыраса ирттерчĕ. Ăнаҫлисене ҫырса пычĕ, вĕсемпе хăйне ҫывăх музыкантсене, композиторсене паллаштарчĕ. Каласа, юрласа пăхрĕҫ.

Сăввине те, кĕввине те, юррине те хăех шăрантарчĕ. Хулари çурхи фестивале хутшăнчĕ. Чăвашрадиора музыка передачисене йĕркелесе пыракан кăмăллă чăваш Маринăн виçĕ юррине Шупашкара чĕнсех студире çырса илчĕ. Кайрĕ вара Ларина сасси саланса эфира. Ир те, каç та параççĕ пĕр-пĕр юррине. Упăшкине халалланă "Сан ятупах пурăнатăп" халăхра пурăнсах кайрĕ. Салам передачисенче час-часах янăрать вăл. Вĕсен шăпи пек шăпа ахăртнех çут тĕнчере нумай пулас. "Вăрланă юратăвне" акă паян, строительсен уявĕнче, Василий Николаевич Карсаков прораб ячĕпе янраттарчĕç.

Иртенпех хăлхара çав кĕвĕ, сăмахĕсем чĕлхерен уйрăлмаççĕ: "Ăша кĕрсе мана вăратрăн..." Баян тытса та, пианино умне ларса та юрла-юрла илет: "Чечекленсе çеçке эп çуртăм, Улма пулса пылак тутлантăм..."

Кĕтет вăл Вася-Василека, алăкăн-тĕпелĕн утать, пулас концерт репетицине те каймарĕ, кухньăра ăшталанчĕ, мĕн кăна хатĕрлемерĕ пуль. Мĕнле кĕтсе илесси пирки шухăшларĕ. Эрне курманçке, Чĕрери савнийĕ кĕçех хăй çумĕнче пуласса шанать. Шупашкартан "Атăлпа" леçсе хăварнăранпа та килсе курмарĕ вăл темшĕн. Чĕнсен те, тем пек кĕтсен те. Пит çирĕп кăмăлласкер тем е урăхларах шухăшлать-ши, иккĕленет-ши... "Паян вăл пурпĕрех ман ытамра савăнать, туятăп килессе, килет, çитет ак хашкаса, çуллахи чечек çыххи йăтса..."

Алăк тăрринче кĕвĕ ташша ярсанах Марина унталла чупрĕ, ыйтмасăрах уçса ячĕ те... йăрăмлă çутă костюм тăхăннă Вася-Василек кăпăрка хутпа чĕркенĕ чечек çыххи тытса тăрать, сылтăм аллинче - дипломат. Хитре мăйăхĕ айĕнчи тути кăшт чалăшраххăн кулать.

- Аван-и? Кĕме юрать-и?

Хыпăнса ӳкнĕ Марина ăна часрах шалалла туртрĕ, сĕннĕ çыхха тумбочка çине хучĕ те дипломатне илсе лартрĕ, вара мăйĕнчен çакăнса тăранаймасăр чуптурĕ. Вася-Василек мăйăхĕпе кăтăклантарса, ыталаса хĕрарăма пĕлми турĕ.

- Мĕнле килме пĕлтĕр... Туйрăм çав чуну ман паталлах туртать тесе. Уяв ячĕпе сире, чунăмçăм. Ой, мĕн алăк патĕнчех тытатăп эп хăнана. Иртĕр, акă пушмакĕсене хывса çакăнта лартăпăр та, пиншакне ман костюмпа юнашар çакатпăр та, ваннăйне кĕрсе çăвăнатпăр та... тӳрех аслă пӳлĕме - уяв сĕтелĕ хушшине.

Чĕвĕл чĕкеç пек чĕвĕлтетекен кил хуçи ытамĕнче Карсаков савăк тĕнчене кĕрсе ӳкрĕ. "Ман унта сирĕн валли кучченеç, парне пурччĕ" тесе вăл дипломатĕнчен шампань эрехĕ, конфетсем кăларчĕ, ахаль те пуян сĕтеле тата пуянлатрĕ. Марина чечексене майлаштарса вазăна ячĕ, ăна валли вырăн тупса, сĕтел варрине лартрĕ.

- Килĕр-ха кунтарах, хам патарах? - чĕнчĕ хăна.

- Кил хуçи ун умне йăпăрт çитсе тăчĕ.

- Куçусене хупăр, сулахай аллуна тăсăр.

Марина итлерĕ, чуптăвасса кĕтсе тутине чĕтретсе илчĕ. Карса-

ков дипломатĕнчен кăларнă ылтăн сулла хĕрарăм аллине тăхăнтартрĕ. Алă сулли çине пăхса илчĕ те Марина пĕчĕк ача пек сиккелесе ташласа ячĕ, каллех мăйран çакăнчĕ, урисемпе ар- çынна явакласа илчĕ. Кĕпе айĕнчен çирĕп алăсемпе çатăрласа тытнă Вася-Василек вĕри çăлкуç таппинче пӳрне пуçĕсене пĕçертсе ячĕ. Хĕрарăм карăннă чĕчĕ пуçĕпе савнийĕн чĕре картине уçса ячĕ те...

Хăна кĕтсе ыврăннă сĕтел дивана кĕвĕçсе салхулланчĕ, арçын ури перĕннипе черккесене чан çапнă пек чăнкăлтаттарчĕ. Тинех çаврăнса пăхрĕç юрату пылакĕпе тăранайманскерсем, унталла туртăнчĕç. Сĕтел тин лаштах сывласа ячĕ, вăрттăн мăшăра хăй хушшине кĕртсе лартрĕ.

Эрех тутанса çырткаланă хыççăн Марина кĕлетки çине çӳхе, витĕр курăнакан халат уртса ячĕ.

- Ман пижама пур. Парас-и?

Тутине выляткаласа тăракан Вася-Василек пуçĕнче шухăш вĕлтлетсе илчĕ: “Упăшкин пуль-ха. Фу, вилнĕ çын япалине çума ямас”.

- Эсир Валерккăн терĕр-им? Ан хăрăр, ун мар. Унăн юрамасть те сире. Ятарласа хăвăра валли туяннăскер. Индире çĕленĕскер, акă, - шифоньертан çыхă илсе пырса пачĕ Марина. - Ман кунта сирĕн валли майка та, труси те, кĕпе те, зонт та пур. Пурте кирлĕ пулаççĕ хăвăр кунта чухне тетĕп-çке. Вăт мĕнле сирĕн несакуннăй хуçайкку. Матур-и?

- Пултаратăр, Марина, маншăн тăрăшатăр, - мухтаса çурĕмĕнчен лăпкарĕ вăл ăна пижамăна тăхăннă май, çав хушăрах шухăшларĕ: “Арăмсем çапла пăхсан пире, никам та ютта юртас çук”.

Çĕр каçмах хăварасшăн ăна Марина, пĕрре читлĕхе хупнă упана ниепле те кăларасшăн мар. Карсакова вара килĕнче кĕтеççĕ: арăмĕ, тăванĕсем. Строитель уявне çуллен пĕрле пухăнса палăртаççĕ-çке вĕсем. Çирĕп тăчĕ вăл хăйĕн шухăшĕшĕн, читлĕхе çĕмĕрсе тухрĕ, çула тумланчĕ.

- Вася-Василек, итлĕр-ха мана?

- Калăр, мĕн калатăр? Тăрăшсах итлетĕп.

Марина пăлханса кайрĕ, ун пек чух унăн пичĕ пĕçерме пуçлать, куç хăрпăкĕ сиккелет, пуçĕ çаврăнать. Тĕкĕр çинче хăйне тĕрĕслесе якатрĕ те вăл, халат аркисемпе çара пĕççисене хупларĕ, Вася-Василек хывса хунă пижамăна майласа хуçлатрĕ, чĕтрекен сасăпа йĕре-йĕре калаçрĕ:

- Таçта çити тухса тарăттăмччĕ çак хваттертен. Тупасчĕ Шупашкарта улăштаракан. Пĕр пӳлĕмлипе те килĕшмелле. Хуйхă, тунсăх, куççуль йăви вăл. Эсир ман пата килсе пурăнас çук. Е мĕтĕмре, шухăш вĕçевĕнче кăна-ши эсир ман çумра, манпа пĕрле? Ытла та кĕске пирĕн хутшăну, çыхăну, йăпану вăхăчĕ. Пĕлетĕр-и, эпĕ сирĕнсĕрех, пĕчченех пĕр мă-ăнă ĕç тума шухăш тытнă.

- Мĕнле ĕç вăл? Музыкăра-и?

- Ăхă, музыкăра - иксĕмĕрĕн юрату музыкинче.

- Çĕнĕ юрă-и? Ой, мансах кайнă, паянхи юрă саламĕшĕн сире

те тав туса чуптӑватӑп. Хавасланса, мухтанса, ӗмӗтленсе итлерӗм. Ҫав юрӑ хӑвачӗ туртса килчӗ. Тата ҫӗннине ҫырнӑ-и?

- Ҫырнӑ ҫав, эсир пулӑшнипе, тӑрӑшнипе тарласа ҫырнӑ. Ҫӗнӗ ҫулта премьера пулать.

- Вӑт савӑнӑҫ. Мана чӗнетӗр пуль?

- Юра ашшӗне те чӗнмесӗр вара?

- Ан култарӑр-ха, юррӑн ашшӗпе амӑшӗ те пулать-им вара? Музыка теорине пӗлмесен те, тем, ӑнланмастӑп.

- Пур ҫав Юрӑн, пур пирӗн Юрӑн ашшӗ те, амӑшӗ те. Хам патарах, ҫывӑхарах килӗр-ха, - Марина аркӑсене уҫрӗ те Вася-Василекӑн пуҫне пӗшкӗртсе хырӑмӗ ҫумне хӗстерчӗ. - Итлӗр.

Карсаков хӗрарӑм хырӑмӗнче юрланӑ пек сасӑ илтрӗ - унашкал хӑйӗн те чӑрлатать-ха хушӑран. Итленӗ май шалта кӑлт, кӑлт тапнӑн туйӑнчӗ.

- Илтрӗр-и мӗн те пулин?

- Пур унта темле музыка. Ура тапсах юрлаҫҫӗ пек, тӑпӑртатсах. Пур юрӑ.

- Вӑт мӗнле Юра пур унта ман, ашшӗне тапса систерекенни.

- Юра? Ача-и? - хумханса ӳкрӗ Вася-Василек. - Ай хырӑм юлнӑ сирӗн?

- Ах, ҫапла вылясан та юлмасан, арҫынпа хӗрарӑм та мар эпир.. Акӑ мӗнле мӑ-ӑнӑ ӗҫ тума шутланӑ эпӗ - ача тума. Ывӑл пуль тетӗп. Юра ятлӑ хурасшӑн.

Вася-Василекӑн сӑнӗ малтанхинчен сисӗнмеллех улшӑнчӗ, кӑтра вӑрманти ҫӑлкуҫ имне сӑмсапа ӑша туртса илчӗ те вӑл тӳрленсе тӑчӗ, сассине хуҫарах каларӗ:

- Шутланине пурнӑҫламаллах. Пултӑр-и ача. Юра пултӑр. Эп хирӗҫ мар. Арӑмсӑр пуҫне тепӗр хӗрарӑм манран мӗнле ача ҫуратнине те курас.

- Курни ҫеҫ мар-ха ӑна, ӳстерес те пулать.

- Пулӑшатӑп. Укҫа ҫук-им?

- Пулӑшни те ҫителӗксӗр.

- Тата мӗн ҫитмест?

- Ашшӗ ҫитмест. Ачана ашшӗ юнашар кирлӗ.

- Авӑ епле. Тӗрӗсех, - ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса илчӗ Карсаков. - ку вара ытла кӑткӑс ыйту.

- Хӑратса пӑрахрӗ-и? Эх, Вася-Василекӑм, Упаҫӑм, Юратуҫӑм, хӑвӑр чӑннипех упа пек вӑйлӑ, чӗрӳ мулкачӑнни пек хавшак. Эх, Карсак.

- Упа мар кунта арӑслан та чӗтресе ӳкмелле кӗтмен ҫӗртен ҫамкаран ҫапнипе.

- Туятӑп, ӗненетӗп сирӗн шухӑш-кӑмӑлна та. Еркӗн ача ҫуратни, паллах, арҫыншӑн телей мар, ытлашши хумханупа пӑтӑрмах ҫеҫ. Пире юрату парнеленӗ Ҫуркунне те асӑмра кӑна юлать пуль ҫав. Ҫурхи кун тӗнчене вӑратса, чӗрене ҫӗнетсе юрлаттарать, паллах. Киввине, иртнине хыҫала хӑварса ҫӗнӗ сӗткен ӗмме тытӑнать мӗнпур чӗрӗлӗх. Ҫын та, курӑнман вӑй таптарнипе, мал-

танхи юратӑвне мансах ҫӗнӗ юрату шырать пулас. Ҫутҫанталӑкӑн ҫав ҫаврӑмне лексе ҫывӑх ҫыннине те улталать, урӑххи ҫумне ҫыпҫӑнать. Юттине курас, тутлӑраххипе пылакланас тесе шухӑшламан-.ӗмӗтленмен арҫынпа хӗрарӑм ҫукрах пуль тӗнчере. Эпир те арӑм, упӑшка пур ҫинчех пӗр-пӗрин шухӑшӗпе пурӑнма пуҫларӑмӑр, юрату вӑйӗ туртнипе хамӑра пӗрлештертӗмӗр. Ҫак телей хӑшпӗрисенни пек выляв ҫеҫ ан пултӑрччӗ тесе кӗлтӑватӑп. Хӑвӑрт хӗртӗмӗр те, хӑвӑрт сивӗнер мар. Юрату пирӗн яланах Ҫуркунне ашкӑнтӑр, ҫуллара ӑшӑнтӑр, кӗркуннере куҫҫуль ан юхтартӑр, хӗллере шӑнса ан лартӑр. Халь кайӑр. Урӑх тытмастӑп. Тавах парнӳшӗн, мана куҫҫуль кӳллинчен туртса кӑларнӑшӑн, чӑнчӑн арҫын пулса чӑн-чӑн хӗрарӑм сӑпкинче ярӑнтарнӑшӑн.

## 5

Ҫаврака мӑн пуҫӗ Карсакӑн тип-тикӗс ӗҫлет-ха. Ҫӗнӗ стройка ӑна самаях ласкать. Штаб хваттерӗ хурт вӗлли пек сӗрлет. Пуш вырӑнта кирпӗч стена хӑпарать. Малышкин ӑна кӳршине пулӑшма хушрӗ. Стройтехникум пӗтернӗ пӗр шеплешкене мастера лартса шар курчӗҫ. Трест управляющийӗ Хайловпа иккӗшне те выговор шаплаттарнӑ. Ҫав хусах хӗрарӑм ҫурт никӗсне йӑнӑш хывнӑ. Иртсе ҫӳренӗ чухнех асӑрханӑччӗ-ха Карсак шӑйрӑка, каларӗ мастера, лешӗ “ҫын хуранне сӑмсуна ан чик” тесе хӑлтӑкланчӗ те, Василий Николаевич алӑ сулчӗ. Мӗне кирлӗ, унӑн - хӑйӗн ҫурчӗ, хӑйӗн позицийӗ. Халӗ унӑннах тӳрлетмелле тута хӗретсе пӑркаланса ҫӳрекен майран кӑлтӑкне. Никӗс вӗт вӑл. Ун ҫинче миҫе пин тонна чул, кирпӗч, тимӗр тата ытти япала выртать. Миҫе ҫул тӗрӗс-тӗкел лармалла. Ҫурӑлчӗ-тӗк стена... Ҫавӑ чи хӑрушши. Ҫавӑнпа Карсак никӗс янӑ чухнехи пек нихӑш вӑхӑтра та пит тӗплӗ, витӗмлӗ шухӑшламасть. Нивелирӗпе палӑртать, виҫет, шутлать, чертежра кӑтартнине хӑй ӑсӗпе танлаштарса ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ вариант туса пӑхать. Кам мӗнле ӗҫленине, виҫеллӗ-виҫесӗр материал хунине тӗрӗслесе тӑрать. Никӗс патӗнче чухне ун патне ан та пыр: калаҫмасть, алӑ ҫеҫ сулать.

Юрать-ха хӑй тӑвакан ҫуртӑн никӗсне хывса пӗтернӗччӗ. Кӳршӗре эрне чакаланчӗ. Хайлов ун патне пыма хӑрать.

- Кантуртан нумай кӑтарту паратӑр эсир. Куҫпа курмасӑр вӗрентетӗр. Производство пайӗн пуҫлӑхне хуса кӑларӑр-ха пӗрре стройплощадкӑна. Атту эпӗ ӑна хам патра курманни виҫӗ ҫул, - ятлаҫмах пуҫларӗ прораб.

- Линейнӑй инженертан куҫнӑранпа, тем, хам та хӑшне-пӗрне мана пуҫланӑ, - килӗшрӗ Малышкин унпа. - Ҫакӑнта, линире, ӗҫ вучахӗнче чи кӑткӑсси, йывӑрри, хуравли. Вӗренмелли нумай сирӗнтен.

- Генподрячик специалисчӗсене, пире, улталама йывӑр, пурне те витӗр куратпӑр, мӗншӗн тесен пур ӗҫе те хушма подрядчиксемпе пӗрле тӑватпӑр. Никам ҫине те шанмастпӑр.

Трестӑн тӗп инженерӗ хӑй килсе тӗрӗслерӗ вӗт Василий Николаевич юсанӑ никӗсе.

- Карсак   алли пырса тĕкĕннĕ пулсан вара йĕркеллех пулма кирлĕ, - терĕ вăл Малышкина.

Хăй тем пĕлнĕ пек, ҫакăнта тем ыррине тунă пек, эпир те эпир тесе ҫулланса ҫӳрерĕ Хайлов-хăлха. Мухтав сăмахĕ пурпĕрех Карсака ҫеҫ лекрĕ.

Ҫулла техникум ачисене Карсаков патне килсе ячĕҫ. Вĕреннĕ чухне хăй те практикăра пулса курнăскер, прораб вĕсен кăмăл-туйăмне ăнланать. Кăшт та пулин укҫа ĕҫлесе илччĕр тесе вĕсене рабочи вырăнне йышăнма шутларĕ. Малышкин хирĕҫ мар, Хайлов ҫеҫ тем чакаланчĕ, ҫапах та прораб сĕнĕвĕпе кантурта килĕшрĕҫ. Кашни бригадăна виҫшер ача ҫирĕплетрĕ вăл.

Малышкин отпуска кайнăччĕ, хăй вырăнне вăл тĕп инженера хăварнă. Хайлов телефонпа шăнкăртаттарса тăнран ячĕ. Пĕрмай канашлу та планерка ирттерет. Карсаков унта кайма пăрахрĕ. Мĕн пустуй хаклă вăхăта ирттерет-ха вăл темиҫе сехет пакăлтатнине итлесе. Управлени пуҫлăхĕн ĕҫĕсене туса пыракан ăна приказ ҫырассипе хăратать.

Йăван Павлов пиллĕкмĕш хута хăпарса ҫитрĕ. Карсак вĕсем патĕнчен анчахрах анса штаб-хваттерне кĕчĕ, кĕҫ управленирен шăнкăравларĕҫ. Хайлов иккен. Ниҫта та ан кайăр, пыратăп, тет. Ҫитрĕ.

- Сирĕн иккĕмĕш смена сахал ĕҫлет, вуннăрах пăрахса каять. Мĕншĕн? Наряд хупнă чухне ма хушса ҫыратăр? Улталатăр! Крановщицăсем кирпĕч, раствор ҫĕклесе параҫҫĕ те, прораба хӳре пĕтĕрсе кăтартаҫҫĕ те, алю. Халĕ те ĕҫлемест кран. Мĕншĕн? Павлов хăй вырăнне ачасене ĕҫлеттерет. Кирпĕч сутса эрех ĕҫетĕр... - ҫатăлтатать те ҫатăлтатать.

Манька-крановщица Ваҫлей патне калаҫма аннăччĕ те, Хайлов килнине курсан, Карсак ăна "ресторана" питĕрсе илчĕ. Тĕп инженер мĕнле ҫĕмĕрĕлнине-ҫуйхашнине, хăйсене пустуй ятласа айăплама хатĕрленнине тата ыттине те йăлтах хăлхана чикнĕ кăра хĕрарăм.

Тĕп инженерпа прораб ятлаҫса тухса кайсан Манька, ăшĕ хыпнипе, стаканри хĕрлĕ шĕвеке шап тутарчĕ. Пылак шыв пуль тенĕччĕ, коньяк пулчĕ. Пĕр вăрăм татăк кăлпассие ҫавăрса тытрĕ те вăл чăмлачăмла Павлов патне чупрĕ, ҫитсе бригадира хăй мĕн илтнине йăлт каласа пачĕ. "Ҫиччас эпир ăна юсатпăр", - тесе иккĕшĕ пăшăлтатрĕҫ те, Манька кран патне васкарĕ. Кран чăрнлатса-чăнкăртатса сасă пачĕ. Кĕҫех стропальщик кăшкăрса ячĕ: вира!

Аялта ĕҫлекенсене тĕрĕсленĕ хыҫҫăн Хайлов прораба пиллĕкмĕш хута чĕнчĕ.

- Эсир киличчен кăна пултăм эп унта. Шофер кăшкăрать, ав. Тем тиесе килчĕҫ. Йышăнмалла, - тесе уттарчĕ Карсак.

Кайран Иван Павлов каласа пачĕ ăна мĕн пулнине. Хайлов-хăлха хăпарса ҫитнĕ ун патне. Вĕсем хĕрсех стена купалаҫҫĕ. Вăрăм чĕлхешĕн, куҫран тӳрĕ каланăшăн ҫав тери курайми пулса ҫитнĕччĕ ĕнтĕ вăл чăрсăр бригадира. Практикант кирпĕч хунине, Павлов пăхса тăнине курать те тӳрех ярса илет ăна. Павлов та хĕрсе каять, вĕсем сиртен лайăх купалаҫҫĕ,

тет. Çухăрашнă вăхăтра Манька вĕсем патне раствор çитерсе парать. Шĕвеке тăкаççĕ те... Курите çĕкленме пуçлать. Вăйлă Павлов тытать те перет Хайлова пуш куритене. Манька кранăн вăрăм хулне хăвăртрах куçарса уççа илсе тухать, хăпарнă таран хăпартать, крана чарать те аяла анать, штаб-хваттере кĕрсе прораба юнать:

- Сана та тăватăп Хайлов-хăлхана тунă пек.

- Мĕн турăн эс ăна? Амантмарăн, вĕлермерĕн пуль те... Пĕтерен эс мана, иртĕхсе кайнăскер.

- Пăх кантăкран!

Карра сирсе пăхрĕ те прораб куритере хăлаçланакан Хайлова курчĕ.

- Антармастăн-и?

- Мĕн, халех антармалла-им сан умăнта? Ак, ярсан çак мăлатукпа пĕрре... Мăшкăлласа тăрать. Сана та тăвап-ха пĕрре, лайăхах, кăтартап йĕм тĕп. Ха, чиперкке тупнă та вăл, кутне пăрса утаканнине, - крановщица Марина пекрех пăркаланса утса кăтартрĕ. - Çампа ман пата пыма пăрахрăн? Эп кирлĕ мар-и халь? Эп йăлăхтартăм. Эп усал. Вăл - кăрсавицă. Кам сĕмпĕлтетсе выртать-ха "Эп сана çеç чунтан юрататăп, эп сансăр пурăнма пултараймастăп" тесе ӳсĕрле? Халь чĕнсен те пырасшăн мар, тарса çӳрен. Кĕçĕр пыратни?! Ман санах ыталас килет. Журналне пар, кран ставать туни çинчен алă пусса хăварам. Кĕтеп сана.

- Крана пĕрле Хайлова парса хăваратăн ĕнтĕ, чăрсăр чун. Кĕрсе ĕç "ресторана" пĕр стакан. Лăплан. Унтан куç курĕ.

Манька-крановщица "ресторантан" хĕрелсе тухрĕ, аш татăкки тытнă, пит тутлăн чăмлать.

- Антармастăп Хайлов-хăлхана. Накасани ăна пире пустуй тапăннăшăн. Эс те хăпараймастăн кран çине. Никам та. Допуск çук. Ĕçлеттерейместĕр. Пирĕн унта хамăрăн вăрттăнлăх пур. Лартăр ирччен хăлатла хăлаçланса. Тулта ăшă. Вилмест. Кил-ха кунтарах, - пуçа эрех пырса çапнипе пушшех хăюлланчĕ Манька, - чуптăвам. Вăт çапла, юрать халь. Ме уççине, хăвах уçса кĕрен.

Манька-крановщицăна ăсатса янă хыççăн Карсак Маринăна аса илчĕ:

"Мĕншĕн çывăхрах мар-ши? Нимле Манька та кирлĕ марччĕ вара. Ĕç вăхăтĕнче те кĕрсе йăпанма пулатчĕ, киле те вăхăтра таврăнаттăмччĕ. Ах, юратапах пулмалла эпĕ ăна. Унашкал хĕрӳ хĕрарăм тĕлне пулман ку таранччен. Астарса, вутлантарса туртса илет те хăй çумне, ĕмет те ĕмет вăя, ар вăрлăхĕпе çĕнелсе яшланать, чĕрĕлсе чечекленет. Ку Манькkипе... выç хырăма тăварсăр шĕвĕ шӳрпепе суйнă пек... Ӳсĕрпе каять. Эх Марина, Марина. Йывăççу чĕрех. Улми ӳсет, тутă кĕрсе пырать. Хырăму та ӳсет. Аптрамалла. Ку Манькка тата Хайлова сывлăша çакса хăварчĕ. Нимле те антарма çук халĕ ăна ирхи сменăччен. Арăм хунькассинчен таврăнмарĕ-ши? Ай пета, пета..."

Тарăхни халь те иртсе кайман Павловăн, алăка уçсанах ыйтрĕ:

- Сан юлнă-и унта, чуна кантармалăх?

Бригадира пĕр стакан хаяррине ярса панă хыççăн вĕсем штаб-

хваттере питĕрсе тухрĕç. Каçхи смена вĕçленнĕ строительсем килĕсене васкаççĕ. Вĕсен Хайлов шухăшĕ мар. Хăлат пек хăлаçлансан та, хăратса çухăрашсан та пулăшма пултараймарĕç ăна, пока! тесе алă сулса çеç хăварчĕç.

Такăрланă сукмакпа утасах килет çав "Юлашки хут, точка" тесе чуна темле хытарсан та урасем Манькка йĕрĕпех кайрĕç.

Тепĕр кунне ирхи сменăна килекенсемшĕн кулă. Куритерен аялалла пăхса тăракан мĕскĕне сывлăх сунаççĕ. Маньккăна улăштаракан хĕрарăм, прораб вĕрентнипе, юри час ĕçлеттермерĕ крана. Ваннă, тесе каламалла-çке. Айăплисене кĕçех пĕсехерен ярса илме тытăнаççĕ.

Карсак чӳречерен сăнать. Акă кран чăнкăртатса сас пачĕ те, вăрăм хул вĕçĕнчи трос сӳтĕрĕлме пуçларĕ, курите çĕр çине тăрнст! анса ларчĕ. Куритерен аран-аран тухнă Хайлов-хăлха прораб пӳрчĕ енне пăхмасăр аслă урамалла танкăшрĕ. Çӳлти хутран ши-и! шăхăрни илтĕнчĕ. Кран вăрăммăн чăнкăртатрĕ.

Ахалех иртмерĕ ку пăтăрмах. Малышкин çуккă пирки Хайлов треста çитнĕ. Управляющи Карсакова чĕнтерчĕ. Ăнлантарса пама ыйтрĕ. Пырса тĕпчес пулсан та "Тĕп инженер кранпа хăвăртрах анас тесе куритене хăй кĕрсе тăчĕ", "Ман кран ванчĕ, ĕçлеттерейменмерĕм" тесе калама килĕшнĕччĕ Павловпа тата Маньккăпа. Çав майлăрах пĕлтерчĕ вăл аслă пуçлăха. Лешĕ ăна ĕненнĕ пекех итлерĕ, анчах строительсем ку камите халăха ахальтен кăтартманнине, Хайлова тек тĕп инженерта тытма май çуккине ăнланчĕ. Вĕсем ун çăхавне сӳтсе явса та ыванна ĕнтĕ.

Кăнтăртан канса таврăннă Малышкин отпускĕ вĕçленичченех ĕçе пырса кайрĕ, çула май çеç кĕрсе тухрĕ пулас. Ăна Хайлов макăрса кăтартма та ĕлкĕрнĕ. Управляющи те калаçса илнĕ унпа Хайлов пирки.

- Ну шаймăксем, пултараттăр та - култараттăр та çав, - хăй те кулса ларать штаб-хваттерте. - Эсир вăл çынпа мĕн те пулин тăвасса эпĕ тахçанах кĕтнĕ. Лайăх пĕлеп сире. Юрĕ, вĕçсе курни те, юлашки хут стройплощадкăра çĕр каçни те пăсмĕ ăна. Тек сире чăрмантармĕ. Тĕп инженер пулмасть урăх. Кирлĕ те мар вăл. Хамăрах пулатпăр вĕт?

- Пултаратпăр, - шавласа илчĕç мастерсемпе бригадирсем. - Сире итлетпĕр эпир. Сирĕнпе ĕçлеме пулать.

- Эсир мана мар, Василий Николаевича ытларах итлĕр. Эпĕ вĕт сиртен мар, унран ыйтатăп.

- О-о! Карсакпа пурăнма пулать.

Пурăнмалли çурт пĕлĕтелле кармашса-хăпарса пычĕ. Хайлова урăх управление куçарнă, мастера лартнă. Карсак хăйĕн сăмахне тытрĕ-тытрех. Манькка-крановщица сукмакĕ çине сысна курăкĕ пусрĕ. Урса-тулхăрса çӳрет Ваçлейĕн кив савниййĕ.

6

Шупашкарта каҫа юлнӑ Марина Ларина Мир урамӗпе ҫурранах анчӗ. Стройка лаптӑкне тавраллах хӑмапа картланӑ. Ҫаврӑнса тепӗр енне тухрӗ те вӑл вӑхӑтлӑх сарнӑ бетон тротуарпа Карсакӑн штаб-хваттерне ҫитрӗ. Хуҫи вырӑнтах пулас, телефонпа ҫухӑрса калаҫни тулах илтӗнет, такампа хытах ятлаҫать. Хӑна кӗрсен, вӑл шӑпланчӗ, ӑна хирӗҫ сиксе тухрӗ, хӑвӑрт-хӑвӑрт ыйтса пӗлчӗ, хырӑмӗнчен шӑлса пӑхрӗ, апатланма сӗнчӗ. Халь эпӗ ирӗклӗ, арӑмпа ачана хамӑр яла, аттесем патне кӑпӑклӑ сӗт ӗҫме кайса ятӑм-ха, смена вӗҫленсенех таксипе ҫӗншупашкаралла чашлататпӑр тесе "ресторанне" кӗртсе лартрӗ, каҫхи апат ҫитерчӗ. Калаҫсан-калаҫсан Вася-Василек ҫемҫе креслӑ ҫинчен аса илчӗ, ӑна туххӑмрах тухса ҫакрӗ, ярӑнма Маринӑна чӗнчӗ.

Ларкӑча вырнаҫнӑ Марина савнийӗ-упӑшкийӗ татса панӑ йӑрӑмлӑ улмана тутанса пӑхрӗ. Ярӑннӑ май вӑл шухӑшӗпе ҫӗтрӗ, хӑйне тӗлӗкри пекех туя пуҫларӗ.

Чуччу пӑявне Вася-Василек мар, Валерка Янташов ҫавӑрса тытнӑ пек, сулса ямассерен ун хырӑмӗ еннелле хура аллине тӑсать пек. Марина сивӗ алла сирсе ярать. Ҫемҫе креслӑ вырӑнне кимӗ пулса тӑчӗ пек. Валерка кӗсмене хашкаса авӑсать. Маринӑна шавласа кӑпӑкланакан шыв сикки патнелле юхтарать. Умри хӑрушлӑха курнипе вӑл упӑшки аллинчи кӗсмене туртса илесшӗн. Валерка тӑрук шӑмӑ пулса тӑрать те ... скелет ӑна ыталама пуҫлать. Хӑранипе вӑл "Вася-Василек!" тесе Карсакӑн аллине ҫатӑрласа тытать, ярӑнать-ярӑнать те, питӗ хуллен юрласа ярать:

Анне мана, асапланса, ма ҫуратрӑн-ши?
Атте мана, хавасланса, ма юратрӑн-ши?
Качча парса, анне мана ма ҫухатрӑн-ши?
Арҫын пулса, атте мана ма ҫӑлмарӑн-ши?

"Салют" керменӗнче савӑннӑ, сад пахчинче чуччу ярӑннӑ, Ҫӗнӗ Шупашкарта арӑм пулнӑ каҫхи пек ҫутӑ. Уйӑхӗ улмуҫҫи айне шапӑртаттарсах тӑкать кӗмӗл пӗрчисене. Штаб-хваттерте телефон чарӑнмасӑр шӑнкӑртатать. Рельссем тӑрӑх куҫакан кран чӑсмак хулӗпе кармакланса вӑрӑммӑн чӑнкӑртатать.

Василий Николаевич прораб пӳртне чупса кӗчӗ. Чарӑна пуҫланӑ чуччуне урипе ҫӗре тапса ярӑнтарса ячӗ те Марина Ларина уйӑх ҫинелле пӑхрӗ, кӗмӗл ҫӑмхана хупласа вӗҫсе анакан тӑрхала плиткӑна курчӗ. "Вира!" тесе улмуҫҫи патнелле стропальщик чупать. Кран каҫса кайса чӑнкӑртатать. Кабининчен Манькка-крановщицӑн тӑрмаланчӑк пуҫӗ курӑнать. Карсак штаб-хваттер алӑкӗнчен тухрӗ те... Хаплатнӑ сасӑ тӗнчене кисретсе ячӗ.

1996, ҫу уйӑхӗ.




Микулай Караваев сĕннипе, Чăваш художникĕсен канашĕ ӳнерçĕсен ушкăнне йĕркелерĕ. Чăваш Крамскойĕпе пĕрле унта: утмăлалла çывхаракан Григорий Саввич Ушкин - çыннăн шалти кăмăлтуйăмне, шухлăх тĕнчине чуна витермелле тарăннăн та ăста сăнласа кăтартма пултаракан маçтăр, Алексей Михайлович Няманов - ят илнĕ график, живописçре ытларах этюд йышши картинăсем ӳкерме юратакан, пултаруллă йĕркелӳçĕ-капăрлатуçă, Лев Викторович Климов - портрет маçтăрĕ, çутçанталăк юрăçи, чăвашăн авалхи йăли-йĕркине юратса паянхи пурнăçпа çыхăнтарма пултаракан...

Ăслă та ăшă кăмăллă, çаврака сăн-питлĕ, çепĕç чĕлхе-çăварлă йăрă Климовпа Микулай тахçанах çывăх паллашнăччĕ. Лев Климович ун чухне Пĕтĕм Союзри выставкăна “Çĕр суранне сиплекен” картина тăратнăччĕ.

Çутçанталăк куççульне симĕс йывăç-курăкпа шăлса типĕтекен шăнăрлă алăллă юмарт чунлă чăваш çыннин сăнарĕ шухăшлаттаракан, ырришĕн, тăван тавралăх илемĕшĕн кĕрешме кирли çинчен аса илтерсе хистекен кĕрешӳçĕ вырăнĕнче пулса тăчĕ. Художникăн пурнăçри гражданла хастарлăхĕ вăйлине Караваев тӳрех ăнланчĕ. Мускавра Лев Викторовичпа иккĕшĕ темиçе каç вăрахчен калаçса ларнăччĕ, пĕрле ĕçлес пирки ĕмĕтленсе шухăшланăччĕ. Халĕ ак çав вăхăт çитрĕ. Климов хаваслансах “чăваш передвижникĕсем” çумне хутшăнчĕ.

Çуралнă тăван Çĕрпӳлĕхе таврăнса ĕçлеме тинех май килчĕ. Ăна тусĕ, Ваçкă Янгорчин, йĕкĕлтесе те, ӳкĕтлесе те, юнаса та, Шишкинăн “Ырашĕнчи” пек урапа çулĕпе, тырă пусси витĕр, ял унечине çитме хистерĕ. Пуйăсран анса пилĕк çухрăм утрĕ те вăл колхоз садне çитрĕ. “Пучах” ушкăнне ыран машинăпа илме каяççĕ. Унччен унăн йĕркелӳ ĕçĕсем тумалла.

Акă выртать халĕ вăл çĕр кавирĕ çинче киленсе. Куç ыратакан пуличчен тӳпене тĕсесе сăнарĕ, тĕнче уçлăхĕнче халиччен курăнман сăнар шырарĕ. Тăчĕ те ура çине ... анатран улмуççи тураттисене

хуллен сире-сире хӑй патнелле хӗрсем юрласа хӑпарнине курчӗ. Пуҫӗсене утмӑлтурат кӑшӑлӗ тӑхӑннӑ. Ҫил ҫӳхе кӗписемпе вылать. Ҫак самантрах вара художник пуҫӗнче пулас картина ҫуралчӗ, сюжетне пуянлатса, хӗрсен сӑнарне вӑйлатса-витӗмлетсе ҫитермелле ҫеҫ. Ҫавӑн пек ӗмӗтпе хавхаланса Караваев тӑван ялӗ еннелле утса кайрӗ. Хӗрсемпе калаҫма та, паллашма та хӑймарӗ. Сисмелле мар вӑрттӑн ҫуралнӑ шухӑш-туйӑм ҫӗкленӗвӗ чун-чӗрене ҫупӑрласа илсен тин вӑл хӑй мӗнле йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнине ӗненчӗ.

Мӗншӗн сулахайрине те, сылтӑм енчине те мар, варринчине иленчӗ-ха унӑн куҫӗ? Кам хушнипе? Кам хӗтӗртнипе? Пӗр кӗтментуман ҫӗртен куҫ шӑрҫине ҫаптарккӑ пек ҫыпҫӑнчӗ кӑлкан ҫӳҫлӗ, кӑвак куҫлӑ, йӑрӑс пӳллӗ пике. Темшӗн унӑн ҫав хӗре ыттисенчен хитререх, асамлӑрах, романтикӑллӑрах кӑтартса парасси килчӗ.

Ялти шкулта хӑйне ӳнер ӑсталӑхӗн сӗмлӗхне ӑша хывма пулӑшнӑ Пашков хӗрӗ ҫакӑ пулнине Микулай каярахпа тин пӗлчӗ.

“Пучах” ушкӑнне сӗт-ҫу ферми ҫумӗнчи пушӑ ҫурта пачӗҫ. Ҫарти пек “полевой мастерскойра” хӗрӳ тапхӑр пуҫланчӗ. “Ҫӗр пики” картинӑн эрешлӗ йӗрӗсем сӑрмакланчӗҫ пир ҫине.

Венерӑпа вӑл садра улмуҫҫи лартнӑ чухне паллашрӗ. Иккӗшӗ ӑнсӑртран пӗр тӗле лекнӗскерсем ятран йывӑҫ та лартрӗҫ. Анчах та вӗсене Венерӑн Хурӑнлӑхри каччи, Малаш Аркашӑн Илюшӗ, ура хурса пычӗ. Хӗр, тулӑхсӑра сирсе хӑварса, чиперкке Микулайпа пӑтранса кайрӗ. Уншӑн Караваев Сӑпайлӑх, Илем турри вырӑнӗнчех. Микулай та ҫӗнӗрен ҫуралнӑ пекех яшланчӗ. Кашни курнӑҫу ӑна хавхалантарса, шухӑш-туйӑм авӑрӗнче пӑтратрӗ.

Мастерской алӑкне уҫса ярсан, ӑна хӑйне хирӗҫ кӗҫ-вӗҫ Венера чупса тухассӑн туйӑнчӗ. Анчах ура сасси пулмарӗ, сӑмсана ҫуллӑ сӑрӑ шӑрши ҫеҫ килсе ҫапрӗ. Ӳкерме пуҫланӑ картина умӗнчи ҫӳхе чаршава сирсен ҫав шӑрша уйри шӑркана ларнӑ ҫӗнӗ тырӑ шӑрши ҫӗнтерсе илнӗ пек туйӑнчӗ. Ун умӗнче - Чӑваш пики, Ҫӗр пики. Шанман чечек. Аха, картинӑра акӑ мӗн ҫитмест иккен-ха: ҫутӑ. Хӗр сӑнне, йӗри-тавралӑха черченнӗн йӑлкӑштарса ҫемҫен кӑтартакан ҫутӑ тӗс ҫитмест. Караваев плащне пукан хыҫне уртса ячӗ те хыпӑнсах киҫтӗк тытрӗ, кирлӗ сӑрӑсем тупса ӗҫе пикенчӗ. Пушшех те ҫутӑрах, уҫӑмлӑрах, илемлӗрех кӑтартас килет-ҫке унӑн хӑйӗн юратӑвне.

Вӑрҫӑра пулнисен сӑнӗсене ӳкернӗ вӑхӑтра Микулай Караваев “Ҫӗр пики” ҫумне ытлах ҫывхараймарӗ, чӗрӗ пикипе тӗл пулса калаҫкаланипех ӑшчикне вӗрилентерчӗ. Чунӗ пурпӗрех пуҫланӑ ытарлӑ ӗҫ патнеллех туртӑнчӗ.

Акӑ вӑл, фронтовиксенчен уйрӑлса, тепӗр картина патне утса пычӗ, ҫӳхе карра кӑшт сирчӗ те... ун умне тӑп-тӑп йӑрӑс пӳллӗ, савӑнӑҫлӑ сӑн-питлӗ Венера тухса тӑчӗ. Хӗр сап-сарӑ тулӑ пуссинче хӗвел тӳпенелле йӑлкӑшса хӑпарнине сӑнать. Сулахай аллинче пиҫсе ҫитнӗ шултра тулӑ пучахӗ. Сылтӑммине пилӗкне тытнӑ. Вӑрӑм ҫивӗтне ҫил чӳхентерсе вӑркӑштарать. Тӑпӑлкка чӗччисем сывлӑша сурса ҫул уҫаҫҫӗ тейӗн. Утмӑл турат чечекӗ пек кӑвак куҫӗсем тем-

ле ытарлăн та ăшшăн тинкерсе пăхаççĕ. Венерăн тӳрĕ сăмси пĕтĕм пит-куçа илĕртӳллĕ илем кӳрет. Кăшт хулăнрах тути çемçен ейĕлнипе вĕтĕ шăлĕсем чăлт шуррăн курăнаççĕ. Хĕр сăнарĕнчи темле сăмахпа каласа пама та пĕлмелле мар асамлăх Микулая авалхи грексен халапĕнчи тинĕс кăпăкĕнчен пулса кайнă Венера-Афродитăна та, Леонардо да Винчин "Джокондине" те аса илтерет. Унра вăл, Пашков хĕрĕнче, вĕри туйăмлă юрату ăшшине те, ытарма çук илĕртӳллĕ илеме те, пурнăçăн черчен савăнăçĕпе хăватлă таппине те – пурне те пĕрле курать.

Мĕншĕн-ха ăна çак сăнар çавнашкалах пăлхатса ячĕ? Мĕншĕн вăл Венерăра çеç тупрĕ-ха çав уйăрайми пĕрпĕтĕм те тĕлĕнмелле килĕшӳллĕ ырă енсене? Пĕр хĕр те, унăн чи малтанхи юратăвĕ Эмма Старикова та, ун чунĕнче çакăн пек тулса тăкăнакан ачаш туйăмсем вăратайманччĕ. Венерăна пĕрре курсах ăшра унччен нихçан та пулман вăрану туйăмĕн вĕри çулăмĕ пырса çапăннăччĕ.

Пĕлме çук, ыттисемшĕн, тен, Венера та ялти çамрăк хĕрсенчен нимпех те уйрăлсах тăмасть пулĕ. Тен, уншăн, Микулайшăн çеç вăл, кăмăлĕпе те, кĕлеткипе те, куллипе те, пичĕ-куçĕпе те никампа-нимпе танлаштарма çук чи илемлĕ те хӳхĕм хĕр пулĕ. Караваевшăн вăл – чăн-чăн çĕр пики. Ахальтен мар картинине те ӳкерме пуçласанах "Çĕр пики" тесе ят панăччĕ.

Çапах та мĕнле шухăш вылять-ши хĕр пуçĕнче? Камшăн вăрттăн та ачашшăн кăртлата-кăртлата тапать-ши унăн канăçсăр чĕри? Ăçтан пĕлен-ха, тен, ахальтен çеç çӳремест-ши Венера Микулайпа? Чунĕпе çав-çавах Хурăнлăхри Илюш Малашова парăнман-ши вăл?

Караваев Малаш Аркашне те, ун ывăлне те питĕ тăрăшса ӳкерчĕ. Чылай выставкăра пулнă "Механизаторсем" картинăра вăл хаваслă та хастар сăнлă Илюша ушкăн варринче малти вырăнта сăнарласа кăтартнăччĕ.

"Çĕр пикине" майĕпен çеç çӳхе чаршавпа карса хурса, Микулай тĕкĕр умне пырса тăчĕ. Тĕкĕр тĕрĕссине калать, теççĕ те, эппин мĕнлерех çын-ши Микулай, хăйне Илюшпа юнашар тăратас пулсассăн? Малашов çамрăк, вăйлă, юнĕ вĕресе тăракан йĕкĕт. Микулай хăй шучĕпе те – "мучи". Вăл куçĕ айĕнчи йĕрсене, кăшт тăртанчăкрах питçăмартийĕсене, тăваткал сухалне, тăнлаври кăвак çӳç пайăркисене тĕрткелесе илчĕ. Çамки тăрринчен хыçалалла тарса пыракан сайралнă çӳçне ывăçĕпе якатрĕ. "Хам çĕр пики вырранне хуракан хĕр кампа танлаштарать-ши мана? Мĕнлерех сăнар вылять-ши ун куçĕ умĕнче? Чи килĕштернĕ, юратнă çын тесех шухăшлать-ши вăл? Хăйĕн черчен çамрăклăхне, хĕрарăм кун- çулĕн пуласлăхне шанса пама хăрамасть-ши ват хусаха?"

Çак шухăшпа Микулай пӳлĕмĕн тепĕр пуçнелле утса кайрĕ, вăрăм сĕтел çине тайăнтарнă картина умĕнче чарăнчĕ. Сухаллă янахне сулахай ывăç тупанĕпе хупласа, чылайччен сăнаса тăчĕ вăл хăй мĕн ӳкернине.

Умра тулă кашласа ларать. Пучах тинĕсĕ. Ял урамĕ курăнать.

* * *

Культура керменӗн иккӗмӗш хутӗнче уҫӑ чӳречерен Ванька Костин сасси илтӗнсе кайрӗ:

— Салам, Микулай! Кӗрсе тухмастӑн-и?! — кӑшкӑрчӗ вӑл пуҫне кӑларса.

Караваев та аллипе сулса саламларӗ, йӑл кулса пуҫ сӗлтрӗ те кӗҫех алӑка уҫса малти аслӑ пӳлӗме иртрӗ, хыпалансах ҫӳлти хута хӑпарчӗ. Сыпӑклӑ икӗ пусмара — вуникшер картлашка, хушшине те шутласан, шӑпах ҫирӗм пиллӗк пулать. Чӗлхе ҫине тӳрех ҫыпҫӑнчӗ ҫав цифра, утнӑ май марш кӗвви пек илтӗне-илтӗне каять: ҫирӗм пиллӗк! ҫирӗм пиллӗк! "Тӗлӗнмелле, миҫе хутчен пулман пулӗ кунта, анчах нихҫан та картлашка шутламанччӗ. Мӗне пӗлтерчӗ-ха вара ку? А-а, тинех пуҫа килсе кӗчӗ. Лӑпах кунтаччӗ-ҫке, ҫӳлти хутра, вӑл Нямановпа пӗрле илемлетнӗ "венчете тӑмалли тата ача ячӗ ҫыртармалли» пӳлӗм. Ялти ҫамрӑксен уявӗ хыҫҫӑн тарӑхса кайнӑ Илюш Малашов ҫаплах каланӑччӗ: "Эсир те, Каравай мучи, тен, тепӗр ҫирӗм пилӗк ҫултан ҫак пӳлӗме мӑшӑрланма килӗр, ҫапах та тархасшӑн халлӗхе Венерӑпа иксӗмӗре пӗрлешме ан кансӗрлӗр!" Ҫакӑ пӑтранать мар-и пуҫра? Хӑй те ҫемье тӑваймасть те, ҫапах Илюш ӑна та чӗрӗк ӗмӗртен тин авлантарасшӑн иккен-ха. Хӑ, урай чӗриклетнӗ май янӑрать те янӑрать ҫав йӑлӑхтармӑш сасӑ: ҫирӗм пиллӗк, ҫирӗм пиллӗк!..

Библиотекӑра Костин пӗчченех-мӗн. Вӑл юлташне хирӗҫ тӑрса тухрӗ те хавасланса ун аллине тытса чӑмӑртарӗ.

— Автобусран тухнӑ чухнех асӑрхарӑм. Нивушлӗ кунта кӗмесӗрех киле кайӗ? - тесе шутларӑм, - майӗпен калаҫма пуҫларӗ вӑл. - Пӗлетӗн-и кунта эсӗ мӗн ҫырнӑ? - ҫавӑнтах хаҫата саркаласа кӑтартрӗ Костин. - Итле, питӗ аван каланӑ: "Ҫӗр ҫимӗҫне тулӑх та техӗмлӗ ӳстерме чуна хавхалантаракан юрӑ-ташӑ та, интереслӗ кӗнеке те, илемлӗ живопись те кирлӗ. Ҫавӑнпа художниксен хӑйсен картинисене мастерскойсенчен халӑх хушшине ытларах илсе тухмалла, анлӑрах кӑтартмалла вӗсене, ҫав картинӑсенчен галерейӑсем уҫмалла. Этем ҫӑкӑрпа ҫеҫ тутӑ мар. Илемлӗх тӗнчипе ҫывӑххӑнрах паллашса, унӑн татах та лайӑхран-лайӑх ӗҫлес килтӗр. Ҫак тӗллевшӗн вӑй хурса тӑрӑшатпӑр та эпир "Шурӑмпуҫ" колхозра..."

— Ҫын ытлашши пакӑлтатса кайсан, суйма пуҫлать, теҫҫӗ, - Костин аллинчи хаҫата лутӑркаса тытрӗ Караваев. — Пире те ытлашши сӑмах ҫаптарма вӗрентеҫҫӗ ку корреспондентсем. Тапӑнчӗҫ те мана иртнӗ эрнере, хирӗҫлеме хӑяймарӑм, ҫырса патӑм вара художниксем Апат-ҫимӗҫ программине пурнӑҫлас ӗҫе мӗнле хутшӑнни ҫинчен. Хутшӑнма хутшӑнатпӑр-ха та, тепӗр чухне ытлашширех шавласа каятпӑр ҫав. Шутласан, халлӗхе эпир ҫӑкӑрпа чейлӗх те усӑ тӑвайман-ха халӑха. Ой, нумай, питӗ нумай сӑрламалла пулать пирӗн, Ванька. Фронтовиксене, ӗҫ паттӑрӗсене май килнӗ таран ытларах пир ҫине ӳкермелле, пуҫланӑ картинӑсене те вӗҫлемелле. Мӗн кӑна ҫук пулӗ кунта! Тӗп ӗҫӗ вара — ял ҫыннисене ҫут тӗнчен, пурнӑҫӑн илемлӗ кӗввине чун-чӗре ӑшшипе туйма вӗрен-

тесси...

Костин ӑна туртсах хӑйпе юнашар лартрӗ, аллинчи хаҫачӗпе сулкаласа калаҫрӗ:

- Ытлашши ан чухӑнлан-ха, Микулай. Пурсӑмӑр та сирӗн пек ӗҫлесен, колхоз тахҫанах пӗлӗте ҫити ҫӗкленсе каймалла. Сӳрӗкрех-ха халь эпир. Пӗр кун тар кӑларатпӑр та, эрнипе ҫӑвар карса ҫӳретпӗр. Пӗлсе тӑратӑп: эсир хӑвӑр сӑмаха тытатӑрах. Ҫырса пыратӑп-ха эпӗ кунта. Ав, пӑх-ха ҫавӑнта. - Библиотека хуҫи художника сылтӑм стена еннелле тӗллесе кӑтартрӗ.

Караваев стенд ҫывӑхнерех пычӗ. Унта пысӑк саспаллисемпе: "Чӑваш художникӗсен ушкӑнӗпе "Шурӑмпуҫ" колхоз ӗҫченӗсен ӑмӑртӑвӗ", тесе ҫырса хунӑ. Килӗшӳре палӑртнӑ пунктсем мӗнле пурнӑҫланса пынине те йӗркипе паллӑ тунӑ. "Пучах" ушкӑнӑн ҫӗнӗ ҫулччен нумай ӳкермелле-ха, тата картинӑсен галерейи валли те ҫывӑх вӑхӑтрах пӳлӗм илемлетсе хатӗрлемелле.

- Эс мана "Третьяковка" пирки аса илтересшӗн пултӑн вӗт, Ванька, ҫапла-и? - чеен йӑл кулчӗ Караваев.

* * *

Венера тӗлӗкпе аташса тата темле йывӑр канлӗх туйӑмӗ канӑҫсӑрлантарнипе ыйхӑран вӑранса кайрӗ. Юрату утравӗнче Илюш мазутпа вараланнӑ хура аллине хурӑнсем хыҫӗнчен ун кӗлетки патнелле тӑсать пек. Куҫа уҫсан та хӑрани ҫийӗнчех иртмерӗ. Микулай аса килчӗ. Тантӑшӗ калани хӑлхара илтӗнчӗ: "Эх, ӑнланса ҫитме ҫук асамлӑ, пытанчӑк туйӑм ытамне лекрӗм. Хӑюллӑ, йӗркеллӗ качча юратсан, чӑтаймарӑм, чарӑнаймарӑм, вӑл авланас тесе сӑмах пуҫарсанах, - килӗшрӗм. Туй хыҫҫӑн халиччен курман-пӗлмен тӗнче алӑкӗнчен кӗтӗм те, тинех пурнӑҫ канлӗхӗ ӑҫта пытаннине ӑнлантӑм".

Ҫав асамлӑ туйӑмах ӗнтӗ унӑн та. "Эх, ҫумра пулсанччӗ халь эс, Микулай, сан куҫунтан тӳпери ҫӑлтӑр ҫине пӑхнӑ пек пӑхӑттӑм. Анне мана сан валли кӑна ҫуратнӑ, саншӑн ҫеҫ пӑхса ӳстернӗ, тейӗттӗм".Хӗр ҫӳхе утияла сирсе кӑштах вырткаларӗ те, урисене пӗрлештерсе, урайне анса тӑчӗ.

Хӗвел тухнӑ. Амӑшӗ ӗне суса кӗчӗ, витрине урайне лартрӗ те, икӗ чӳрече хушшинчи тӗкӗр умне пырса, ҫӳҫне-пуҫне майларӗ, хӗрӗ еннелле ҫаврӑнса, ӑна ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илчӗ:

- Кала-ха, - вырӑн майлама пуҫланӑ хӗрӗ ҫине тепре пӑхса илсе ыйтрӗ Укҫине, - эсӗ Ҫӗрпӳлӗхри Каравай Микулайне-и е ялти Малаш Аркашӗн ывӑлне ытларах юрататӑн?

Минтерсене кӑпӑшлатса пӗр-пӗрин ҫине майлаштарса хунӑ хыҫҫӑн Венера вӗсене ҫивиттипе витрӗ те тӗкӗр ҫине пӑхса илчӗ. Сахал ҫывӑрнӑран-ши е юлашки вӑхӑтра ӑш вӑркаса ҫӳренӗрен сӑнӗ улшӑннӑ унӑн. Тунсӑх пуснӑ ҫын пек курӑнать. "Амӑшне мӗн калас ӗнтӗ унӑн? Ӗнер те ҫавнах ыйтнӑччӗ вӑл. Пӗлтермеллех пуль", - ҫак шухӑшпа вӑл аллисене амӑшӗн хулпуҫҫийӗсем ҫине хучӗ.

- Тем тумалла ӗнтӗ, анне. Илюш та пуҫран тухса пӗтмест, Микулай та пуҫа кӗрсе ҫитмест.

- Нумай кӗтетӗн, хӗрӗм. Тиркекене тирӗк тӗпӗ, тенӗ пек ан пултӑрччӗ. Ку хӑть, Илюшӗ, ҫапах пӗлекен ача, ялтискер, пурнӑҫ тумалли ҫынах. Аҫу та хирӗҫ пулас ҫук вӑл хӗр ыйтсан. Ку, Микулайӗ, темле ҫав?..

Венера калаҫнӑ хушӑрах ҫӑвӑнчӗ, тумланчӗ, тӗкӗр умне тӑрса майланчӗ. Микулая амӑшӗ аса илсен ун еннелле вӑртах ҫаврӑнса, ним пытармасӑр каларӗ:

- Илюшпа танлаштарсан, Микулай пит вашават чунлӑ ҫын. Унпа калаҫма та, юнашар ларма та, ташлама та, утса ҫӳреме те ҫав тери кӑмӑллӑ. Унпа пӗрле чухне эпӗ хама вӗҫнӗ пекех туятӑп. Ӑна тӗл пулсан, пурин ҫинчен те манатӑп. Сан пулнӑ-и, анне ун пекки?

Укҫине каллех тӗкӗр ҫине пӑхса илчӗ, питне аллипе сӗртӗнсе вӑрттӑн кулчӗ те:

- Пулнӑ хӗрӗм, пулнӑ, - терӗ пуҫне чиксе. - Аҫуна курсан эпӗ те санашкалах шутсӑр хӗпӗртесе кайнӑччӗ. Пирӗн пата Нурӑс хыҫӗнчи Мачамӑша турӑ ӑйӑр кӳлнӗ тӑрантаспа кӗрлеттерсе ҫитрӗ те... Эх! .. Хӑй капӑр тумланнӑ, чипер. Аккордеон епле калать тата. Пӗрре курсах юратса пӑрахрӑм пулмалла. Ларса килтӗм вара. Аттепе анне те хирӗ ҫ пулмарӗҫ. Хамӑн телейӗме тупрӑм эп: вунӑ ывӑлхӗрӗм халӗ эсир манӑн. Эс ытла пит нумай шутлан. Атя, кулачпа сӗт ҫи. Аҫу паҫӑрах машинипе мастерскоя кайрӗ. Унӑн пӗрмай васкавлӑ ӗҫ.

Кухньӑна кӗрсе кашӑк-чашӑк шакӑртаттарнӑ хушӑра хӗрӗ амӑшне пушшех пӑлхантарса пӑрахрӗ.

- Микулая та, Илюша та качча тухмастӑп. Килтех пурӑнатӑп, сирӗнпех.

Апатне ҫисе Венера урама тухрӗ. Хӗвел йӑмрасен ҫӑра тураттисем хушшипе ӑшшӑн кулса пӑхать. Типсе ҫитмен ҫумӑр кӳленчӗкӗсенчен пӑрӑнса, вӑл пушмакне вараламасӑр тротуар ҫине кӗчӗ. Хыҫалта мотоцикл кӗрлени илтӗнчӗ. Хӗр тӗлне ҫитсен Илюш виҫӗ хутчен ҫухӑртрӗ те чарӑнса тӑчӗ.

- Кил, лартса каятӑп? - аллипе сулчӗ вӑл.

- Ой, хӑратӑп.

- Манран-и?

- “Урхамахунтан” та, санран та. Пӗлтӗр ҫавӑрса ҫапни те ҫитет. Чӗркуҫҫиинчи шӑйрӑк халӗ те палӑрать.

- Чӑнах-и? - кула-кулах аллипе хӗр уринчен сӗртӗнсе илчӗ вӑл.

Венера ӑна аяккалла тӗртсе ячӗ:

- Ытла сӗмсӗрленен, Илюш. Пӗртте чипер тытмастӑн хӑвна.

- Юрӗ-ҫке, юрӗ, шӑрчӑк курӑк. Ҫилленекен хӗрсене ҫил вӗҫтерсе кайнӑ, тет. Лар, ҫилпе ӑмӑртар.

Венера каччӑ хыҫне вырнаҫса ларчӗ. Илюш пурпӗрех хӑйӗнне турӗ, тапраннӑ самантра чалӑшса хӗрӗн уҫӑлнӑ пӗҫҫинчен кӑшт та пулин сӗртӗнсе илчӗ-илчех.

Ку мотоцикла Илюша колхоз парнелерӗ. Унран уйрӑлмасть: чупать, ҫӗмӗрет, юсать. Халӗ те ларкӑч тыткӑчӗн аварӗ татӑк. Ҫавӑнпа хӗр “ямшӑка” пилӗкӗнчен ҫавӑрса тытрӗ. Хӑҫантанпа ытала-

ман ăна Венера. Тĕл пуласшăн та мар, тарса кăна çӳрет. Караваев яла килсенех, унпа курнăçма чупать. Илюш тарăхать, вĕчĕрхенет, иккĕшне те тем туса тăкма хатĕр. Акă паян тинех телей пулчĕ, ĕнтĕ юратнă хĕрĕ хыçрах, вĕри кĕлеткипе каччa çунтарса пырать. Парка çитсен хĕр çĕре сиксе анчĕ.

- Тавтапуç, Илюш.

Йĕкĕт ăна тытса чарчĕ.

- Ман санпа калаçмалли пур.

- Итлетĕп.

- Мĕн тупнă эс çав Микулай де Каравай çумĕнче? Ват хусахпа çӳресе намăс куратăн.

- Çынлăх, ăшă кăмăл, илем.

- Илем? Сухал ăшĕнчи рак пек хĕрлĕ тута, симĕс куç... Ан ухмахлан. Нивушлĕ эпĕ унран япăх?

Венера каччăн çивĕч куçĕнчен пăхса каларĕ:

- Пустуй ан хурла çынна. Вăл айăплă мар. Сăпайлăх – чи капăр тумтир, тенĕ халăхра. Хăвна эсĕ Караваев пек чипер, йĕркеллĕ тытас пулсан, – сана темле чаплă хĕр те юратса каччa пырĕ.

Диспетчер пунктĕнчен тухсан, Пашкова пĕр кана йĕтем çинче тырă тасатакансемпе пĕрле ĕçлерĕ. Хатĕрлев кантурĕнчен килнĕ автомашинăсене тиесе ярсан, хĕр ватă Караваевпа калаçса пăхрĕ.

Микулай аслашшĕпе пуплени хĕр чĕрине хускатрĕ. Ĕçре унăн пурте пур: уй-хир цехĕ, чек йĕрки, бригада подрячĕ, хуçалăх расчечĕ, лайăх пусă çаврăнăшĕ, уйсен агропаспорчĕсем... пучах çĕнĕлле, палăртнă тăрăх, тулать. Колхоз пуять... Пурнăçра çеç нимĕнле çĕнĕлĕх те çук. Кашни уйăнни пек пулсанччĕ юрату паспорчĕ, вара ун çине йĕэркипе çырса хумалла: хăçан тĕл пулмаллине те, кама мĕн каламаллине те, туй тумаллине те, епле пурăнса телей курмаллине те...

* * *

Караваев ертсе пыракан художниксен "Пучах" ушкăнĕ аслă Çĕнтерӳ хĕрĕх çул тултарнă тĕле пысăк парне хатĕрлерĕ. Халăх мĕнле хак парĕ-ши ăна? Юлашки кунсенче Микулай пĕрехмай çакăн çинчен шухăшларĕ. Юлташĕсем те хытă хумханчĕç.

Ирпе май хĕвелĕ тавранa ăшшăн çупăрларĕ. Культура керменĕ умне халăх йышлă пухăнчĕ. Хăнасем те çитрĕç. Кĕçех митинг пуçланчĕ.

Тухса калаçакансене итленĕ май Караваев вăрçă ветеранĕсене аса илчĕ. Вĕсем ĕнтĕ кунтах. Сăнĕсене ӳкернĕ вăхăтра вăл хăй те йывăр çапăçусен çулĕсемпе вĕсемпе пĕрлех утса тухнă пек туйрĕ. Çĕр салтак, çĕр пурнăç, çĕр сăнар тухрĕ художниксен алли витĕр.

Колхоз председателĕ Андреев пурне те пĕчĕк зала чĕнчĕ. Сарлака та çӳлĕ стена çинчен паттăрсем ентешле туйăмпа кăмăллăн пăхрĕç. Тăватă рете вырнаçтарнă вĕсене. Пурин те кăкăр тулли орден-медаль. "Пирĕн ĕç тĕрĕс – эпир çĕнтертĕмĕр" тесе çырнин икĕ енче те – Георги лентисем.

- Эсир, Николай Прокопьевич, хăвăр та пĕтĕм ушкăнĕпех паттăрсем пулса тăтăр, - мухтамасăр чăтаймарĕ Янгорчин, район пуçлăхĕ. - Мухтавлă çынсен кун-çулне сăнарлă искусство чĕлхипе кăтартма пултарни сирĕншĕн те çĕнтерӳ. Ку залра – паттăрлăх! Ăна хамăрăн "Георги залĕ" тесен те йăнăш пулмĕ.

* * *

Юлашки вăхăтра художник "Çĕр пикипе" уйрăмах хавхаланса ĕçлерĕ. Сывлăшалла çунатлăн çĕкленнĕ пек курăнакан Венера вăйлă тырпул ӳстерекен çĕрпе, тулă пуссипе, хĕвелпе, тавралăхпа пĕрле чĕрĕлекен çутçанталăкăн уйрăлми пайĕ пулса тăнă. Пĕтĕмĕшле çыхăнупа шайлашу картинăна пушшех те вăйлатать. Ăна курсан, хăлхана текерлĕк сасси килсе кĕрет, сăмсана тулли пучахлă çĕнĕ тырă шăрши кăтăклать, пит-куçа Туçи ращи енчен вĕрекен уçă çил çупăрлать, чун-чĕре хаваслăхпа тулать, юрлас килсе каять. Ирĕксĕрех вара Ванька Костинăн çепĕççĕн те савăнăçлăн янăракан кĕвви аса килет. Микулай сăрăсем хутăштарса лăш курмасăр киçтĕкĕпе сăрлать, ывăннине, хырăм выçнине туймасть. Темиçе каç мастерскойрах çывăрчĕ. Çутăпа тĕттĕм вырăнсен ылмашăвĕ ĕнтĕ "Джонкондăри" пекех ытарайми илемлĕ, асамлăн курăнать. Леонардо да Винчин тĕтрелĕх меслечĕпе усă курса вăл "Çĕр пикине» хитрелĕх чунĕ кĕртрĕ. Хĕр сăнарĕ уншăн чĕрĕ пекех. Раскладушка çинче Штраус вальсĕсене итлесе выртнă хушăра, вăл шухăш-ĕмĕчĕпе Хурăнлăха çитрĕ, ташлакан çепĕç кĕвĕ ытамĕнче хăйĕн пикине шырарĕ.

Кĕçех Мускавра "Çĕр тата çынсем" выставка уçăлмалла. Ун валли Караваев "Çĕр пикине" суйласа илчĕ.

Выставка уçăлнă кун Караваевшăн пысăк уяв вырăннех пулчĕ. Кунта вăл Суриков институтĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташĕсемпе, юратнă профессорĕпе тĕл пулса кăмăл туличчен калаçрĕ. Старикова пуринчен ытла "Çĕр пики" килĕшрĕ.

- Чăннипех хăвăн тĕнчӳне уçрăн эсĕ. Леонардо да Винчин "Джокондинче" эпĕ киçтĕк йĕрĕ те курманччĕ. Ку картина та çавăн пекех яп-яка питлĕ. Ӳкерчĕк мар – чăн чĕрĕ çын. Тыткăнлакан, кăмăла уçса яракан, хавхалантарса çĕклентерекен сăнар. Кăвак тĕспе калама çук ăста усă курнă. Çутăпа тĕттĕм вырăнсен ылмашăвĕ Леонардăнни майлах. Хĕвел куллиллĕ куçĕсенчи вăрттăнлăх "Джокондăра" та, "Çĕр пикинче" те ăсран ярать. Кулли те пĕрешкел вĕсен – хăйне майлă ытарлă кулă. Сăнĕ те вĕçĕмсĕр çĕнелсе хитреленнĕн туйăнать. Хумхануллă, ăслă, тарăн шухăшлă чун пытанса тăрать ытарлă чăваш хĕрĕнче. Ах, куçĕсем епле чĕрĕ – ытарайми илемлĕ куçсем! Чăнах та чун тĕкĕрех. Çынна ӳкерме, унăн чун ăнлавне палăртма ăста вĕреннĕ. Ку ĕçпе эсĕ Пластовсен, Ткачевсен, Шиловсен ретне тăма пултартăн, - мухтамасăр чăтаймарĕ Викентий Матвеевич.

Микулай куншăн кăштах аванмарланчĕ, çапах та çак хушăрах хăйĕн "Джоконди" çине те вăрттăн пăха-пăха илчĕ. "Тен, чăнни-

нех калать вăл. Профессор пустуй çĕртен ырласа калаçнине нихçан та илтменччĕ. Куракансем те, авă, "Çĕр пики" умĕнче вăрах тытă-нса тăраççĕ. Темле туртакан вăй пур та пулĕ".

Караваев Пĕтĕм Союзри тата Раççейри художество выставки-сенче сюжетлă-тематикăллă ÿкерчĕксем темиçе хут та кăтартма ĕлкĕрчĕ, анчах "Çĕр пикине" çитекенни пулмарĕ. Ку, паллах, унăн пултарулăхĕнчи çĕнĕ утăм, паллă çитĕнÿ.

Çитĕнĕвĕ çук мар ĕнтĕ, пур. Çапах та пурнăçра унăн хăйне "турă панине" халăха кăтартса ĕнентермешкĕн самаях тертлен-ме тиврĕ. Хисепе тивĕç пулмашкăн нумай вăхăт,канăçсăр ĕç, чăтăмлăх кирлĕ иккен. Шухăшпала, ах, çав тери чаплăн курăнас килет тепĕр чухне. Çук çав, хăв темле çунатланса ĕмĕтленсен те, халăх куçĕ сана хăй вăхăчĕсĕр асăрхамасть, халăх хакĕ сан патна хăй вăхăтĕнче кăна çитет. Вăхăт сыпăкĕ урлă сиксе каçма та, вĕç-се иртме те май çук. Ун урлă санăн хăвăннах çирĕп кĕпер хыв-малла. Çав кĕпер урлă каçсан тин пĕтĕм халăх хисепĕ хирĕç хăйех чупса килет-мĕн, сана ыталаса илет, çÿлелле çĕклет, ывăтать. Ан ÿк çеç. Ÿксен – аялалла кĕмсĕртететĕн, мăнаçлăх тĕнчине лекетĕн, мăнкăмăллăх чури пулса юлатăн. Унашкал каппайчăка халăх сумламасть. Авă епле çирĕп пулмалла Мухтав тĕнчин уçлă-хĕнче художникăн та. Çапла, хисеп патне каçмалли çирĕп кĕпе-ре хывиччен Микулайăн пайтах нушаланмалла пулчĕ. Вăхăт сыпăкĕ урлă çирĕп кĕпер хывса вăл Мăн телей патне каçрĕ. Са-вăнăçлă туять халĕ.

* * *

Картина галерейи майĕпен майлашăнса çитет те ĕнтĕ. Пÿлĕме кĕрсенех, сулахай енче, тăвата рете вырнаçтарнă çĕр салтакăн сăнĕсем чĕррĕн курăнса каяççĕ. Вăрçă хыççăн вилнисен портречĕ-сем те вĕсем çумĕнчех. Сылтăм енче – хисеплĕ колхозниксем.

Художниксен "Пучах" ушкăнĕ Çĕрпÿлĕхри тĕп ĕçĕсене вĕçлесе пырать, ăмăртăва пĕтĕмлетме те пулать. Хĕл кунĕсенчен пĕринче колхоз председателĕ Андреев Караваева:

- Пучахпа киçтĕк уявĕ иртттерер пуль, - терĕ. - Эсир пирĕн хал-ăха илемлĕх тĕнчин алăкĕпе чÿречине касса патăр, хитрелĕх енне пăхма пулăшрăр, вĕрентрĕр. Ял пурнăçĕ халĕ сирĕнсĕр чухăн пек туйăнать. Çак çулсенче сире çынсем хăнăхрĕç, сирĕнпе туслашрĕç, çывăхланчĕç. Мĕн чухлĕ картина парнелерĕç. Нимле хакпа виçме çук ăна. Эсир – пирĕн чи сумлă çынсем.

Çĕр ĕçченĕсемпе искусство ăстисен пĕрлехи пухăвне тĕплĕн хатĕрленчĕç.

Пухăва ертсе пыракан Иванов сăмах парсан, колхоз председа-телĕ Андреев ура çине тăрса васкамасăр калаçма тытăнчĕ:

- Куратăр ĕнтĕ, юлташсем, иртнĕ пилĕкçуллăхра начарах ĕçле-мерĕмĕр эпир, патшалăх умĕнче нихăш енĕпе те парăмра юлмарăмăр. Мускаври Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен выставкин Хисеп хăми çине те лекме пултартăмăр. Художниксем те Пĕтĕм Сюзри, Раççейри, зонăри выставкăсене хутшăнчĕç, хăйсен паха ĕçĕсемпе нумай-ну-

май вăрçăпа ĕç паттăрне вилĕмсĕр турĕç. Çакăн пек туслă çыхăну пирĕн ял историйĕнче пулманччĕ-ха. Чăвашсен сăнарлă искусство ăстисем çак пуян та савăк пурнăçшăн пирĕнпе пĕрлех алла-аллăн кĕрешрĕç. Пирĕн çитĕнӳсенче вĕсен пайĕ те пĕчĕк темелле мар. Вĕсем пире хавхалантарса пычĕç, эпир – вĕсене. Çавнашкал пĕр туслă кăшăлра пирĕн пурнăç илемĕ. Пĕр эртел çыннисем пулса тăтăмăр. Çавăнпа "Пучах" ушкăнри художниксене "Хисеплĕ колхозник" ят парса чыс тăвасшăн. Эсир мĕнле шухăшлатăр кун пирки?

Залри халăх шавлăн алă çупса ячĕ. Сасăлаттарнă хыççăн Юрий Ильич кашни художнике черетпе хĕрлĕ хăю çакса ячĕ те хушса хучĕ:

- Колхозра тăвата бригада. Пирĕн шутпа пиллĕкмĕш те пур халĕ. Вăл – художниксен "Пучахĕ". Хамăрăн хисеплĕ колхозниксем мĕнле çитĕнӳ тунине пурсăмăр та куратпăр. Çак ăмăрту кĕнеки çине пиллĕкмĕш бригадăна "пиллĕк» паллă лартса парас килет. Çавна çирĕплетсе сирĕн ятпа алă пусатăп.

Çынсем каллех хыттăн алă çупрĕç.

Караваев ял халăхĕ умĕнче "Пучах" отчетне туса пачĕ.

- Хисеплĕ хамăрьялсем! – терĕ вăл. – Эсир пире хăвăр пата тăванла ăшшăн йышăнса хăвăр чĕресене уçса патăр, ырă кăмăлăра кăтартрăр. Пире искусство тӳпинелле вĕçме хавхалантарса пытăр. Сирĕнпе пĕрле пулнипе эпир те çак пуян çĕр çинче çирĕп тăратпăр, çав çĕртен, çĕр çыннинчен сиплĕ вăй илетпĕр. Поэтсем пек каласан, чун юрлать сирĕн хушăра. Тăрăшса ĕçлес, лайăхран-лайăх ӳкерес килет. Пирĕн шухăшсем татах та анлă, малашне те вĕсене сирĕнпе пĕрле килĕшӳллĕн пурнăçа кĕртсе пырăпăр. Хастар ĕçĕршĕн эпир те сире хамăр енчен "пиллĕк" паллă лартма калаçса килĕшрĕмĕр. Илемлĕх тĕнчиничи телейшĕн "Хисеплĕ колхохзник" ята яланах çӳлте тытма пулатпăр. – Çапла вĕçлерĕ Микулай хăйĕн кĕске сăмахне.

Пуху пĕтсен, Каравай Хĕветучĕ художниксене алă тыта-тыта мухтарĕ:

- Вĕт, ачасем, паян эпир илемпе илемлĕх пирки нумай юмахларăмăр. Тĕрĕсех, илемлĕх те çыннăн хăвачĕ. Çак хăват та çĕр сĕткенĕпе ӳсет. Эсĕр çав сĕткене илме, ун вăйĕпе чапланма пултарнăшăн эпĕ темрен те хытă савăнатăп. Тарăн тымар ятăр эсĕр пирĕн çĕр çине. Çав тымар татах сарăлса паркалантăр. Эппин, пиллĕкмĕш бригада çимĕçĕ тата тухăçлăрах çитĕнтĕр. Чăн-чăн Илем кунĕ паян. Вăл хамăр ял халăхĕн Илем кунĕ пултăр. Кашни чăваш ялĕн пултăрччĕ пирĕнни пек Илем кунĕ.

* * *

Тантăшĕсем качча тухнă хыççăн Венерăн та çемьеллĕ, ачапăчаллă пулас туйăмĕ вăйланчĕ. Сисет-ха, Малаш Илюшĕ те, Каравай Микулайĕ те уншăн вилсе каяççĕ. Унăн вара иккĕшĕнчен пĕрне татăклă сăмах каламалла.

Илюш кăнттамлăхĕшĕн тарăхатчĕ-ха вăл. Микулай сăпайлăхĕшĕн савăнатчĕ. Халĕ акă ăна Малашовах ытларах килĕшнĕ пек.

Караваев ăна темшĕн юмахри сăнар майлăрах туйăнакан пулчĕ. Ахаль те вĕсем сайра-хутра кăна тĕл пулаççĕ те... Ытла ерçмен, пушă вăхăтсăр çын-çке вăл. Яланах пĕрле кино кайса курма та, ташлама-юрлама та, каçсерен уçăлса çӳреме те май килмест унпа. Илюша акă кашни кун ăçта та пулин куратăнах. Çитменнине тата вăл, Венера хăйне сивленĕ пулин те, урăх хĕр тупмарĕ. Микулай мĕншĕн ку таранччен те пĕччен-ха? Кун пирки те ыйтман. Хăйĕнчен чылай аслăрах хусахпа пуплеме те, йăпанма та темле аванах мар пек. Илюшпа вĕсем хушăран тĕрткелешсе те илме пултараççĕ пулсан, хĕр Караваевпа пĕрле чухне хăйне хăюсăр тытать. Улмуççи лартнă вăхăтра çуралнă юратууншăн темле сывлăшра çакăнса тăракан ĕмĕтри юрату евĕр туйăнать. Халĕ те çывăхланса, чĕрĕлсе чечекленесшĕн марçке вăл? Тĕрĕссипе илсен, çывхарас вырăнне, чунран аяккарах та аяккарах тарса пынă пек туйăнать.

Караваев, чăнах та, хăйне питĕ виçеллĕ тыткалама пĕлет. Кăмăлĕ те лайăх, ытлашши сăмах вакламасть, каланине итлет. Пур енчен те йĕркеллĕ çын. Юнашар утма те теме тăрать. Çапах та, мĕншĕн васкамасть-ха вăл авланма? Тен, чирлĕ? Тен, юрамасть унăн çемьеллĕ пулма? Тен, çавăнпа сехĕрленет пуль? Çапла шĕкĕлчесе ларчĕ Венера хăйсем хушшинчи хутшăнусене.

Амăшĕ, паллах, хĕрĕн хуйхи-суйхине ашшĕнчен ытларах ăнланать. Укçине инкен хĕрне пур енчен те телейлĕ тăвас килет, çавăнпа час-часах аса илтерет те ăна:

- Ыранхи çинчен те шухăшла, ачам. Çавра Çăкăр Пракухĕн ачи мухтавĕпех хĕрарăм ĕмĕрне ирттерейĕмĕн. Хăвăн пек çамрăкки те аса килĕ. Анчах пурнăç урапине ун чух каялла çавăрасси пулмĕ.

Амăшĕн сăмахĕсем Венерăна тарăн шухăша ячĕç. Илюш та куç умĕнчех улшăнса пырать, Микулай та пуçран тухма пĕлмест. Мускавран вăл çыру янăччĕ, кĕçех килмелле ĕнтĕ. Ун валли Георгий Ильич Андреев кĕркуннех коттедж туса пĕтернĕ. Качча тухсан, Венера унта хуçа пулса саркаланса çеç çӳремелле. Анчах хăçан авланать-ха Микулай? Ун пирки вăл шăл шурри те кăтартмасть.

Ăша пусарма тесех хĕр килтен тухса утрĕ. Уйсем тăрăх пăхса çӳрес килчĕ. Çуртрисем йăвă шăтнă. Кĕрхи тулăпа ыраш пуç кăларма пуçланă. Кăçал та тырă вăйлă пулма кирлĕ-ха. Çĕр пуянлăхĕ çине пăхнипе агрономăн чун уçăлчĕ, юрă та ĕнĕрлесе илчĕ. Хаваслă туйăм ытамĕнчи çĕр пики палланă сасса илтнипе шартах сикрĕ, çаврăнса пăхрĕ те — чăнах та Илюшах иккен.

- Салам пултăр, Венера! Лармастăн-и?

- Çавăрса çапасран хăратăп, - куç айĕн ăшшăн пăхса илчĕ Пашкова.

- Ан хăра, тек ӳкермĕп, нихăçан та.

Хĕр ларкăч çине вырнаçасшăнччĕ, анчах каччă ăна хăй умне туртса лартрĕ.

- Хăравçă çын пулас эс, Илюш. Мĕн, ӳксе юласран шикленетĕн-и?

- Уншăн мар, сан çине питĕ пăхас килет паян, - хăюлăх çитерсе каларĕ Малашов. — Çурăм хыçĕнче мар, куç умĕнче пултарас

килет ман сана.

Венера чӗнмерӗ, мотоцикл малалла тапранчӗ.

Малаш Аркашӑн ачи института заочно вӗренме кӗчӗ. Инженер пулас ӗмӗт Илюш пуҫӗнче тахҫантанпах тӗвӗленетчӗ-ха, механизаци цехӗн пуҫлӑхӗ пенсие тухсан, ун вырӑнне ӑна лартрӗҫ.

Ҫӗнӗ вырӑна лартнӑранпа Малашов пӗрремӗш ҫураки ирттерсе курчӗ. Пуҫлӑх пуласси трактор-комбайнпа ӗҫлесси мар-мӗн. Андреев та ҫирӗп ыйтать, механизаторсем те хытӑ ҫыртаҫҫӗ.

Юлашки вӑхӑтра Илюш самаях улшӑннӑ пек курӑнать. Ним ҫукранах чӑркӑшланма пӑрахрӗ. Сивӗ сӑмах, кӑнттамла хӑтлану юратӑва аяккалла тартса пынине те ӑнлана пуҫларӗ. Венера унӑн сӑпайлӑхне, хӑюллӑхне кӑмӑлланине те туйрӗ. Каравай Микулайӗ ҫумне кӗвӗҫсе вӑл кӑлӑхах ӑна ҫавнашкал кӳрентерчӗ. Мӗнле хӗр чӑттӑрха сӗмсӗрлӗхе? Венера, кӑра кӑмӑллӑ пулин те, сулнӑка тӗртсе ямарӗ ӑна, ҫӗре ӳкме пуҫланӑскернех кӗлеткипе тӳрленсе тӑма пулӑшрӗ. Иккӗшӗ пӗрле калаҫса ларнӑ вӑхӑтра вӗсем хӑйсен унчченхи юратӑвне те аса илеҫҫӗ. Ҫавӑн ячӗпе лартнӑ хурӑнсем Тӑмпуҫ пӗвинчи утравра мӑшӑррӑн патвар ҫитӗнеҫҫӗ.

- Йывӑҫа, Илюш, лартма ҫеҫ мар, пӑхса ӳстерме те пӗлес пулать, — терӗ Венера.

- Мансӑрах шӑваракансем пур...

- Чӑнах та, кирлех пулсан, шӑваракансем сансӑрах та тупӑнӗҫ. Анчах та ман хамӑр йывӑҫсене темшӗн-ҫке пӗрлех пӑхас килет. Ан ман хӑвӑн тивӗҫне. Ан тарт телейна. Тытма пӗл. Тытсан — упрама пӗл.

Юрату утравӗнче хӑй ытлашши маррине Парнас Илюшӗ ҫакӑн хыҫҫӑн тинех ӑнланчӗ. Садсем шап-шурӑ тум тӑхӑнчӗҫ. Илюшӑн Венерӑна та ҫурхи ҫӗнӗ тум — туй тумӗ парнелес килет. Анчах хӗр нимӗн те систерсе каламасть-ха. “Ҫитет пулӗ ача вӑййи выляса. Хӑюллӑрах пулас. Килӗштерсен — пӗрле пулӑпӑр, сивлесен — хам ҫума кӑкарса лартаяс ҫук”, - ҫапла шухӑш турӗ вӑл юлашкинчен.

Такӑр ҫулпа малалла ӳхӗрсе пыракан ик урапаллӑ ҫилҫунатӑн тилхепине вӑхӑтлӑха ячӗ те Илюш хӗрӗн ҫунтаракан тӑпӑл-тӑпӑл чӗччисене ачашшӑн ҫупӑрларӗ. Венера каччӑ аллисене тӗртсе ямарӗ, ҫилҫунат тилхепине васкасах ярса тытрӗ...

* * *

Микулай Караваев Мускавран таврӑнать. Вакун пӗрешкел силленнипе ӑна ыйхӑ пусса ҫитерчӗ те, сисмесӗрех куҫӗсем хупӑнчӗҫ. Тӗлӗкре вӑл Шишкина курчӗ. Иван Ивановичпа вӗсем Тӑмпуҫ ҫырми ҫывӑхӗнчи ыраш пуссинче, чи ҫӳллӗ хыр тӑрринче пек. Ҫиччӗмӗш пӗлӗт ҫинче Микеланджело, Рафаэль, Леонардо ла Винчи вӗсене ытарлӑн пӑхса выртаҫҫӗ.

Караваева чаплӑ вырӑс художникӗ хӑйӗн “Ыраш” ҫулӗ тӑрӑх хӑюллӑн утнӑшӑн, маҫтӑрлӑх тӳпине хастаррӑн улӑхнӑшӑн мухтать. Улӑхра, авӑ, Пластовӑн утӑ ҫулаканӗсем. Ӗмӗрне ялта пурӑн-са ирттернӗ Аркадий Александрович ҫулакансене аллинчи ҫава сассипе

хаваслантарса юрлаттарать. Кĕç ыраш хушшинчен Воронеж тăрăхĕнчи Крамской сиксе тухрĕ. Йăм хура сухаллă, мăйăхлă, вăрăм яка çӳçлĕ, кăвак куçлă, типшĕм питлĕ хытканрах Иван Николаевич чăлт шурă кĕпе, бархат пиншак тăхăннă, хулпуççийĕ çине çава хунă. Ун хыçĕнчен чăваш тумĕпе капăрланнă Моисей Спиридоновпа Николай Овчинников тата "Пучах" художникĕсем Алексей Няманов, Григорий Ушкин, Лев Климов васкаса утаççĕ. Микулай аслашшĕ Çавра çăкăр Хĕветучĕ те вĕсемпе пĕрле. Пĕр йĕркене тăрса тухрĕç те вĕсем, çавасене сулса ячĕç...

Самантрах ӳкерчĕк улшăнчĕ. Ыраш ани вырăнне Шишкинăн хырлăхĕ ирхи хĕвел çутипе йăлкăшса çуталчĕ. Уписем мĕкĕрсе выляма пуçларĕç. Иван Иванович пĕрре тӳпенелле, тепре çĕр çинелле пăхса илет те, хавасланса калаçать:

- Искусство вăл — вилĕмсĕр. Яланах чĕрĕ. Пĕрмай улшăнать, аталанать, çĕнелет. Авă, çав Возрождени генийĕсемпе хамăрăн авалхи Русь ăстисенчен пуçласа сирĕн ĕçӳсем таранах хăватлă, хаклă. Çынна шухăшлама, юрлама, пурăнма вĕрентекен, хавхалантарса, çунат хушма пулăшакан ӳкерчĕксене халăха кăтарни — хăюллăх утăмĕ. Çавăнпа эсир Костинпа иксĕр те — паттăрсемех. Санăн "Çĕр пики" Леонардо да Винчин пикипе çывăх. Аллă çула çитнĕ тĕлелле тин тĕл пулнă вăл хăйĕн Мона Лизине. Эсĕ те çамрăклах тупаймарăн хăвăн Венеруна. Леонардо "Джокондăшăн" чунне панă, уйрăлман унран, хăйпе пĕрле Флоренцирен Франци çити илсе кайнă. "Джоконда" пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ. Ăна вăрласа кайса та пăхнă, анчах Парижри Лувра каяллах тавăрса панă. Миçе ĕмĕр упранать ĕнтĕ вăл этемлĕх культурине пуянлатса. Сан "Çĕр пики" те чапа тухрĕ, тĕнчене çутатрĕ. Уйăрасшăн мар пулас ăна хăвăнтан, Мускав выставкинче туянас текенсене те сутмарăн. Анчах çухатрăн вĕт Илемпӳне. Вăрларĕç...

Таврара хăрушă сасă янраса кайрĕ: "Кам вăрларĕ Микулай де Каравайăн "Çĕр пикине?!" Тăрук çутçанталăк тĕксĕмленчĕ. Аслати хăлтăртатрĕ. Вăрман шавларĕ. Кĕреш пек юмансем хушшинчен, акă, кăвак кашкăр сиксе тухрĕ. Ун çинче патша ывăлĕ Йăван пикепе ларса пырать.

- Ан хăра, Виктор Васнецовăн вилĕмсĕр сăнарĕсем вĕсем, - лăплантарать Микулая Шишкин.

Караваевăн куçĕ тĕтреленчĕ. Кĕçех кашкăр вырăнне мотоцикл пулса тăчĕ. Руль тытнă Малаш Аркашĕн ывăлĕ Илюш хаяррăн пăхса ларать пек. Венера йĕкĕт кăкăрĕ çине пуçне пĕкнĕ...

- Васнецов юмахĕ мар вĕт ку, чăн-чăн пурнăç ӳкерчĕкĕ. Ăçта "Çĕр пики?" Ăçта манăн Венера-"Джоконда?!" - темле туртăшса илсе кăшкăрсах вăранса кайрĕ те вăл чĕркенĕ япалине йăпăр-япăр хыпаласа пăхрĕ. Картина çумрах-ха, никам та тĕкĕнмен. Микулай ăна ялти халăх галерейине - Çĕрпӳлĕхри "Третьяковкăна" парнелет.

Станцире Караваев пуйăсран анчĕ. Ăна илме колхоз хуçи Андреев çăмăл машина янă. Равăш витĕр тухсан вĕсем кĕçех Тăмпуç çырмине çитрĕç. Кунтан вăл яла çурран кайма шутларĕ, çавăнпа

шофера картинăна культура керменне “Третьяковка” хуçине Ванька Костина кĕртсе пама хушса ячĕ.

Умра авă – ешĕл сад, тăп-тăрă шывлă пĕве, çывăхрах – асамлă Юрату утравĕ. Унта ӳсекен мăшăр хурăнсен тăррисем вăштăр çилпе Хурăнлăх еннелле пуç тайнă. Унта ун чунне кăшăклакан Илюш Малашов пурăнать. Венерăн “Юрату вилĕмĕ” картина сюжечĕ аса килчĕ. Чăннипех каларĕ-ши хĕр ун пирки е каччине вăхăтлăха тарăхнипе кăна?

Венерăпа лартнă садри улмуççи кăçал тата темшĕн çурăлман. Çыран хĕрринчен виçĕ хĕр – “Шанман чечексем” юрласа хăпарнăн туйăнчĕ. Çав ятлă картинăри варринчине, янкăр тӳпе пек кăвак куçлине, пиçĕ хăва хулли пек кĕлеткеллине, çурхи хĕвел пек чунуççиллине пуринчен илемлĕрех те çĕкленӳллĕ туйăмлăрах ӳкернĕччĕ. Унтанпа ĕнтĕ вăл уншăн – ĕмĕрĕпех “Шанман чечек”, вилĕмсĕр “Çĕр пики”, юрату, пурнăç.

Сад çумĕнченех тырă уйĕ пуçланать. Ун хушшинчи мăнаçлă ватă хырсем юмахри пăхаттирсене аса илтереççĕ. Вĕсем çине ăмсануллăн пăхса илнĕ май, ăна паçăрхи тĕлĕк аса килчĕ: патша ывăлĕ Йăван кашкăр çинче... Илюш Малашов – мотоцикл çинче... Йăван аллинчи пике... Илюш аллинчи Венера... “Тĕлĕнмелле, мĕн кăна курса аташмастăн пуль тĕлĕкре. Хăвăртрах, хăвăртрах тĕл пулса калаçасчĕ Венерăпа...” Çак шухăш хĕлхемĕпе хĕрнĕ Микулай Караваев ыраш пуссипе тăван ялнелле – Çĕрпӳлĕхе васкаса утрĕ.

1986



## УЛИНА ÇĂЛТĂР

Çынпа çын яланах ăнсăртран тĕл пулать, вĕсенчен хăшĕсем вара пĕрнепĕри туххăмрах манса каяççĕ, е теприсене салтăнми тĕвĕ ĕмĕрлĕхех çыхăнтарать. Эрхип Ласкин та çав каç хими завочĕн клубне кинона кайман пулсассăнах, тен, ăна курмастчĕ те, тен, каярахпа асăрхасассăн та, паллашаймастчĕ те пуль унпала. Шăпа çулĕ çавăнталла чĕннĕ пекех пулса тухрĕ-çке унăн ун чухне.

Эрхип салтакран тин çеç таврăннăччĕ. Костюм çук пирки çар тумĕпех çӳретчĕ-ха. Пĕччен айланкаласа пурăнакан амăшĕн пурçук укçине пĕтерес темерĕ те вăл, ĕçе кĕрсен, костюмне хăйех туянма шутларĕ. Çав ĕмĕтпе районăн “тĕп хулине” тухса уттарчĕ. Эрхип çарта шофера вĕреннĕччĕ, хăватлă машинăпа чупнăччĕ. Ялта ун валли пушă вырăн тупăнмарĕ. Ирĕксĕрех вара тăван колхозпа сывпуллашмалла пулса тухрĕ. Вăрнар поселокне çитсен, вăл хăйсен ял ачине, комсомол райкомĕнче ĕçлекен Илле Дмитриева, тĕл пулчĕ. Ентешĕн хуйхине пĕлсенех, Илле ăна хăйсем патнелле чуптарсах илсе кайрĕ, пĕрремĕш секретарь пӳлĕмне çавăтса кĕчĕ. Те тӳрех килĕшрĕ вăл секретаре, те Илле мухтани пулăшрĕ — ĕç ыйтăвне хăвăртах татса пачĕç.

- Мĕнле автомашина сирĕн? - кăсăкланса ыйтрĕ çакăн хыççăн Ласкин.

Пĕрремĕш секретарь ун çине ытарлăн пăхса кулса ячĕ те:

- Çилçунат, - терĕ. - Кăлкан çилхеллĕ, вăрăм хӳреллĕ, тăвата уараллă çил çунатлă урхамах. Çапла, халлĕхе лаша кăна пирĕн. Анчах эс, Эрхип, уншăн кулянса ан ӳк. Кĕçех, акă, газик килмелле. Кукурузăшăн панăскер. “Уй-хир пики” ӳстерсе эпир çĕршывĕпе чапа тухрăмăр-çке. Малтанлăха ĕнтĕ, каçар та, алла тилхепех тытма тивет. Килĕшет-и?

Ялта çеç мар, Вăрнарта та шофера вырнаçма çăмăлах маррине пĕлекен Ласкин секретарь тăсса панă шăнăрлă çирĕп алла хыттăн тытса чăмăртарĕ.

Илле Дмитриев ăна çакăн хыççăнах ĕç вырăнĕпе паллаштарма

тесе райком картишне илсе тухрĕ, пысăках мар вите алăкне уçса пачĕ. Шалта хайхи Çилçунат текен шурă лаша сăлăп хăлтăртаттарса тăрать. Палламан çынна янавар тӳрех шăмарчĕ, сăмсипе хăрт-харт тутаркаласа малти урисемпе урай хăмине çиллессĕн кукалерĕ. Илле кайсан Эрхип лашана ăшă сăмахсем каласа йăпатма тăрăшрĕ, çемçен шăхăркаласа апат пӳлĕмĕнчен çерем ути çĕклемлесе куритене хурса пачĕ. Çилçунат пуçне сылтăмалла пăрса çĕнĕ хуçана ăшă куç хĕлхемĕпе саламларĕ те утта капăртаттарсах çиме пикенчĕ, Эрхипе темшĕн хӳри вĕçĕпе сисĕмлех тивертсе илчĕ. Ласкин лашана кăлкан çилхинчен çине-çине ачашларĕ. Çилçунат тулхăрса çĕнĕрен пуçне силлерĕ, ун еннелле малтанхинчен те ăшшăнрах пăхрĕ. Этемпе выльăх тинех пĕр чĕлхе тупрĕç пулас. Ласкин çав хушăрах лаша кӳлмелли хатĕрсене тĕрĕслесе тухрĕ. Витере тăрантас, хуп çуна пур. Кĕтесре йĕнер выртать. Хăмăчĕ, йĕнерчĕкĕ, пĕкки, йĕс тăхаллă йĕвенĕ, кутлăхĕ, чĕн урхалăхпа хырăмайлăхĕ тата тилхепи чипчиперех. Ун умĕнхи конюх-шоферăн тирпейлĕхĕпе тăрăшулăхĕ пур енчен те палăрать.

Ĕçе тӳрех вырнаçма тӳр килнĕшĕн Ласкин пĕр хушă савăк ытамĕнче ырă курчĕ темелле. Анчах çав ытам çумĕнчех хуйхи те чĕрене йăшăкласа илчĕ: ăçта вýртса тăмалла? Унăн поселокра пурăнакан тăван тавраш ĕ çуккă. Хваттер шырама ĕлкĕреймерĕ вăл. Каçалапа улттăсем иртсен, Эрхип Вăрнар урамне тухрĕ, ĕçсĕр аптăраса чукун çул вокзалĕ еннеллеваскамасăр утрĕ. Икĕ урам кĕтессинче пĕлтерӳ хăми çакăнса тăнине асăрхаса унта мĕн çырса çапнине вуларĕ. Районти культура çуртĕнче пулмалли “Икĕ хуçа тарçи” ятлă фильма Эрхип салтакрах курнăччĕ. Кăна вара, хими завочĕн клубĕнче кăтартаканнине, “Парнеллĕ туя”, унта пăхма ĕлкĕрейменччĕ. Кĕсьери вак укçасене шăнкăртаттарса тĕрĕслесе пăхнă май вăл чукун çул хĕррипе шанчăклăнах хими завочĕ еннелле кайрĕ. Каçхи апат тумалăх та, кино курмалăх та çитет!

Сеанс пуçланиччен купăста яшкипе котлет çиме ĕлкĕрчĕ Ласкин. Клубĕ столовăйран аллă-утмăл утăмра кăна. Пĕр хутлă тăрăхла йывăç çурт тултан пăхма пĕчĕк пек те, шалта самаях аслă. Хыпăнмасăрах вăл кассăра билет туянса зала кĕчĕ, ретсем хушшинче хăй вырăнне шыраса тупрĕ. Ун умĕнче икĕ хĕр чăвашла калаçса лараççĕ. Хушăран каялла йăлт пăхаççĕ те ихиклетсе кулаççĕ. Эрхип хăлхине хăй çинчен пăшăлтатнă сасă пырса кĕчĕ. Вăл ăнланчĕ: кусем унпа паллашасшăн. Эрхип те вара хăюллансах калаçăва хутшăнчĕ. Сулахайри, шупка тутăр çыхни, çаврăнчĕ те куçран чăрр пăхрĕ. Каччă унăн тутăр айĕнчен ылтăн织 ункă пек тухса тăракан кăтралатнă сарă çӳçне, сарлака тӳрĕ çамкине, хĕм сирпĕтекен кăвак куçне, каçăртарах сăмсине, яп-яка питçăмартисене, кулăпа туртăннипе чалăшарах панă тăпăлкка тутине курчĕ. Çăра та вăрăм куç харшисене сиктерсе тепĕр хут ăшшăн кулчĕ те вăл çепĕç сасăпа:

- Эпир сирĕнпе паллашма хатĕр, анчах та сăмахпа каласа мар — хут çине çырсах, атту кунта çынсем илтеççĕ. Юрать-и? Акă хучĕ. Мĕн сăрмаклама пултаратăр, çавна майлаштарса çырăр, - терĕ.

Хĕр тăсса панă хут татăкне алла илнĕ май Эрхип кĕсьерен авто-

ручка кăларчĕ, пуçа çак самантра мĕн пырса кĕнине хăвăрт çырса хучĕ:

Шур катанпир çинчи “Парнеллĕ туй”
Кĕçех анас пек сирĕн урама та.
Чĕнсессĕн пырăп купăс калама та,
Янраттарса хавассăн юрлама та,
Ура хуçса вут-хĕмлĕн ташлама та...
Васкать вăл пурнăçри парнеллĕ туй.

Пăнчă лартса ĕлкĕрчĕ кăна, çутă пăнч сӳнчĕ. Шур катанпир çинче пурнăç чĕрĕлчĕ. Çырнă хута каччă хĕре вăрттăн пачĕ. Лешĕ ăна чĕркуççийĕ çине хучĕ те ним пулман пекех кино курчĕ, хушăран тантăшĕпе пăшăлтаткаласа илчĕ. Ласкин куçне пĕрре экран çине, тепре хĕр чĕрçийĕ çинче выртакан хут татăкĕ çине куçарса ларчĕ. Пуçĕ арпашăнчĕ унăн. Кинора мĕн-мĕн пулса иртнине те йĕркипе ăнланса пыраймарĕ. Акă залра каллех çутă ялкăшрĕ. Уншăн вăл çывăхра çиçĕм çиçнĕ пекех туйăнчĕ. Хĕрсем харăсах вуласа тухрĕç сăвва, унтан, пуçĕсене пăркаласа, ихиклеткелесе алăк еннелле утрĕç. Ласкин та вĕсенчен юлмарĕ.

Урамра кĕрхи уçă çанталăк. Вăрнар вăрманĕ çийĕн хĕрлĕ çăмха ярăнать. Çынсем тĕрлĕ еннелле саланаççĕ. Хĕрсем чукун çул çине тухрĕç. Эрхипĕн те çав çулпах каймалла. Мĕн пулать те мĕн килет тесе, вăл вĕсене чупсах çитрĕ те хăюлланса хулран тытма ирĕк ыйтрĕ. Хĕрсем ăна именчĕклĕн хушша хупрĕç.

- Ку салтака туя чĕнмелле пуль, Эльвира, - сăмах пуçарчĕ паçăр шур хут татăкĕ сĕнекенни, сулахайри.

- Хăйĕн сăввинчи пекех хастар каччă пулсан, чĕнме мар, туйне пĕрле кĕрлеттерме те пулĕ, - терĕ кулкаласа тепри, сылтăмра пыраканни.

- Эп хирĕç мар - вăйлă аллисемпе иккĕшне те хăй çумне çывхартрĕ Эрхип.

- Ой, вăйлă каччă ку. Паллашма чăн та юрать кунпа, - кĕлеткипе чĕтренсе туртăнчĕ сылтăмри.

- Эс, Эльвира, ялан çапла... Хăв...

- Эй, çакна, кĕвĕçекенскерне... Те салтакне туртса илесрен тӳрех сехĕрленсе ӳкрĕ ваçка. Маймар. Кĕвĕçĕн куçĕ чапрас тет. Тем тума кирлĕ пуль мана çак куктĕриллĕ, сарлака тута-çăварлă, лапчăк сăмсаллă чухăн каччă. Клуба та этем ĕретлĕрех тумланса тухайман та... Çӳрĕрех тата хăвăр çулупа. Сирĕнпе... - вăрт! вĕçерĕнчĕ те Эльвира текенни шпалсем тăрăх таплаттарса чупса кайрĕ, тĕттĕмре часах курăнми пулчĕ.

Хăйне хурласа, тиркесе хăварнăшăн Эрхип çакăнта çĕр тĕпне анса каяс пекех пулчĕ. Юнашар хĕре сăмах чĕнме вăтанчĕ. Акă епле хак параççĕ иккен хăшĕ-пĕрисем ăна! Мухтанмаллиех çук-мĕн унăн кунашкал сăн-питпеле пикесем хушшинче.

- Кайтăр-и! - тарăхнăн алă сулчĕ каччăпа юлнă хĕрĕ. - Тасални паха. Епре. Ялан пуян каччă шырать вăл. Çыннăн пуянлăхĕ çи-пуçра

мар, ăшĕнче, чĕринче тесе тем чул та ăнлантарнă эп ăна. Вăл пĕрмай чапли хыççăн хăвалать. Тиркекене тирĕк тĕпĕ лекесрен те хăрамасть.

Чипер пĕрле шӳтлесе пыракан тантăшсен икĕ тĕрлĕ шухăшкăмăлне ăнланнă Эрхип хăйне хăй лăплантарма тăрăшрĕ, çапах йĕкĕтĕн ăшĕ вăркама чарăнмарĕ-ха. Сулахай алăпа çирĕппĕн çатăрласа тытнă хĕре вара вăл хуллен вырăнтан хускатрĕ.

- Паллашар пуль, пĕр-пĕрин ятне-шывне пĕлмесĕр калаçма йывăр, - чĕкеç пек çепĕççĕн чĕвĕлтетрĕ хĕр виç-тăват утăм тунă хыççăн. - Мана Уля теççĕ. Ульяна Улхашова.

- Эп Эрхипчĕ, - кăнттамрах хуравларĕ каччă. - Ласкин хушаматлăскер.

- Ну ку Эльвирăна ыран пурпĕр кăтартап мĕн кăтартмаллине сана кӳрентернĕшĕн. Ара, хушамату мĕне тăрать: Ласкин. Ытла та ачаш хушамат-çке. Савăк, евĕк, кăмăл сăмахсенченех тухнă пуль ĕнтĕ. Эпĕ малтанах, клубра чухнех, эсĕ ырă кăмăллă çынне чухласа илтĕм. Çавăнпах паллашас терĕм-ши? Халĕ, ман тантăша хирĕç нимĕн те тавăрса калаймасăр юпа пек тăрса юлсан, эсĕ йăвашрах пулнине те ăнлантăм. Тĕрĕсех хакларăм-ши?

- Ăна каламалли ман пурри пурччĕ-ха, анчах...

- Мĕнччĕ-ши? Кала, кала, мана кала çав сăмахусене, Эрхип. Чунна уç.

Каччă уттине хулленлетнĕ май хĕре çумарах туртрĕ, унтан пуçри шухăшне çиеле кăларчĕ:

- Сан Эльвира тантăшу вăл, тем тесен те, çын илемлĕхне ăнланма пĕлмест. Юрĕ, мана ĕнтĕ сăнран усал, этем ĕретлĕ тумланайман каччă тесе хăварчĕ. Юрĕ, эпĕ сăнран хитре çынах пулайманнине хам та лайăх пĕлетĕп. Хитре марри çине, паллах, кашни хĕрĕнех пăхас килмĕ. Анчах, тумтир пирки илсен... Ку тумтире тăхăнма пултарнăшăн тата паян кунччен те хывманшăн эпĕ вара пĕртте кулянмастăп. Салтак гимнастерки çире пулнăшăн мухтанатăп çеç. Никам умĕнче те вăтанмастăп. Салтак тумĕ вăл арçынна яланах илем кĕртнĕ, чапа кăларнă. Атте те ман вăрçăра унпах çĕре кĕнĕ. Уншăн вăл ĕмĕр-ĕмĕрлĕх улшăнми пĕр тумтир пулса юлнă. Унпа ман атте те пуян пулнă. Эпĕ те хама хам пуян тесе шутлатăп. Çавăнпа та этем ĕретлех тумланнă тетĕп эп хама. Ман çумра нимле çĕтĕк-çатăк япала та çук. Ман çире — совет салтакĕн, паттăр салтакăн, çĕнтерӳçĕсалтакăн гимнастерки, галифеллĕ шăлаварĕ, атти, пилотки. Акă епле чаплă тумпа эпĕ, Уля. Вăхăт çитсен, ăна хывса çакăп. Хура пуставран çĕленĕ костюм та туянăп, тен, хăçан та пулин. Кирлĕ пулсан... салтак тумтирне хуть те хăш вăхăтра та йăпăр-япăрах тăхăнса яма хатĕр. Кӳренессе кăштах кӳрентĕм те ĕнтĕ... Çилленме вара — çилленмен.

- Эй, турă, мана хама намăс çирĕ те... Каçарах эс ăна, Эрхип, пакăлтие. Хăй малтан чиперех сана вăйлă каччă тесе мухтаса пычĕ, кайран тем пулчĕ... Шутласан, вăйлă çын вăл хăех илемлĕ пуль? Вăйра, хастар кăмăлра, çирĕп сывлăхра вĕт этемĕн илемĕ? Ну-у, кăна, ла-айăх ăнлантарап-тăнлантарап-ха вăхăт çитсен, — терĕ хĕр.

- Этем хитрелĕхĕ пирки пупленипе эпир малалла паллашма та мантăмăр пать. Ăçта ĕçленине те ыйтса пĕлеймерĕм.

Райком картлашкине тин çеç ура ярса пуснăскерĕн тата ĕçĕ ытла та кулăшла пулса тухнăскерĕн, Эрхипĕн, ку ыйтупа калаçас та килместчĕ, çапах, хĕр хăйĕнчен тĕрĕс хурав кĕтнине ăнланса, суйма шутламарĕ, вара, такам илтесрен хăранă пек:

- Райкомра. Комсомолта, - терĕ. - Эсĕ ху тата мĕн çĕмĕрттеретĕн?

- О-о, эсĕ пит чаплă çĕрте, - хĕр кĕске тăхтав туса ирĕклĕ аллине ласт сулчĕ. - Эпĕ çĕвĕç кăна çав. Санпа юнашар утма та, калаçма та, тем, тивĕçлех-ши? Сăвă çыраканскер, эс пирнешкел çип чăлханчăкĕсемпе паллашма те килĕшетĕн ĕнтĕ...

- Ан кул-ха эс манран, Уля. Çынпа паллашасси-калаçасси вăл кам ăçта тата мĕнле пысăк-пĕчĕк ĕçре ĕçленинчен килмест пуль? Тен, эпĕ райком шоферĕ çеç? Тен...

- Сую тухсах пырать, Эрхип. Мĕншĕн улталатăн мана? Эп ку таранччен астăвасса райкомăн машина тавраше çуккăччĕ-çке. Ăçтан шофер пулма пултаратăн-ха? Суян, суян, тем. Тем, редакцире ĕçлеместĕн-и-ха эсĕ, парнеллĕ туйра купăс каласа юрă-ташăпа киленме ĕмĕтленекенскер, э?

- Çук, çук, унта мар. Суясса та суймастăп. Чăн-чăнах, шофертах, анчах малтанлăха, машина киличчен, лаша пăхтараççĕ. Паян пĕрремĕш кун тĕрмешсе пăхрăм.

- Ĕненмеллех пуль сана апла. Юрĕ, шофер, конюх пул. Маншăн пурпĕрех. Çапах та вĕçне çитиччен, тĕплĕнрех паллашар-ха. Ĕçлессе эпĕ çĕвĕ фабрикинче ĕçлетĕп, пурăнасса — çак урамра, Вăрман урамĕнче, çак çуртра пурăнатăп. Ăсатса янăшăн тавтапуç, ырă çыннăм.

Вăрман хĕрринчи хăрах енлĕ урамра сисмен хушăрах тĕттĕмре пĕччен тăрса юлчĕ Эрхип. "Ăнăçлă кунах, телейлĕ каçах пулчĕ-ши маншăн паян? Пурнăç çулĕ хăш еннелле сулăнĕ-ши çак самантран?" - тесе, Ласкин салтак аттисемпе кĕптĕртеттерсе райком урамне тухрĕ.

## 2

Путлĕн çывăрасси пулмарĕ. Пуçа пĕр шухăш савăл çапрĕ, ытти мĕнпур шухăша ик еннелле хĕссе лартрĕ. Куç умĕнче çĕнĕ сăнар çуралчĕ, унчченхи ытти мĕнпур сăнара хупăрласа хучĕ. Ирпе хĕвел те хăйшĕн çеç тухнăн, пĕтĕм тĕнче уншăн çеç юрланăн туйăнчĕ качча. Чупкаласа çеç çӳрет. Çилçуната картишне кăларса уçăлтарчĕ, хырчăкларĕ, шăварчĕ. Тислĕкне тасатрĕ. Куритене сĕлĕ ярса пачĕ. Унтан лашана витене хупрĕ. Ялта ӳссе çитĕннĕскер, лаша пăхма пĕлет-ха Эрхип.

Ăна пĕрремĕш "рейса", "Çĕнтерӳ" колхоза, кайма хушрĕç. Пĕччен мар, хĕрпе.

Ласкин Çилçуната турта хушшине кĕртсе тăратрĕ, кӳлсе пĕтерсен, çăварлăхларĕ. Хĕр-секретарь тăрантас кӳмине майлашса ларчĕ, Эрхип — умри ларкăч çине. Малтанах ним пек те туйăн-

мастчӗ. Райком картишӗнчен урама тухсан тин хумханса ӳкрӗ Эрхип. “Епле-ха капла, эпӗ шофер вӗт, баранка ҫавӑрттарас чухне чӗн тилхепе тытса пыратӑп. Хамӑр ялсенчен, паллакансенчен, уйрӑмах... ӗнерхи хӗрсенчен намӑс. Ҫӗвӗ фвбрики умӗнченех иртсе каймалла-ҫке. Хӗре тилхепене парас та, анса хамӑн тротуарпа утас мар-ши?” - ҫапла шухӑшланипе пуҫӗ хӗссе килчӗ унӑн. Мӑшкӑл пекех тата, шӑп та лӑп ҫӗвӗ фабрики патне ҫитсен, чӳлӗк патах татӑлчӗ. Лаши, хирӗҫ пулнӑ грузовикран хӑраса, аяккалла тӑрук пӑрӑнчӗ. Ҫав самантра хӑмӑт пӑявӗ турта пуҫӗнчен тухрӗ те кайрӗ. Лаша тӑварӑннӑшӑн секретарь ямшӑка ӳпкелесе илчӗ:

- Тем эс, Эрхип, ҫӗркаҫ путлӗ ҫывӑрман пуль?

- Кам мӗнле ҫывӑрнипе-ҫывӑрманнине ӑна малтан пӗлес пулать-ха, - кӳреннӗн тавӑрчӗ Ласкин.

Эрхип ларкӑч ҫинчен сиксе анчӗ те лашана часрах турта хушшине чакарса кӗртрӗ. Васкавлӑрах кӳлме темшӗн алли-ури ҫыхланать унӑн. Чӳречерен Уля ихӗрсе пӑхса тӑнӑн туйӑнать тата. Ак, тамаша! Фабрика картишӗнчен тухса иккӗн кунталла утрӗҫ, ун умӗнче чарӑнчӗҫ. Ульӑпа Эльвира!

- Кӗсре ямшӑкне хӗрӳллӗ салам! - урама янраттармалла кулса ячӗ Эльвира. - Хӗрсене ытла катаччи ан чуптар ҫав.

Ура тапса, эхлете-эхлете хӑмӑт чӳлӗкне туртса ҫыхакан Эрхип тӳрех сӑмах та хушаймарӗ. Чӳлӗк вӗҫне ҫыхса лартнӑ хыҫҫӑн урхалӑх хытарма пикенчӗ. Ҫав вӑхӑтра Уля куҫӗпе тӗл пулчӗ. Уля ун ҫине ҫӗркаҫхи пекех ӑшшӑн, темле ачаш кушак пек ыйтуллӑн пӑхать. Тантӑшне Уля вӑрҫса тӑкрӗ:

- Ҫынни ахаль ӑшша пиҫнӗ, сан ялан мӑшкӑллласа ҫӳресси.

Вӑтаннипе ниҫта кайса кӗме пӗлмен Ласкин вут ҫумӗнчи пек пӗҫерекен питне шӑлкаласа ларкӑч ҫине сиксе ларчӗ те лашана тилхепе вӗҫӗпе ҫатлаттарчӗ. Ҫилҫунат малалла карт! тапса сикрӗ. Эрхип лашана поселокран тухиччен тем пулнӑ пек хӑваларӗ, сехӗрленсе ӳкнӗ хӗр ҫухӑрнине те пӑхмарӗ.

“Ҫӗнтерӳ” колхоза вӗсем чиперех ҫитсе килчӗҫ. Хими завочӗн клубӗнче каҫпа каллех киноччӗ. “Малиновкӑри туя” тахҫантанпах курма ӗмӗтленекенскер, вӑл чӑтаймарӗ, Иллерен кивҫен укҫа илсех унта васкарӗ. Калаҫса татӑлнӑ пекех, акӑ ӗнерхи хӗрсем каллех ҫитсе кӗчӗҫ. Эльвира тутине пӑркалантарнипе питне сӑнсӑррӑн чалӑштарчӗ те “Вӑт тӗнче!” тесе чӑхлатса илчӗ. Уля ӑна аякран тӗртсе лӑплантарчӗ, хӑй каччӑ енне сылтӑм куҫ айӗпе вӑрттӑн хӗм сирпӗтрӗ. Эрхип куҫӗнчи хӗм ҫумне ҫапӑнса вӑл ҫӗнӗ вӑйпа чалкӑшрӗ, каччӑ вӑтантарса пуҫне чиктерчӗ.

- Эрхип, кунтарах ҫывхар-ха? - пӑшӑлтатрӗ Уля.

- Мӗн? - ҫӑварне карса пӑрахрӗ каччӑ.

- Ним те мар, акӑ ме, тыт, - кӗрен хуплашкаллӑ хулӑн тетрадь тӑсса пачӗ хӗр. - Шӑпах ҫӗр сӑвӑ ҫырмалӑх.

Кинобудка шӑтӑкӗнчен проектор ҫатӑртатнӑ сасӑ илтӗннипе сӑмах татӑлчӗ. Тӗттӗмре Эрхип Ульӑн ансӑр хулпуҫҫине асӑрхануллӑн сӗртӗнсе хӗлхинчен хуллен каларӗ:

- Тавтапуҫ.

Кино вĕҫленсен, Эльвира темле капăр каччă ҫумне ҫыпҫăнса вĕсенчен уйрăлчĕ. Уля васкамарĕ, хăйне йĕкĕт хулран тытасса кĕтрĕ пулас. Эрхип те ҫухалсах каймарĕ, часах унăн сулахай аллине ярса илчĕ. Йываҫ кĕпер патне ҫитичченех сăмах чĕнмесĕр хĕрӳлĕх вучĕпе ҫунса пычĕҫ вĕсем, переездран пăрăнса анакан автомашинăна ҫул парса, аяккалла чакса тăчĕҫ.

- Сан вăхăт пур-и? - ыйтрĕ Уля.

- Ăҫта хыпăнмалла ман. Анне аякра. Ҫилҫунат витере. Урăх кĕтекен ҫук. Ирччен те ҫӳреме хатĕр эп санпа. Пăх-ха, епле ҫутă каҫ. Тулли уйăх хырсем тăррипе мĕнле кусать авă. Атя хăваласа тытатпăр! Чупар-ха унталла! - ҫапла каласа Эрхип хĕре йываҫ кĕпер урлă тĕпĕртетерсех илсе каҫрĕ, анаталла ҫавăрчĕ.

- Уй, хăратăп эп ҫĕрле вăрманта, - туртăнчĕ хашкакан Уля.

- Манпа та-и? - чупма чарăнчĕ Эрхип.

- Санпа... Санпа хăть, упапа...

Вăрман хуҫалăхĕн кантурĕ ҫумĕпе, ача сачĕ хыҫĕпе вĕсем хырлăха тухрĕҫ, сукмак тăрăх пĕве хĕрне анчĕҫ.

- Ну халĕ тытар-и уйăха, Эрхип? - пуҫне каҫăртса икĕ аллипе те хăлаҫланчĕ Уля. - Акă вĕҫетĕп те тытатăп!

Сикнĕ пикене Эрхип яп ҫулса илчĕ те ываҫ тупанĕсем ҫине тăратрĕ, мускулĕсене карăнтарса пуҫран ҫӳлерех ҫĕклерĕ.

- Тыт, Уля, тыт!

Уля уҫăн юрласа ячĕ:

Тĕнче уҫлăхĕнче ишен ҫăмхийĕ
Туртать пире ытарлăн хăй патне.

Каччăн пит-куҫне хĕрĕн вăрăм кĕпи хупланă. Вăл аркă витĕр умри чанккама хырсене те, тӳпери ирĕклĕн ярăнакан уйăха та, нимĕн те курмасть. Вăл суккăрланчĕ, хăй умне юрату хумĕ каплан-са килнипе тĕттĕмлĕхри асамлăх тĕнчине лекрĕ. Хăлхи ҫеҫ пит лайăх илтет унăн хĕр юррине. Ку юрра Вăрнар ачи, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор, Эрхип сăмахĕсем тăрăх ҫырнăччĕ. Уля уҫăн тăсать юрра:

Ҫак самантра вĕҫсе ҫитсе, ун ҫийĕн
Ҫĕклесчĕ Ҫĕр ҫыннийĕн ыр ятне...

Ҫыран тăрăх утса вĕсем йывăҫсем хушшинче хăйсен сукмакне такăрларĕҫ. Уйăх та тахҫанах вăрман ытамĕнчен уйрăлса ҫӳл тӳпенелле улăхнă ĕнтĕ, ҫĕрелле чеен кулса пăхать, ҫамрăксене тĕссĕр сутипе ачашлать. Хĕрпе каччă ҫавра сĕтел пек сарлака тунката ҫине ларчĕҫ. Уля Эрхипе хулăн тетрадь пирки аса илтерчĕ:

- Ĕнер хут татăкки кăна сĕннĕшĕн кӳрентĕн пуль терĕм. Ҫавăнпа паян кĕнеке лавккинче хулăн тетрадь туянтăм. Ятарласа, сан валли. Сăввисене манах парнелесе ҫырсассăн, тен, хăҫан та пулин вулаттарăн.

- Пулмасть пуль манран ĕмĕрне те ҫĕр сăвă ҫырасси. Сăвăҫ марҫке эпĕ. Ҫук, ҫук, шантармастăп. Ҫĕр ҫыру ҫырма, тен, пултарăп.

Çук, сăвă-юрă килсех пĕтмест ман чĕлхене. Нуша кулачĕ çитеретĕн капла эсĕ мана, - гимнастерка тӳммисене вĕçертсе хĕврен кăлармa пуçларĕ йĕкĕт парнене.

Хĕр унăн аллине çепĕççĕн тытса чарчĕ:

- Ан кӳрентер мана, Эрхип. Чĕререн панă япалана чĕрӳ çумĕнчен ан уйăр. Чĕрӳ хушсан, çав шур листасем сан хăйсемех кирлĕ йĕркесемпе тулĕç. Çыр.

Хĕр парни каччă кĕлеткине çĕрĕпех ăшăтрĕ. Ир енне, райкома çитсен, вăл тетраде кăларса пăхрĕ, кĕрен тĕслĕ хуплашкине уçса шал енне çырнине вуларĕ: "Ĕнер çуралнă юрату ячĕпе саламласа, чĕререн ырă сунатăп. Уля Улхашова".

Тетрадĕнче йĕрленĕ тăхăрвун ултă страница.Хуплашкисем çумĕнчи шурă листисене шутласан, шăпах çĕр пулать. Кашни çине пĕр сăвă çыртарасшăн пуль ĕнтĕ хĕр, пĕр страницине те усă курман, хăйĕн саламне те хуплашкан шал енне çырса хунă.

Эрхип çĕленĕ хаçат тĕркисене диван пуçне купаласа хурса выртрĕ те шинелĕпе витĕнчĕ. Пуçĕнче шухăш пăтранчĕ. "Мĕнле-ха капла? Вăл та, эпĕ те юрату кăварĕ çине çаруран тăтăмăр пать. Чăтайăпăрши, тӳссе ирттерейĕпĕр-ши асаплăха? Чăн-чăн юратăвах пулсан ĕнтĕ чăтма пулĕ. Кăварлă юрату çулăмĕ чĕрене хĕмлентерĕ, ӳт-пĕве хăватлатĕ. Анчах та çав çулăм хăшин чĕрийĕ патне те пулин çитеймесен? Ăнсăртран тĕл пулнă самантра çуралнă юрату вăхăтлăх çунтармăш туйăмĕ вырăнĕнче çеç пулсан? Камăн çапла пулса тухма пултарĕ-ши? Ульăн е унăн? Калама хĕнтерех. Пĕлместĕп-çке эпĕ, нимĕн чухлĕ те пĕлместĕп ун çинчен. Кам вăл? Тен, каччăсемпе çӳресе тахçанах пĕтнĕскер? Тен, каччa тухса уйрăлнăскер? Çавăнпа хăюллăн ман çума çыпçăнать? Вăл та мана пĕлмест. Юрĕ, вăхăт кăтартса парĕ-ха. Вăхăт пирĕн тӳре пулĕ".

3

Уля Улхашова çĕвĕ фабрикинчи çамрăксен ертӳçи пулнине Эрхип тепĕр темиçе кунран пĕлчĕ. Райком бюровне вăл хĕрсене илсе килнĕччĕ. Виçĕ çĕвĕçе комсомола илчĕç. Уля хăй те райком членĕ иккен. Кунта вăл питĕ курăмлă çын. Унпа пĕрремĕш секретарь те йăмăкĕпе калаçнă майлах питĕ çывăххăн калаçать. Ку тата Эрхип ăшĕнче тарăху туйăмĕ çуратрĕ. "Мĕншĕн кĕвĕçетĕп-ха? Çав хулăн тетрадь çине çырса панă сăмахсене ĕненсе-ши? Уйăхлă каçсенче хырлăхри пĕве тавра Ульăпа юнашар утса-чупса çӳренĕшĕнши? Çуралнă юрату ячĕпе саламласа чĕререн ырă сунма ăна пулĕ-ха. Шурă хута хуратни кăна мар-и вăл, тĕрĕссипе. Çуралнă юрату?..Хăш вăхăтра çуралчĕ-ха вăл, чăннипех юрату пулсассăн? Эсех çуратрăнши вара ăна, Уля? Ăçта вăл? Сан куçунта-и, туту хĕрринче-и, хĕвӳнте-и?.. Тытсах курасчĕ ăна, çав юрату тенине".

Çапла шухăшласа Ульăна аякран сăнакан Эрхипĕн чĕри станцăналла хăпаракан тавар тиенĕ пуйăс сасси пекех йывăррăн кăртлатать. Çав сасса Ульăпа кула-кула пуплекен секретарь илтессĕнех туйăнать. Эрхип вара хăйĕнчен хăй вăтанса, вĕсене вăрттăн сăнанинчен имемсе аяккалла пăрăнчĕ, картишне тухрĕ. Кĕвĕç куç çиес

çăкăр çине те кĕвĕçсе пăхать тет те, ун та çапла пулса тухмасть-ши?

Ĕç вĕçленнĕ тĕлелле райкома Уля каллех пычĕ, Эрхипе шыраса тупрĕ. Каçхи шкулта вĕренекен хĕр ăна хăйпе пĕрле пыма чĕнчĕ.

- Паçăр эп сана аса илтерме мансах кайнă. Атя вĕренме? Астăватăн-и пĕр кун калаçнине? Шухăшласа пăхрăн-и?

- Шухăшлама шухăшланă-ха та, анчах эп халь кая юлтăм вĕт. Пĕр уйăх иртсе кайнă. Кам илет мана унта халь тин? Çитес çула хăварма тивет.

- Çитес çула?.. Ан ухмахлан! Пĕр çул çухатни саншăн, тен, вунă çулпа танлашать пуль. Атя паянах. Директор патне кĕретпĕр, калаçатпăр. Чĕлхене калаçма туса панă. Пирĕн директор çав тери лайăх çын. Сăмах май, миçемĕш класран пăрахнă-ха эсĕ?

Хашш! сывларĕ те Эрхип тутине вылятса илчĕ, пит-куçне пĕркелентерчĕ. Питĕ асăнас килмест çав унăн иртнĕ вăхăта. Ытла йывăрччĕ вĕсене, амăшĕпе иккĕшне, çав çулсенче. Амăшĕ йывăр чирлесе ӳкрĕ, Шупашкар пульницинче вăрах сывалчĕ. Килти хуçалăха тытса тăмалласчĕ. Шкулне ултă çухрăма çӳремеллеччĕ. Вĕреннĕшĕн тӳлеме укçа та пулмарĕ.

- Саккăрмĕш класран, - терĕ вара вăл. - Юлашки чĕрĕк юлнăччĕ вĕренмелли... Çирĕпчĕ çав ун чухне йĕрке. Укçине вăхăтра тӳлемерĕн, вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймарăн, сиссе те юлаймастăн хăв шкул алăкĕ хыçне тăрса юлнине. Ӳкĕтлесе çӳремен пирнешкеллисем хыççăн вĕрентекенсем. Хамăрăн май, хамăрăн ăс-пуç, хамăрăн çĕнтерӳллĕ талпăну пулнипе çеç пĕлӳ илме пултарнă.

- Вăт-вăт, - хавхаланса ӳкрĕ Уля, - халĕ те çав çĕнтерӳллĕ талпăнупа çитсе кĕрĕпĕр шкула, директор пӳлĕмне. Çыр заявлени. Аттестатна кайран пырса парăн. Хам ĕнентереп директора. Пирĕн пата, тӳрех тăххăрмĕш класа, çӳреме килĕш. Саккăрмĕш класс программине эс пĕтĕмпе тенĕ пекех вĕçленĕ вĕт? Вĕренменнине — вĕренетĕн. Çитетĕн ыттисене хуса. Атя, атя, Эрхип! Пĕрле çӳреме, пĕрле вĕренме мана та лайăх пулĕ.

Çапла алăран çавăтсах илсе тухса кайрĕ Уля качча. Акă, Ленин урамĕпе нумаях та утмарĕç вĕсем, Культура çурчĕпе хирĕç вырнаçнă вăтам шкул картишне çитсе кĕчĕç. Çуртне кирпĕчрен купаласа тунă, çиелтен сарăрах тĕспе сăрланă. Иккĕмĕш хутĕнче — каçхи шкулăн класĕсем. Директор пӳлĕмĕ патне çитнĕ тĕлелле коридорта шăнкăрав янăраса кайрĕ.

- Ĕлкĕреймерĕмĕр, урок пуçланать. Хими пирĕн малтан. Как рас директор вĕрентет. Атя хăвăртрах класа. Кайран калаçатпăр, - терĕ Улхашова.

Ласкин хирĕçлеме те, турткаланса тăма та аптăрарĕ, Уля хыççăн алăкран кĕчĕ. Кларса ахаль шкулта хăнăхнă пек шăв-шав илтĕнмерĕ. Мăн çынсем парттăсем хушшинче питĕ килпетлĕн лараççĕ, пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçаççĕ. Алăкра çав вăхăтра шакла пуçлă, лутрарах тăлпан çын курăнчĕ. Уçăмлă сасăпа сывлăх суннă май вăл куçне йăлтăртаттарса тӳрех класа тĕрĕслесе тухрĕ, сĕтел умне пырса тăрсан, сăмах пуçарчĕ:

- Йыш хутшăннăшăн савăнатăп. Вĕренни пурне те кирлĕ. Пĕлӳшĕн çын хăйех тупать иккен шкул алăкне. Саламлатăп сире, ырă юлташăм. Халĕ урок пуçлăпăр. Эсир те итлесе ларăр. Ирĕк паратăп. Урок хыççăн паллашăпăр.

Хими урокĕ вĕçленсенех Ульăпа Эрхип директор патне пычĕç. Директор унпа кĕскен паллашрĕ, ăна тăххăрмĕш класа йышăнма килĕшрĕ, документчĕсене çитес вăхăтрах шкула илсе килме хушрĕ.

Вĕçнĕ пек сиксе тухрĕç вĕсем пӳлĕмрен, коридор тăрăх хăйсен класĕ еннелле пĕчĕк ачасем пек чупрĕç. Эрхип Ласкин та тек ĕнтĕ вăхăта пустуй сая ямасть, малалла вĕренет.

Кĕçех Уля Эрхипе хăйсен Вăрман урамĕнчех хваттер тупса пачĕ. Пенсие тухнă карчăкпа старик ăна кăмăллăн йышăнчĕç, пӳлĕм уйăрса пачĕç. Ласкин юлташĕсемпе вăрмантан икĕ машина хурăн вутти кăларчĕ. Ватăсем куншăн тем пекех савăнчĕç.

Каçхи шкулта эрнере тăватă кун вĕренмелле. Пилĕкшер урок пулать. Юнкун, шăматкун тата вырсарникун – ирĕклĕ кунсем. Пушă вăхăт каччăн пурĕпĕрех сахал юлать. Çавăнпа вăл кашни сехетпе, минутпа туллин усă курма шутларĕ, хăйне валли кун йĕрки туса хатĕрлерĕ. Акă, çиччĕре тăрать те вăл çур сехет хушшинче гимнастика тăвать, кравачьне тирпейлет, çăвăнать, саккăрччен дневник е сăвă çырать, ĕнерхи хаçатсенчи кирлĕ материалсене вулать, унтан апатланать. Тăххăрччен шăкăр-макăр ĕçсемпе аппаланать. Тăххăртан пуçласа кăнтăрла иртни пĕр сехетчен райкомра ĕçлет. Хĕрĕх минут – апата кайса килме. Унтан çĕнĕ хаçат-журнал пăхса тухать. Иккĕренултă сехетчен каллех ĕç. Тепĕр çур сехет учебниксемпе тата тетрадьсемпе ирттерет. Çирĕм минутра апат çиме ĕлкĕрет. Столовăйĕнчен шкула çитме сакăр минут кирлĕ. Çичĕ сехетре вăл парттă хушшинче ларать. Вунпĕр сехет те вунă минутра вĕренсе пĕтерет. Тепĕр вунă минут киле çитме кирлĕ. Çурçĕр иртни пĕр сехетчен ыранхи уроксене туса ларать, унтан ... çывăрать.

Хăнана пынă Уля кравать пуçĕнче çакăнса тăракан çак кун йĕркипе питĕ кăсăкланса паллашрĕ, аяла "Асăрхаттарни" тесе çырнине сасăпа вуларĕ: "Вĕренмен каçсенче политика тата илемлĕ литература кĕнекисем çине тăрсах вуламалла".

- Эгоист пуль эс, Эрхип, - тутине тăсрĕ хĕр. - Хăвăншăн çеç тăрăшнă пек туйăнать. Мана валли пĕр минут та çуккă-çке кунта?

Каччă ăна ыталаса çамкинчен чуптурĕ те куларах каларĕ:

- Иксĕмĕр эпир ахаль те райкомра час-часах тĕл пулатпăр, пĕрле шкула каятпăр, парттă хушшинче юнашар ларатпăр, алла-аллăн тытăнса таврăнатпăр...

- Юрĕ, эгоист мар эс, Эрхип. Каçар. Санран чăнах та вĕренмелли пур-ха.Хăвăн çирĕп шухăшунтан пăрăнакан ача мар иккен эсĕ. Ман та сан кун йĕркипех пурăнас-ха апла малашне.

- Çирĕп кун йĕркине пăхăнма йывăр та, анчах унпа пурăнма çăмăл.

Пĕрремĕш секретарь Ласкина лаша пăхтарнипех çырлахасшăн мар иккен. Пултарулăхне кура ăна вăл майĕпенех райком ĕçне шаларах туртса кĕме пуçларĕ. Кандидат стажĕ тухнă май Эрхипе парти

членне илчĕç. Çав вăхăтра конференци пулчĕ. Ласкина райком членне суйларĕç. "Комсомол прожекторĕн" штабне ертсе пыма çирĕплетрĕç. Çапла пысăк хуравлăх тиенчĕ ун çине. Мĕн тăвăн, чăтас пулать. Ласкин ӳркенмест-ха, майне-йĕркине пĕлейменни çеç пĕтерет. Штаб членĕсем çиччĕн таранах пур-ха унăн. Уля Улхашовăна та кĕртнĕ унта. Ăна çамрăк рабочисемпе ĕçлекен ушкăна ертсе пыма хушрĕç. Унсăр пуçне ялти çамрăк колхозниксемпе, экономика ыйтăвĕсемпе, йăла тата кану ыйтăвĕсемпе, спортпа, шкулсенчи прожектористсемпе ĕçлекен ушкăнсем йĕркелерĕç, пресс-ушкăн туса хучĕç.

Штаб планĕ тăрăх тĕрĕслӳсем, рейдсем ирттерчĕç. Сатира хаçачĕ валли милици уйрăмĕн çурчĕ çвыăхне витрина вырнаçтарчĕç. Кашни эрнере унта çĕнĕ номер тухса çакаççĕ. Художникĕ питĕ ăстаскер тупăнчĕ. Карикатура айне Ласкин хăй çивĕч сăвăсем çырчĕ. Вăйлах çунтарма тытăнчĕç вĕсем ултавçăсемпе тĕрлĕрен йăх-яха. Витрина умĕнче ялан çын ушкăнĕ. Эрхипе ку савăнтарать. Вĕсен ĕçĕ харама каймасть-мĕн.

Уля Улхашована бюро членне суйланăччĕ. Çавăнпа вăл райкома унчченхинчен те час-часах çӳреме пуçларĕ. Кăнтăрла та, каç та пĕрлех вĕсем. Мĕн тери кăмăллă, савăк иртет вĕсен вăхăчĕ.

Октябрь уявĕ ăшă кун илсе килчĕ. Хĕвел çунтарасла хĕртет. Демонстраци хыççăн Эрхиппе Уля уçăлмалла тесе вăрмана кĕчĕç, хăйсем сисмесĕрех пĕве хĕрринчи мăн тунката умне çитсе тăчĕç. Калаçнă май хĕр хулă пек авăнса илет те ах-ха-аа-ха-а тесе вăрăммăн кулать. Оперăра юрлакан артистка сасса пĕрре çӳлти, тепре аялти пусăмра тăснă пекех илтĕнет çав кулă. Ульăн чуна тыткăнлакан уçă сасси кĕрхи çăра йывăççен ирĕклĕхĕнче янăравлăн аякка, аякка саланать, унтан каялла çинçелсе, амалса ахрăммăн вĕçсе килет: а-а-ха. Çĕнĕрен кулса ярать те вăл... Çав вăхăтра унăн тулли кăкăрĕсем кĕпе айĕнче чĕррĕн хускала-хускала илеççĕ, куçĕ-пуçĕ чарусăррăн чалхăрса каять, шап-шурă вĕтĕ шăлĕсем илемлĕн тухса тăраççĕ, çулланнă тути хĕррийĕсем асамлăн йăлтăртатаççĕ.

Каччăн хĕре çак самантра çинçе пилĕкĕнчен ыталаса илсе хăй çумне çывхартас, кăнтарса тăракан кăкăрĕсене хăй кăкăрĕпе перĕнтерес, илĕртӳллĕ тути хĕррийĕсене хăйĕн çилпе кушăрканă тути хĕррисемпе шăратса çыпăçтарнăн пĕрлештерес килсе кайрĕ. Уля вальс çеммипе çаврăнса, вĕçĕмсĕр кулать. Эрхип хăйĕн тимĕр пек хытнă кĕлеткине ниепле те çемĕçтереймест, чулланнă аллисене çĕклеймест. Хĕр хĕрӳлĕхĕн савăнăç саманчĕпе вăл айккинчен сăнаса кăна иленчĕ. Уля акă тункката çине хăпарса тăчĕ те тăпăр-тăпăр туса ваштăр çаврăнчĕ, унтан Эрхип енне чалт! сикрĕ. Каччă çухалса каймарĕ, вĕçекен хĕре алла ярса илчĕ. Пике унăн тути хĕррисене хĕрнĕ тимĕр пек хĕрӳ тутипе пĕçертнине сиссе те юлаймарĕ йĕкĕт. Тин пуçласа йĕркеллĕ чуптурĕç вĕсем. Чуптăвасса та каччи мар, хĕрĕ хăйса хăй чуптурĕ-çке. Куç хуралса килнипе Эрхип умрине нимĕн те курмарĕ. Куçне уçсан... Ульăн утмăл турат чечекĕ пек кăвак куç шăрçисене вăрахчен сăнарĕ.

"Ăçта-ши, çав куççенче-ши вĕсен юратăвĕ? "Парнеллĕ туй-

ра" çуралнă юратăвĕ? Унтах пулсан, Уля та курать пуль ĕнтĕ каччăн çĕмĕрт тĕслĕ куçĕнче ăна. Ăçтарах-ши, кĕпе айĕнчи çунтаракан, тапакан çирĕп мечĕксенче-ши çав юрату? Унта пулсан? Уля та туять пуль ĕнтĕ каччăн хĕртекен кăкăрĕн хĕрӳлĕхне. Ăçта-ши вăл, вĕсен çуралнă юратăвĕ: куçра-ши, тута хĕрринчеши, хĕвре-ши?" Каччă ăна ăнлансах çитеймест-ха. Хăйне хăйса чуптунă хĕре тепĕр хут хыттăн чăмăртать те ывăç тупанĕсем çине çĕклесе тăратать.

4

Вăрман хĕрринчи урама хăнăхса çитрĕ ĕнтĕ каччă. Кĕтесрен тепĕр çуртĕнче, пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнать Уля. Амăшĕ унăн çамрăклах упăшкасăр тăрса юлнă, тет. Аш-какай комбинатĕнче, кăлпасси тунă çĕрте, ĕçлет. Паян вăл çĕрлехи сменăра иккен. Çавăнпах пуль, Уля качча пӳрте чĕнчĕ. Тулта юрлă-çумăрлă çанталăкчĕ. Шăнма пуçланă Эрхип пусма картлашки тăрăх хĕр хыççăн иккĕмĕш хута хăпарчĕ.

Улхашовсен хваттерĕ самаях аслă. Тăваткал пӳлĕме икĕ кравать, шифоньер, комод, диван лартнă. Уля васкавлăн апат хатĕрлерĕ.

- Сана кухньăнах лартатăп ĕнтĕ, каçар, - тесе килхуçи буфетран пилĕк çăлтăрлă коньяк кĕленчи туртса кăларчĕ. - Аннен запасне кăштах хухтарар-ха. Вĕсене унта ахаль те темĕн чухлех пырса параççĕ. Аш-какай комбиначĕн директорĕпе туслă та вăл, хăрамасть пулмалла. Лар-ха, лар эс, ан вăтан. Атя, паянхи "пиллĕксене" çăвар. Ух, хам та хытах кӳтрĕм, халь те ăшăнса çитейместĕп. Атя, тыт, хăюллăрах пул!

- Ан ятла ĕнтĕ эс мана чăрмантарса çӳренĕшĕн, - именчĕ Эрхип. — Хамран кунашкал хăналасси тахçан пулĕ. Çылăхлă та ĕнтĕ эрехĕ, юрĕ, тутанса пăхăпăр.

Уля черккине çĕклесе каччă черккипе шаклаттарчĕ, эрехе янк тутарса çăвара часрах шоколад татăкки персе хыпрĕ. Уфф! тукаласа тутине пăркаласа илчĕ те вăл черккесене çĕнĕрен тултарчĕ.

- Эп сана ăнланмарăм-ха , Эрхип. Мĕншĕн çылăхлă эрех тата ку пирĕн? - ыйтрĕ Уля.

Вырăнсăр персе янă сăмахшăн хăйне хăй ӳпкелесе илчĕ Ласкин. Чĕлхерен вĕçерĕннине каялла кĕртейместĕн çав. Акă халĕ вăл Уля шухăшне пăтратма пуçларĕ. Эрхипĕн хĕре лăплантармалли тепĕр кирлĕ сăмах каламалла. Пытармасăр, тĕрĕссине пĕлтермелле.

- Эс мана ан кӳрен те, Уля, сан аннӳ, ман шутпа, тĕрĕс мар тăвать. "Вĕсене унта ахаль те темĕн чухлех пырса параççĕ", терĕни-ха? Тем, ахалех памаççĕ пуль çав. Таварпа тавар улăштарни кăна вăл. Эс мана аш е кăлпасси пар, эп сана — коньяк. Çавнашкал йĕрке хуçаланать унта. Патшалăх пурлăхĕпе хăйсенни пек хăтланаççĕ пулас вĕсем. Вăрланиех пулать вĕт вăл. Эпир те, акă, ултавлă майпа тупнă çав эрехе ĕмсе ларатпăр. Мораль тĕлĕшĕнчен...

Уля ăна каласа пĕтерме памарĕ, тепĕр черккине те хăна аллине ирĕксĕрлесех тыттарчĕ, тĕппипе ĕçтерсе ярсан, каларĕ:

- Мораль тĕлĕшĕнчен аптрамасть пек-и? Мораль? .. Эпир курман, илтмен, нимĕн те пĕлместпĕр. Урăх ĕçместпĕр, акă, пăкăласа лартатăп.

- Çапли çаплах пуль те, анчах ку ирсĕр йăлана хирĕç пирĕн кĕрешĕве вăйлатмаллах, Уля.

- Мĕнле йăлана хирĕç?

- Халăх пурлăхне йăкăртакансене ярса илмелле, "Комсомол прожекторĕпе" çунтармалла. Кăкласа пăрахмалла çав тарăн тымара. Енчен те эсĕ, Уля, хăвна чăн-чăн комсомолках тетĕн пулсан, калаçса пăх аннӳпе, ӳкĕте кĕртме тăрăш ăна. Çанăран ярса тытиччен хăвармалла ăна çăлса. Пулăшмалла йăнăшакан çынна.

Уля каччă хулпуççийĕ çине аллисене хучĕ те унăн куçĕнчен çунтарасла пăхрĕ, тути хĕррисене шăлĕпе якатса илчĕ, пуçне пăркаларĕ, унтан хашш сывласа ячĕ:

- Эх-ха-хай, Эрхип. Комсомолка, райком бюровĕн членĕ тесе ман ĕнтĕ аннене хирĕç вăрçă пуçармалла. Çук, пулмасть манран унашкал хăтланасси, çывăх çынпа çапăçасси. Анне вĕт вăл. Мана çуратнă, мана аттесĕр ӳстернĕ, мана пурнăç çулĕ çине тăратнă. Çук, эпĕ унăн ĕçне, хăтланăвĕсене, çыхăнăвĕсене тĕкĕнместĕп. Сана та тĕкĕнме хушмастăп. Ан тив, хăтланччăр хăйсем пĕлнĕ пек. Пирĕн ĕç çук унта.

- Мĕнле пирĕн ĕç çук?! - сиксе тăчĕ Ласкин.

- Çуккă, Эрхип, лăплан, çуккă вĕсемпе пирĕн нимĕнле ĕç те. Эпир хамăр иксĕмĕр пĕлнĕ пек пурăнар. Юрать-и? Мĕн тума чĕрре кĕрсе кăмăла хуçас? Хамăрăнне çеç мар, çынсенне те. Тархасшăн ан тив çав аш-какай комбинатне. Унта ман чи çывăх çынсем, аннепе директор ĕçлеççĕ. Пĕлетĕн-и? Чи ырă, чи кăмăллă çынсем. Атя, манар ку калаçăва. Эпир халĕ пĕрле, юнашар...

Хĕр ăна хăйех хваттере чĕнни, хăй тĕллĕн пуçарса пĕчĕк ĕçкĕ пекки туни, тивĕççĕр ĕçсемпе хăтланакан амăшне чунтанах хӳтĕлени Эрхипе шутсăр тĕлĕнтерчĕ. Çитменнине тата Уля унăн шухăшне урăх çул çинелле тĕртсе кĕртесшĕн. Эрменсен эрехĕ пуçа кайнипе вăл кăшт хăюлланчĕ, çапах хĕрне темшĕн пилĕкĕнчен ыталаймарĕ, аллинчен кăна ярса тытрĕ. Сехет иккĕ çапсан каччă тумланма пуçларĕ. Уля умне пырса тăчĕ те каллех ун куçĕнчен кушак çури пек ачашшăн пăхрĕ. Хĕрĕн хĕрӳ хĕмлĕ, ыйтуллă куçне хирĕç чăтаймарĕ вара, йĕкĕт ăна ыталаса илчĕ.

- Ан кай, Эрхип, çывăр кунтах? Пĕччен пăрахса ан хăвар ĕнтĕ мана çак чул читлĕхе, - пăшăлтатрĕ хĕр.

Çак сăмахсене илтнипе Эрхип сехĕрленсе ӳкрĕ: амăшĕ таврăнма пултарать вĕт! Мĕн калĕ вăл? Хăваласа кăларса ярĕ.

- Эй, çук, Уля, сире тăвăрлас мар. Аван-и тата? Хăвна та кӳршĕсем тем калĕç. Ирпе эп тухса кайнине пурпĕрех кам та пулин куратех, - пуçĕнчен шăлса ачашларĕ хĕре Эрхип.

- Юрĕ апла... - ытамран карт! вĕçерĕнсе аяккалла пăрăнса тăчĕ Уля. - Юрĕ. Мана çапла хисеп тунăшăн, намăсран хăтарнăшăн, тавтапуç. Тĕрĕссипе эпĕ сана, Эрхип, юри кударăм çывăрма юл тесе. Мĕн хăтланать-ха ку, терĕм. Тĕрĕслесе пăхас килчĕ. Çирĕп çын ик-

кен эсĕ. Хĕр сĕнĕвĕпех ирĕлсе каймастăн. Чипер çит. Лăпкă çывăр. Тĕлĕкре мана кур.

Хĕрĕн куçне тунсăх чаршавĕ карăннине асăрханипе каччăн чĕри пăталанă пек ыратса кайрĕ, вара вăл, ăна ырă каç сунса, алăк хăлăпĕнчен ярса илчĕ.

Хваттерне кайса ватă çынсене ыйхăран вăратас темерĕ вăл, райком еннелле шухăшласа утрĕ: "Чăннипех çывратасшăнччĕ-ши эсĕ мана мамăк тӳшек çинче? Мĕн амакĕ пырса кĕчĕ-ши сан пуçна икĕ черкке коньяк ĕçнĕ хыççăн? Мĕншĕн килĕшмерĕм-ха эпĕ? Сехĕрлентĕм-ши? Мĕнрен: хĕр хăюллăхĕнчен-и е хĕрĕн амăшĕнчен? Капла малашне мемме, çулламан пăру теме пуçлăн эс. Чăн та, хăюлăха çухатакан пĕтĕмпех çухатать, тет. Унта çывăрма килĕшнĕ пулсан?.. Мĕн пулса тухма пултаратчĕ-ха? Пĕлме çук. Шанма çук. Хĕври юрату кăварĕ теме те ирĕлтерсе ярĕ. Юрать-ха тавçăрса илтĕн, юри каларăм тесе суйса хутăн. Çук, ĕненмерĕм сана, Уля. Мана хăварасшăнахчĕ эс. Санăн манпа йăпанас, пĕрле пулас, пĕрле калаçас килнĕ. куçунтанах паллăччĕ, кĕлеткӳн çемçелĕхĕнченех сисĕмлĕччĕ. Юрĕ, кӳрентертĕм пуль сана, Уля. Анчах ман темшĕн васкавлă савăнăç туйăмне пусарас килчĕ-çке. Ĕлкĕ-рĕпĕр-ха, çитĕпĕр ун патне те. Вĕçме хатĕрленнĕ кайăк пек вăл ниçта та тухса тармĕ".

Райком картишне çитсен Ласкин вите алăкне уçса кĕчĕ те Çилçуната хунарпа çутатса пăхрĕ. Хуçине палланă лаша тулхăрса илчĕ, выртакансҫкер, çăмăллăн ура çине сиксе тăчĕ. Эрхип урхамаха ачашла-ачашла сасăпах калаçрĕ, унтан кĕтесри улăм çине выртрĕ те часах çывăрса кайрĕ. Ирчченех вăл тĕлĕкре Ульăпа аташрĕ. Уля ăна сивĕ урайне вырттарнă та, хăй мамăк тӳшек çинчен урисемпе вылятса пăхса выртать пек. Эрхип çĕкленесшĕн, анчах кĕлетки пăталанă пек вырăнтан та хускалмасть. Хĕр ахăлтатать:ах-ха-а-аах-ха...

Тепĕр кунне Эрхип Уля кăмăлĕн сивлекне шкулта сисрĕ. Каччăн сехет çукчĕ. Туянмашкăн укçа çитместчĕ. Костюм валли тесе пухма пуçланă-çке укçине. Эрхип унран вăхăт ыйтрĕ.

- Мĕн тума кирлĕ-ши куна вăхăт? Ăçта, аннӳ патне чĕчĕ çиме васкатăн-им? - тӳрккессĕн каласа хучĕ хĕр.

Йĕкĕт нимех те шарламарĕ, физика учительне малалла тăнларĕ. Занятисем пĕтсен вĕсем шкултан пурпĕрех пĕрлех тухрĕç-ха, урамра юнашарах утрĕç. Çапах темшĕн унченхи пек кăмăллă, уçă калаçу юхмарĕ вĕсем хушшинче. Аптăранă енне Эрхип сăвă вулама пуçларĕ:

Шурăмпуç çуталчĕ
Анлă тухăçра,
Măн ĕмĕт çуралчĕ
Çамрăк пуçăмра.

- Мĕнле ĕмĕт-ши? - тин кулса ячĕ Уля.

Эрхип малалла вуларĕ:

Ман вĕçсе каясчĕ
Тĕнче уçлăхне.

- Мĕн тума пĕлĕттĕн-ши эсĕ унта, Эрхип? Марсианкăсем тытса ыталасран сехĕрленнипе Çĕр çине персе анăн та...

Çĕн çăлтăр çутасчĕ
Уля ятĕнчен...

- Чăнах-и? Вĕç-ха апла часрах. Çут ман çăлтăра! Вĕç! - кăмăлĕ çĕкленнипе çӳлелле хăлаçланчĕ Уля.

- Хулăн тетрадь сăвви ку, - пĕлтерчĕ Эрхип. - Пĕчĕккĕн тулать. Телей çăлтăрне çутасса вара эпĕ шанатăп. Ăна эпĕ Улина ятлă хурăп. Эх, ялкăштăрччĕ вăл хĕмлĕн, хăватлăн! Пĕтĕм тĕнчене çутаттăрччĕ.

- Тетрадь тулнăшăн савăнатăп, - каччă хулĕнчен уртăнса ланкашка урлă сикрĕ Уля. - Çыр. Татах çыр. Сăввусем кăмăла каяççĕ. Унта эсĕ хăюллă, уçă саслă. Манпа пĕрле чухне çеç вăтанчăк хĕртен те вăтанчăкрах. Çут. Телей çăлтăрне те çут. Пултарсан...

- Сăпайлă пулни япăх-шим вара?

- Лайăххи — лайăх та... Анчах, хăюсăра хăю лекмен тет, - малалла чупса кайрĕ Уля.

Йĕкĕт ăна часах хуса çитсе аллинчен тытса чарчĕ:

- Эсĕ мана ĕнерхишĕн тĕксе пыратăн-и?

Уля чĕнмесĕр тутине тăсрĕ.

Сивлек туйăм кĕрхи çилпе вĕçсе кайрĕ пулас. Ун пирки вĕсем кĕçех манчĕç. Водокачка пĕвинче каток уçсан, унта конькипе ярăнма çӳрерĕç. Хушăран хырлăхра йĕлтĕрпе чупрĕç.

5

Хĕл иртни те, çуркунне çитни те сисĕнмерĕ вĕсемшĕн. Эрхип вăл вăхăталла тинех хура пуставран çĕленĕ костюм илсе ячĕ - хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕрремĕш костюм. Сехет те пур халь унăн - "Çиçĕм" ятлăскер. Лапшакаскерне шăлавар кĕсйине чиксе çӳрет. Уля тантăшĕ Эльвира та тек "кĕсре ямшăкĕ" тесе кулмасть ĕнтĕ унран. Райкома газик пачĕç. Чун каниччен чупрĕ, хĕрсене те лартса катаччи чуптарчĕ Эрхип. Ватăла пуçланă Çилçуната аш-какай комбинатне ăсатнă чухне каччăн куçĕ шывланчĕ. Мĕн тери çывăх хăнăхса çитнĕччĕ вăл çак шурă лашана. Килти выльăх пекех туйăнатчĕ. Лаша çинче утланса пыраканскер вăл çĕвĕ фабрики тĕлне çитсен чӳречерен такам кăшкăрса чĕннине илтрĕ.

- Эй, Санчо Панса! Дон-Кихотна çухатрăн-им?

Эрхип çаврăнчĕ те чӳречере Эльвирăн лăпсăркка пуçне курчĕ. Акă ун çумне Уля пырса тăчĕ, тантăшне аяккалла тĕртсе ячĕ те:

- Эс ан çиллен, Эрхип. Куншăн хамах айăплă. Сервантесăн "Дон-Кихотне" вулама патăм ăна, авă, епле вуланă вăл, епре. Тăхтạ, эс пире лаша çине утлантарса чуптар-ха пĕрре, - терĕ.

Каччă Уля сĕнĕвĕпе ухутах пулчĕ, Çилçунат чĕлпĕрне сулахаялла туртрĕ, çул урлă каçса картишне кĕрсе кайрĕ. Хĕрсем сиксе тухрĕç. Эрхип вĕсене хăй умне черетпе лартса çӳрерĕ.

- Ăçта кайма тухнă эсĕ? - ыйтрĕ Уля.

- Çилçуната аша кайса паратăп, - тесе хаш хуйхăрчĕ Эрхип.

- Аша? Ан ухмахлан-ха. Çак урхамаха пусмалла-и вара? Эй, турă. Çĕре антар-ха мана? Хамăр директорпа калаçса пăхап. Лаша кирлĕ тетчĕ вăл.

Эрхип ăна çăмăллăн çĕклесе çĕре антарса тăратрĕ. Ун вырăнне туххăмрах Эльвира чакаланса хăпарса ларчĕ. Иккĕшĕ картиш тавра çаврăм тунă çĕре Уля хăйсен хуçине чĕнсе тухрĕ. Директор лаша шăлĕсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн вĕсене анма ыйтрĕ. Эрхип чĕлпĕре юпаран çыхса директор хыççăн утрĕ. Лешĕ, хăйĕн пӳлĕмне кĕрсен, райком секретарĕ патне шăнкăравларĕ. Вĕсем иккĕшин хушшинче часах выльăх сутти туса калаçса татăлчĕç. Эх, епле савăнчĕ Çилçунатшăн Эрхип! Мăйĕнчен ыталаса, кăлкан çилхипе выляса, çамкинчен чуптусах уйрăлчĕ вăл унран. Ульăна чĕререн тав турĕ. Енчен те хĕрсем çав вăхăтра асăрхаман пулсан-и ăна? Çилçунат тирне сӳсе те çакатчĕç пуль. Халĕ вăл чĕрĕ! Пурăнтăр кăштах, усă патăр çынсене.

Çимĕкре Эльвира качча тухрĕ. Ĕмĕтленнĕ пекех пуян çын тупнă Уля тантăшĕ. Райпотребсоюз председателĕн ачипе пĕрлешрĕ. Кунашкал чаплă туй Ласкин курманччĕ-ха. "Вăт Эльвирăн пурнăçтăк пурнăç пулать", - тесе Уля Эрхипе туйран вăрманалла туртрĕ. Хăйсем кăмăлланă вырăна çитсен хĕр тунката çине хăпарса тăчĕ те ташша ячĕ. Каччи алă çупса тăрать. Ташлама чарăнсан Уля Эрхипе куç айĕн пăхса каларĕ:

- Хама хам эп çакăнта çав тери савăк туяăп. Чунăма уçса парас килет паян сана. Эх, Эльвирăпа упăшки çине пăхса лартăм-лартăм та, хамăн та çемьеллĕ пулас килсе кайрĕ. Качча каяс та пĕреххут, ачасем çуратас, ӳстерес вĕсене, çын тăвас вĕсенчен. Эрхип, мĕншĕн тăсмалла-ха пирĕн çак вăхăта? Авланма пултаратăн вĕт эсĕ? Кала тĕрĕссине! Ахаль те мĕн чухлĕ савăк самант хыçала тăрса юлчĕ... Усă курмасăр ватăлать пирĕн телей. Эх, мана, пакăлтие. Ухмах тесе ан шутла. Чăнах, качча каяс килет ман...

Эрхип ăна алă çине çĕклерĕ, тутинчен чуптуса юнашар тăратрĕ, унтан, пуçне чиксе, хуравларĕ:

- Авланма, ăна, ман хамăн та авланас килет пуль-ха. Çапах та хатĕр-ши эпир çемье чăмăртама? Сана мĕнле те, мана вара çакă хытах шухăшлаттарать. Ман халлĕхе хваттерĕ те, укçи-тенки те, çи-пуçĕ те çук та... Хам аран-аран сапланкаласа пурăнаканскер, арăма, ачасене тăрантарса тумлантарма пултарайăп-ши?Нуша урапи çине ларсан... Унтан анаймăпăр та кайран. Тен, кăштах тăхтар. Теппрер çулталăк... Унтан мĕн курăнĕ пурнăç çулĕнче. Юрату, вăл, пур юрату, чĕрĕ юрату, сӳнмĕ.

Уля пуçне аяккалла пăрчĕ, яланхилле тутине тăсрĕ:

- Эс пĕрмай çапла. Нумай шухăшлатăн, нумай палăртатăн. Вăтанатăн, хăратăн... Пĕртте Эльвира упăшки пек мар. Вăл хĕрпе паллашса пĕр уйăхра арăмлă пулчĕ. Эпир...

- Ăçта васкас, Уля? Чăтар ĕнтĕ кун чухлĕ чăтнине. Йĕркеллĕрех пурăнма тытăнсан, хамăрах лайăх.

- Аптрамалла санпа, Эрхип. Авланма сана хваттер, вӑрӑм укҫа, чаплӑ ҫи-пуҫ кирлӗ. Ман шутпа, авланма та, качча кайма та кирлӗ мар вӗсем. Пӗрлешме, ӑна, ак ҫак тунката ҫинче те пулать пуль пӗр-пӗрне юратакан ҫынсен? Ма вара туйӑма япалапа ҫыхӑнтарас? Пултарнӑ вӗт эп сан арӑму пулма, тахҫанах пултарнӑ. Ак ҫакӑнта чи малтан килнӗ каҫах. Хамӑр патра коньяк ӗҫнӗ каҫах. Ҫилҫунат витинче ирччен пупленӗ каҫах... Тулӗккӗш, эс хӑюсӑр пулнипе, эс хӑраса ӳкнипе эпӗ халӗ те сан арӑму мар. Сан юратнӑ хӗрӳ ҫеҫ. Пӗлетӗн-и, ӑнланатӑн-и, ман качча каяс килнине?..

Эрхип эрехпе хӗрнӗ хӗрӗн ҫак хӑюллӑ сӑмахӗсенчен пушшех именчӗ пулас, вӑтаннипе уҫҫӑн нимех те пӗлтереймерӗ ӑна. Ульӑн ҫакӑн хыҫҫӑн савӑнӑҫ ҫӑлтӑрӗ сӳннӗ пекех пулчӗ пулас. Сӑнӗ улшӑнчӗ унӑн, вара вӑл шӑппӑн аяккалла уттарчӗ. Эрхип ун хыҫҫӑн пычӗ, сукмакран аяккарах пӑрӑнса чечек пуҫтарчӗ, урам пуҫӗнче ӑна хулӗнчен ҫитсе тытрӗ. Уля каччӑ сӗннӗ чечек ҫыххине илме хирӗҫлемерӗ, уншӑн тав туса пуҫӗпе сӗлтрӗ. Халӗ ӗнтӗ Эрхип хӑюлланчӗ, ун умне тӑрсах сӑвӑ каларӗ:

Саншӑн, тантӑш, татрӑм лантӑш
Ешӗл вӑрманта.
Йӑл-йӑл култӑн, хапӑл пултӑн
Парнене чунтан...

Уля ӑна хулӗнчен тытса малалла уттарчӗ, кӑмӑлӗ уҫӑлнӑскер, хаваслансах каларӗ:

- Ахалех эсӗ сӑвӑ ҫырма пултараймастӑп тесе кутӑнлашатӑн, ман тетраде юри тултарасшӑн мар пулас.

- Тултарма тултарӑп-ха, анчах нумай кӗтмелле пулать-ҫке. Ытла вӑрах, йывӑррӑн шӑранаҫҫӗ йӗркесем. Итле, паян кӑна пуҫра ҫуралнӑскер ку:

Хура куҫлӑ йӗкӗт пӗринче
Хӑйӗн чун савнийӗ ячӗпе
Ҫутма пулнӑ ҫӑлтӑр тӳпере...

Уля ку сӑвва чӑн та пуҫласа илтет. Улина ятлӑ телей ҫӑлтӑрне ҫутатӑп тесе шантарнӑччӗ вӗт вӑл. Ҫавна аса илтерет мар-и ӗнтӗ хӗре.

- Пирӗн репетицине ҫитмелле вӗт. Чӗрӗк сехет ҫеҫ юлнӑ.Васкар! - тесе Уля Эрхипе малалла туртрӗ.

Кӗске урам тӑрӑх чукун ҫул хӗрне вӗсем часах чупса ҫитрӗҫ, тавар тиенӗ пуйӑса ирттерсе ячӗҫ те вокзал патне каҫрӗҫ, каллех урампа чупрӗҫ, редакцие вӑхӑтрах ҫитрӗҫ. Райхаҫат редкаторӗ полиграфистсемпе журналистсен хорне йӗркеленӗччӗ. Унта вӑл комсомол райкомӗнчи ҫамрӑксене те чӗнчӗ. Хора хутшӑнма Ульӑпа Эрхип те килӗшрӗҫ. Хор ялсенче, хими завочӗн клубӗнче, районти Культура ҫурчӗн сцени ҫинче хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартрӗ. Кӳршӗ района та ҫитсе килчӗҫ, республикӑри ӗҫпе юрӑ уявне хутшӑнма тивӗҫ пулчӗҫ.

Шупашкара пуйӑспа ҫитсен, вӑрнарсене пӗрремӗш номерлӗ

шкула вырнаҫтарчӗҫ. Вӗсене пулӑшма Чӑматанов хушаматлӑ мусыкҫӑ пычӗ. Репетицисем пуҫланчӗҫ. Юрлас вырӑнне кулас килет Эрхипсен. Дирижер аллисемпе хӑлаҫланса пит-куҫне камитҫӗ пек туса хурать те... Хор юрласа ярать:

Вӑй-хал хурсан, пурнӑҫ пулать.
Эй, атьсемӗр, тантӑшсемӗр...

Ҫав вӑхӑтрах Чӑматанов шӑлаварне йӑшт ҫӳлелле туртса хӑпартать, пит-куҫне пӑрӑҫ ҫинӗ пек пӑркалантарса илет. Нумайӑшӗ ахӑлтатса кулса яраҫҫӗ. Дирижер юрра ҫӗнӗрен пуҫлать:

Вӑй-хал хурсан, пурнӑҫ пулать...

Ҫур кун юрласан тин хӑнӑхса ҫитрӗҫ вӗсем ҫак камитҫӑ сӑнлӑ ҫын хусканӑвӗсене. Йӗркеллех тухаҫҫӗ-мӗн юррисем, халӑх умӗнче намӑс курас пек мар. Каҫпа уҫӑлма эртелпе тухрӗҫ, унтан Атӑл хӗрне кайрӗҫ. Кунта вӗсем карталансах, юрла-юрлах тӑвалла утрӗҫ:

Тантӑшсене пухрӑмӑр, пухрӑмӑр,
Атӑл хӗрне тухрӑмӑр, тухрӑмӑр...

Ыран кӑтартмалли сценӑна пурте тепӗр хут аса илсе пычӗҫ. Майӗпен Эрхип Ульӑна хыҫаларах та хыҫаларах хӑварса пычӗ те ушкӑнран тӑрсах юлчӗҫ вӗсем. Ҫыран хӗррипе ҫӳлтен аялалла, аялтан ҫӳлелле миҫе хут хутламарӗҫ пуль хӗрпе каччӑ, шкула ир енне тин таврӑнчӗҫ.

Уява хутшӑнакан "артистсене" Советсен ҫурчӗ умне йӗркипе тӑратса тухрӗҫ, унтан вӗсем урампа Лакрей вӑрманне ҫити ҫурран утрӗҫ. Чӗрере хаваслӑх туйӑмӗ. Кану паркне кӗрсенех сылтӑм енче сцена пур. Полиграфистсемпе журналистсен хорӗн ҫавӑнта юрламаллаччӗ. Вӑрнар ятне ярас мар тесех тӑрӑшрӗҫ пурте. Хисеп грамоти илсе таврӑнчӗҫ вӗсем Шупашкартан. Тӑван республика уявӗ питӗ савӑк иртрӗ.

6

Ҫу кунӗсем ытла та кӗске-ҫке. Сиссе те юлаймарӗ Эрхип Ласкин вӗсем хыҫала тӑрса юлнине. Ҫӗнӗ машинине лайӑх пӑхать вӑл. Унпа чупас текенсем нумай. Пӗрмай ял тӑрӑх ҫӳреҫҫӗ райком ҫыннисем. Пӗрремӗш секретарь никама та пӳлӗмре лартмасть. Юлашки пленума вӑл Эрхипсен колхозӗнче ирттерчӗ. Уля Улхашова та бюро членӗсемпе пӗрле президиумра ларчӗ. Пленум хыҫҫӑн Эрхип ыйтнипе вӑл каҫчен яла юлчӗ.

Ласкинсен килӗ ҫырма хӗрринче. Пӳрчӗ кивӗскер, сарайӗ. улӑмпа витнӗскер. Ун ҫумӗнче кӗлет пекки пур. Кӑшт аяккарах мунчапа лаҫ лараҫҫӗ.

Амӑшӗ хӗрпе килнӗ ывӑлне хирӗҫ тухсах кӗтсе илчӗ. "Пӳрт-ҫурт та таса мар, ма маларах систермерӗн" - тесе хыпӑнса ӳкрӗ. Йӑрӑ хӗрарӑм калаҫнӑ хушӑрах хӑнана тӗпелелле иртсе ларма та пулӑшрӗ, сӗтел ҫине апат-ҫимӗҫ хатӗрлеме те ӗлкӗрчӗ. Кӑмакара пӗҫернӗ аш

яшки Ульӑшӑн нихҫан тутанса пӑхман апат пекех туйӑнчӗ. Эрхип амӑшӗ сӗннӗ кӑпӑклӑ сӑрана хӗр тутанса ӗҫрӗ.

Тулалла тухсан, амӑшӗ Эрхипрен ыйтса пӗлчӗ-пӗлчех:

- Ывӑлӑм, ҫакӑ пулать-и сан Вӑрнар хӗрӗ?

- Ҫакӑ, анне, ҫакӑ, - вӑтанчӗ Эрхип, - шӑпах ҫакӑ ӗнтӗ вӑл кинӳ пулмалли.

- Хӑвӑра хӑвӑр килӗштеретӗр-тӗк, пӗрлешӗр. Авланма чармас. Туйне хатӗрленкелесе тӑвӑпӑр. Халь ӗҫ вӗҫленнӗ, ерҫнӗ. Мана килӗшет хӗрӳ. Кӗлетки ҫирӗп. Сӑнӗ пур. Калаҫнинчен, кӑмӑлӗ те аван пек.

Эрхип амӑшне такам илтесрен хӑранӑ евӗр пӑшӑлтатрӗ:

- Мана качча тухма хатӗрех вӑл, анчах эп хам тӑхтас тетӗп. Пурпӗрех ялта пурӑнма килӗшмест Уля. Ман Вӑрнарта хваттер ҫук. Вӗсен хӑйсен пӗр пӳлӗм ҫеҫ. Малалла вӗренес те килет тата... Ҫавӑнпа васкама шутламастӑп. Ҫын ӗретлӗрех пурӑнма пуҫлар-ха, анне. Унтан куҫ курӗ.

- Ҫапли ҫапла пуль те, ывӑлӑм. Вӑраха тӑсса пырсан-пырсан, тупнӑ телее ҫухатасран та хӑрататть. Юратнӑ ҫын ялан тӗл пулмасть вӑл. Юрӗ ӗнтӗ, хӑвӑнне ху пӗл. Ман та ҫынсем пек кин кӗртсе ачапӑча курас, вӗсене пӑхас килет те ҫав...

Амӑшӗ лаҫрах юлчӗ. Эрхип пӳрте кӗчӗ. Уля сӗтел хушшинчен тухнӑ иккен, тӑрӑхла тӗкӗр умӗнче капӑрланса тӑрать. Ҫӳҫне майланӑ май вӑл кӑштах каҫӑрӑлнӑ. Кӗпи ҫӳлерех ҫӗкленнипе тулли пӗҫҫисем ҫуталса тухса тӑраҫҫӗ. Ахаль те авӑнчӑк пилӗкӗ тата шаларах путса кӗлеткине пушшех илемлетет. Хӑй ҫине каччӑ пӑхнине асӑрханӑ хӗр йӑл кулчӗ те аллисене ҫӗрелле усрӗ. Асамлӑ кӗлетке ҫийӗн пурҫӑн кӗпе вӗтӗ хумлӑн чӗтренсе илчӗ. “Кил кунта, санӑн вӗт эпӗ, пӗтӗмпех санӑн. Йӑт та вырӑн ҫине илсе ларт мана. Ирччен арӑму пулӑп. Кил хӑвӑртрах?” - теессӗнех туйӑнчӗ ӑна Уля. Анчах хӗр ҫӑварӗ уҫӑлмарӗ. Куҫӗ ҫеҫ йӑлкӑшса ҫунчӗ. Хыҫалта амӑшӗн ура сассисем илтӗнчӗҫ.

Ҫула тухсан Эрхип калаҫу пуҫарчӗ:

- Эпӗ ача чухнех тинӗс ҫинчен кӗнеке вулама питӗ юрататтӑм. Флота лекес ӗмӗт пурччӗ - лекеймерӗм. Салтакра пӗрле пулнӑ юлташ халӗ Ригӑна чӗнет. Вӑл унта пӗлтӗрех моряксем хатӗрлекен аслӑ шкула вӗренме кӗнӗ. Эпӗ те ҫавӑнта каясшӑн.

- Ан лӗпӗртет-ха пустуй. Мӗнле тинӗс? - кӗтмен ҫӗртен илтнӗ сӑмахпа хумханса ӳкрӗ Уля.

- Ҫавӑн пек тинӗсех. Кӑвак тинӗсех. Океан, эппин. Куҫпа виҫсе илейми вӗҫсӗр шыв. Карап урлӑ ҫӗкленсе саланакан хумсем. Романтика.

- Парап, ак, сана романтика. Кӑтартӑп кӑвак тинӗс. Сан валли, вӑн, уйра хумханать сарӑ тинӗс. Куҫпа виҫсе илейми пуянлӑх. Аттестат илсен, кӗр те ялхуҫалӑх интитутне, вӗрен, пул агроном, пуҫлӑха тух. Вӑт сан тӗллевӳ ӑҫта пулмалла.

- Вӗренсе пӗтерер-ха малтан каҫхи шкулне, - лӑплантарчӗ Эрхип хӗрсе кайнӑ хӗре. - Ку, тен, пустуй пакӑлтату кӑна пирӗн. Тем кӗтет пире умра. Тем тинӗсӗ.

- Тем курас пулсан та, куççуль тинĕсĕ курас марччĕ, куççуль тинĕсĕнче ишес марччĕ, - тесе калаçăва урăх еннелле пăрчĕ Уля.

Ласкин "Комсомол прожекторĕн" штабне канăçа пĕлмесĕрех ĕçлеттерчĕ. Штаб членĕсем питĕ çивĕч, талпăнуллă ачасем пулчĕç. Çиччас рейд ирттереççĕ те, йĕркене пăсакансене сатира хаçатĕнче çунтараççĕ. Аш-какай комбинатĕнче те хăшне-пĕрне тĕпĕртеттерсе илчĕç. Аш пĕçертсе тухакансем хушшинче Уля амăшĕ те "прожектор" çутине лекрĕ. Темиçе хутчен те асăрхаттарнă-мĕн ăна унччен те. Хальхинче милици аллинех пачĕç. Айăплисене суд турĕç. Улхашована та айăпларĕç. Ун хушаматне асăнмасăр хаçат кăларма май çукчĕ ĕнтĕ. Кулăшла ӳкерчĕк айне хальхинче райхаçат поэчĕ çырнăччĕ.

Ун çинчен пĕлменни Вăрнарта çукрахчĕ пуль. Шкулта та калаçу хĕрнĕччĕ. Уля класа пуçа чиксе пырса кĕчĕ. Уроксем пĕтиччен те сăмах хушмарĕ вăл Эрхипе. Киле кайма тухсан, пурпĕрех юнашар утма килĕшрĕ, каччине çав хаçат умне çитерсе тăратрĕ.

- Эс ма ман аннене тĕнче умĕнче намăс кăтартан, э? Кала-ха! - тарăхнипе хыттăнах каларĕ хĕр. - Ну-ка, илсе пăрах! Чĕрсе пер! Ыранах пĕрремĕш секретарь патне пыратăп. Пурпĕр илтеретĕп. Илтетĕн-и, илтеретĕп?!

Эрхип ăна лăплантарма пăхрĕ:

- Шăпрах-ха эс. Пустуй ан хăлтăклан. Ăнлан малтан. Эс хăв та комсомолка. Бюро членĕ. Сан хăвăн та кĕрешмелле вăрăсемпе.

- Аха, эс ман аннене вăрă тесшĕн-и? Ман анне вăрă-и? Пурте йăтаççĕ унтан. Мĕн, сан шутупа аш-какай комбинатĕнче шулĕксем çеç ĕçлеççĕ-им? Нимле шулĕксем те мар вĕсем — йĕркеллĕ этемсемех.

- Епле вăрăсем мар? - тĕлĕнчĕ Ласкин. - Патшалăх япалине киле çаклатса пыракан çын кам пулать вара? Вуншар, çĕршер килограмм аш-какай, кăлпасси пĕçертеççĕ пать те... Сан аннӳ те, авă, пĕр пăт кăлпассипе тытăннă. Ман шутпа, вăл та вăрă. Тĕп-тĕрĕсех çырнă.

- Сăввине епле тăрăшса ярăмларăн-ха? Ух, сана! Тек ан пыр пирĕн пата. Ура ярса ан пуснă пултăр "вăрăсен" картлашки çине. Эпир сансăрах чипер пурăнатпăр. Хамăртан кулакан кирлĕ мар пире. - Намăс халь мана урама тухма та, шкула пыма та. Эй тура, мĕн туса хутăн эсĕ, Эрхип, - нĕшĕклетрĕ хĕр.

- Эс айăплă мар вĕт уншăн. Ачи ашшĕ-амăшĕшĕн хурав тытмасть.

- Сана, мĕн. Эс хăнăхнă унашкал хаçат кăларма. Паян ман аннене намăслантаратăн, ыран — теприне. Кулса çеç çӳретĕр.

- Тĕрĕс мар ăнланан эс, Уля. Вăрлакана ăна алăран ярса илсессĕн ун çинчен мĕнпур халăха пĕлтермелле, хытă питлемелле. Ыттисене асăрхаттармалла. Халăх куçĕ çитĕр, халăх куçĕ çунтартăр унашкаллисене. Çавăн чухне кăна пирĕн ĕçĕсен усси пулĕ.

- Юрĕ, усă турăн ĕнтĕ халь. Анчах та ман анне сана куншăн пурпĕр каçарас çук. Усал вăл. Куçĕ тĕлне ан пул.

- Апла ман унран хĕр ыйтса качча илесси те пулмĕ...

- Калама пултараймастăп. Хам эп унран иртме шутламастăп, - çапла каласа чупсах кайрĕ Уля.

Каччă шăхăркаласа урампа утрĕ.

7

Вăхăт çитменнипе вĕренмешкĕн тем пекех йывăр пулчĕ пулин те Эрхип Ласкин каçхи вăтам шкулта лайăх паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пычĕ. Нимĕç чĕлхи малтантарах такăнтаратчĕ те, майĕпен ăна та çĕнтерчĕ. Ĕçре те ăнсах пыратчĕ-ха. Пĕрремĕш секретарь ăна, вăтам шкул пĕтерсен инструктора лартма, авлансан хваттер пама пулчĕ. Хавхалану пысăкчĕ унăн.

Акă, юлашки экзамен та ăнăçлах иртрĕ. Çав кунах вĕсем, каç пулттипе, вăрманти пĕве хĕрринче юлашки хут эртелпе тĕл пулса савăнмашкăн килĕшсе татăлчĕç. Вĕрентекенсене те чĕннĕччĕ. Купăсçă та хăйсем хушшинчех тупăнчĕ. Хавас кĕвĕпе юрларĕç, ташларĕç. Пурте кăмăллăччĕ. Уля сăн-питĕнче çеç Эрхип тунсăх палли асăрхарĕ. Кулли те паян унăн темшĕн яланхи пек чĕрене пырса тивмест. Юрри те уçăмлах тухмасть. Хăйсен тункати патне кайма та, сукмакĕпе утма та килĕшмерĕ вăл, юлташсемпе поселока таврăнчĕ.

Юлашки вăхăтра хĕр питĕ шухăша кайса çӳренине каччă сисрĕ. Вăл унран мĕншĕн ютшăннине те ăнланчĕ. Уля пĕрре амăшĕ пирки кӳренчĕ, тепре... Эрхип Тинĕс флочĕн аслă шкулнех вĕренме кĕресшĕн-çке. Шухăшне улăштарма шутламарĕ каччă: хĕрĕ ӳкĕтлесен те, пĕрремĕш секретарь пысăк малашлăх шантарсан та. Никама та суяс темерĕ, хăйĕн çирĕп сăмахнех каларĕ: Ригăнах каятăп.

- Чăнах каятăн апла, Эрхип. Пăрахса хăваратăн мана,- миçе хутчен пуçармасть пуль ĕнтĕ хĕр çак калаçăва.

- Тӳрех тинĕсе, океана тухса тармастăп вĕт эпĕ, Балтика тăрăхне, хулана çеç каятăп. Каникула Вăрнара килетĕп. Эсĕ те унта пырса курма пултаратăн. Уйрăм пурăннипе юрату пушшех çирĕпленет, тет. Тĕрĕслесе пăхар хамăрăн юратăва. Мĕне тăрать вăл, мĕнле çирĕплĕхпе савăнтарать пире.

Уля хаш та хаш сывласа шанчăксăррăн калать:

- Телейлĕ шăпа мар манăн. Эс вĕренсе тухиччен ман тăватă çул тунсăхламалла. Вĕренсе тухăн та хăвăн кăвак тинĕсне тухса кайăн. Ман уйăхĕ-уйăхĕпе çыранра кĕтмелле пулать. Чарлансен сассине итлесе йăпанса пурăнмашкăн пымалла-ши ман унта? Тăварлă шывпа тăварлă куççуле çуса тасатмашкăн ĕмĕтленмелле-ши? Ытла йывăр кунçул сĕнетĕн эсĕ. Вăрнартан ман ниçта та каяс килмест. Аннене те пăрахса хăварма шалккă.

- Анне вăл манăн та пур-ха. Анчах та эпир анне тесе кил çумĕнчех пăчланаймăпăр ĕнтĕ. Кăштах хăюллăрах, анлăрах шухăшламалла. Юрату тесе те пĕр-пĕринпе çыхăнсах лараймăпăр. Чун туртакан ĕç пирки те манмалла мар. Халĕ эпир пĕрлешес пулсассăн... Ригăра иксĕмĕр хваттер тупса пурăнассăн туйăнмасть. Сан та, ман та кĕсье çӳхе. Эсĕ кунта, эпĕ — унта пулăп. Мĕн интересĕ унашкал

пурнăçăн.

- Мана хама та вăл пурнăç кăмăла каймасть. Икĕ çĕрлĕ пулас пулсан, мĕн тума качча тухмалла, авланмалла? Çамрăклăх пĕрре килет. Çапах та, тĕплĕнрех шухăшласа пăх. Эпĕ вара сана çакăн пек задача паратăп: ман юрату хаклăрах-и е кăвак тинĕс хумĕ?

Эрхип çамкине икĕ аллипе çатăрласа тытрĕ, пуçа чиксе тăчĕ, мĕн каласан лайăх-ши тесе шухăшларĕ. Вăл пĕртте кăвак тинĕсе хăйĕн юратăвĕпе улăштарасшăн мар-çке. Унăн хăвачĕпе, çулăмĕпе кăвак тинĕс хумне çĕнтерсе пырасшăн. Ăна вĕренме, ĕçлеме, телейлĕ пурăнма çак юрату пулăшасса шанать, кĕтет. Юратăвĕ вара... Мĕн калас-ха унăн? Хĕре çак савăнăçлă кун кӳрентерес те, йĕртес те килмест каччăн. Шухăшласа тăрсан-тăрсан вăл куçне уçса суймасăрах хуравларĕ:

- Кăвак тинĕс хумĕсене çурса çиле хирĕç хăюллăн ишекен Юрату хаклă маншăн, Уля.

- Ăнлантăм, романтик. Эсĕ хăвăн шухăшунтан иртмен чул чĕреллĕ çын. Вĕренмех талпăнатăн. Мансăрах хулана каясшăн. Мана унашкал малашлăх хăратать.

Вĕсен калаçăвĕ пĕр çемме куçаймарĕ. Шкулти ăсату каçĕ хыççăнах Уля тепĕр ăсату каçне кĕтме пуçларĕ. Вăл уншăн пурнăçра юлашки савăк пулассăн туйăнчĕ. Чĕри теме сиссе ыратрĕ, ăшĕ вăркарĕ. Ăна вара кĕтес мар тесен те, кĕтсе илмеллех пулчĕ. Райкомра ĕçлекенсем хăйсен хĕрӳ юлташне, çил çунатлă ямшăкне Эрхип Ласкина питĕ савăнăçлăн ăсатрĕç Ригăна. Унччен вăл экзаменсем парса килнĕччĕ. Ресторанта апатланчĕç. Ташлană май Уля Эрхип куçĕнчен куçне вĕçертме пĕлмерĕ.

- Итле-ха, Эрхип, мана темшĕн иксĕмĕр паян юлашки хут ташлană пек, юлашки хут юрлană пек туйăнать. Сана унта тинĕс пикисем çавăрса илеççех пуль. Мĕншĕн çак туйăм çуралчĕ-ха ман?

Эрхип хĕре хăй çумнерех пăчăртаса хăлхинчен калать:

- Пĕрремĕш сесси хыççăнах килетĕп. Ун чухне Культура çуртĕнче ташлăпăр. Çулла каникула таврăнăп, вара пĕве хĕрринчи тунката çинче хальхи пекех çаврăнăпăр. Ан хуйхăр. Вилме каймастăп вĕт.Ан ман çеç мана. Час-час çырса тăр.

Хĕр куçĕнче вăл пурпĕрех тунсăх палли кăна курчĕ.

Пĕр-пĕринчен уйрăлсан çыру çӳретсех тăчĕç-ха вĕсем. Уля Эрхипе хĕллехи каникула кĕтрĕ. Каччă сăмахне пурнăçлаймарĕ. Юлташĕсем вăл вăхăтра тинĕс портĕнче укçа ĕçлесе илме калаçса татăлнăччĕ. Ласкин та килĕшрĕ. Ăна та укçа пит кирлĕ-çке. Хăйне валли те, амăшĕпе хĕрне парне туянса памалăх та. Çуллаччен чăтма пулчĕ. Уля патне çырнă çырура та çав шухăшах çирĕплетрĕ. Çулла каллех унăн вăхăт пулмарĕ, виçĕ кунлăх кăна килчĕ. Вĕсен каникулта тинĕсе тухмаллаччĕ.

Райкомра ĕçлекен Илле Дмитриев вокзала такама ăсатма тухнă. Пĕрлех Эрхипе те кĕтсе илчĕ вăл. Сăмах май Уля Улхашова пирки пĕлтерчĕ. Ун патне аш-какай комбиначĕн директорĕн ачи çӳреме пуçланă-мĕн!

Эрхипĕн юлташне пăрахса хăварсах çĕвĕ фабрикине чупас килчĕ. Туртăнса та пăхрĕ вăл. Илле ăна картах тытса чарчĕ:

- Васкама юрамасть.

Вăрнара çунатлă туйăмпа вĕçтерсе çитнĕ йĕкĕт райкома кĕрсе тухнă хыççăн та лăпланаймарĕ, чӳречерен Улхашова пурăнакан урам еннеллех тинкерчĕ. Илле ăна райком машинипе киле ăсатрĕ.

- Малтан аннӳпе курса калаç. Кăштах чирлекелетчĕ пулас-ха вăл. Кайран вара хĕрӳ патне чуптар. Çавна ан ман эс: анне пирĕн темле хĕртен те, темле хĕрарăмран та маларах, çывăхрах пулмалла. Анне вăл — пĕрре, - кăштах ăс пачĕ юлташĕ.

Ялта та тăрас килмерĕ Эрхипĕн. Амăшĕ уншăн та ĕнтĕ тĕнчери чи çывăх çын пулсан та, вăл унпа чи кирлине калаçса илнĕ хыççăн, çав машинăпах каялла ларса тухрĕ. Тем пек талпăнсан та пурпĕрех каçчен Вăрнара çитеймерĕ. Илле Дмитриев райком ĕçĕпе икĕ колхозра пулчĕ. Район центрне çитсен вĕсем ресторана кĕрсе апатланчĕç те Культура çуртне васкарĕç. Унта Шупашкар артисчĕсен концерчĕ пулмаллаччĕ. Ульăпа каччи килессе чăтăмсăррăн кĕтрĕç. Анчах лешсем курăнмарĕç. Концертран вара Эрхип вăрман хĕрринчи хăрах енлĕ урамалла васкарĕ. Улхашовсен подьездĕнчи картлашка тăрăх вĕçнĕ пек хăпарчĕ. Алăка васкаса шаккарĕ. Кăшт вăхăт иртсен алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те... ун умне вăрăм халат тăхăннă Уля тухса тăчĕ. Ним тума аптăранипе хĕр хăй тăрăх пăхса илчĕ, уçăлнă арка часрах майланçи турĕ, çӳçне-пуçне якаткаларĕ, унтан тин “Эй, турăçăм, эсĕ-çке ку?” - тесе кукленсе ларчĕ. Эрхип Ульăна çĕклесе тăратрĕ. Вăл качча алă парса малалла иртме хушрĕ:

- Атя, хывăн. Хăна пулăн. Хăçан таврăннă вара эсĕ? Ма пĕлтермерĕн?

- Телеграмма çаптарнă пулсан, кĕтме иккĕн тухаттăрччĕ-им перрон çине? - плащне хывса çакнă май йĕплесе илчĕ Эрхип.

- Иккĕн кăна мар, фабрика эртелĕпе кĕтсе илеттĕмĕрччĕ сана, çухалнăскере. Хăй пĕрмай çав вăхăтра, çав кунсенче тĕл пулатпăр тесе шантарса пурăнать те çырупа... Ман тем тумалла. Сана кĕтекĕте капла эп ват хĕр пулса юлатăп вĕт. Кайран эс пăхмăн та, çамрăкраххисене кăмăллăн. Ман вара... Ман вара хăрса типнĕ йывăç пек кайса ӳкмелле-и çĕр çине? Пытармастăп хамăн вăрттăнлăха. Мĕншĕн тесен сана ку таранччен элеклесе паракан пурпĕрех тупăннă ман çинчен. Куçунтанах, хусканăвусенченех ăнлантăм. Çитменнине тата эсĕ халĕ те, тĕл пулсан, ыталаса чуптумарăн. Пĕлетĕн вĕт эп ирĕклех маррине?

- Пĕлетĕп.

- Çитменнине анне тата. Хăвна вăл райкома пырса хăртнине те, урамра тĕл пулса ятлаçнине те манман пуль. Кураймасть вăл сана. Унччен санран уйăрасшăн мĕн тĕрлĕ тапаçланмарĕ-ши манпа. Иксĕмĕр юнашар чухне парăнмарăм ăна, итлемерĕм. Кайран... Кĕç çулталăк вĕт пĕрле пулманни. Ытла нумай-çке. Анне мана пуяна качча парасшăн. Каччине те тупнă вăл. Директор ачипе тахçанах

паллаштарасшăнччĕ те, майĕ килсе тухрĕ унăн. Эсĕ куç умĕнчен çухалтăн. Эпĕ пĕччен тăрса юлтăм. Çавăн чухне илсе килчĕ вăл ăна. Паллаштарчĕ. Иккĕ кинона кайса килнĕччĕ. Темшĕн чун турмасть ман ун патне. Ытла вĕçкĕн. Пĕрмай пуянлăхĕпе мухтанать. Санран ылтăн чăмăркки тăватăп, тет. Пижон. Тем тумалла ĕнтĕ. Сана тĕл пулнăшăн, сана юратнăшăн хама хам ÿпкелетĕп. Çавăн чухне кинона мĕн тума тухса кайрăм-ши? Мĕншĕн килĕшрĕм-ши Эльвира сĕнĕвĕпе? Ун, мĕн, хуйхи çук, упăшки лайăх. Пыл та çу тенĕ пек вĕсен пурнăçĕ. Манăн... Манăн тем тĕтри явăнать куç умĕнче. Сана та хушăран курми пула пуçларăм ĕнтĕ çав тĕтре ăшĕнче.

Калаçнă май Уля питне шăла-шăла илет. Ун куçĕнче Эрхип унччен хи аça-çиçĕмлĕ вут-хĕм асăрхаймарĕ, тĕтре карса илнĕ тинĕс евĕр тунсăх тĕнчине çеç курчĕ. "Ăçта-ши халĕ темиçе çул каярах Вăрнарта çуралнă юрату? Куçра-ши? Темле çав. Тĕтре ăшĕнче нимĕн те курăнмасть. Тута хĕрринче-ши? Вăл та пĕртте çулланса кулмасть. Кĕпе айĕнче-ши? Вăрăм халачĕ, авă, йăрăс кĕлеткине хупланă. Пур-ши вăл? Вилмен-ши? Пурăнать-ши çав Юрату?" - вĕлтлетсе илчĕ пуçра шухăш.

Килхуçи качча сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ, апат хатĕрлерĕ, буфетран каллех пилĕк çăлтăрлă коньяк кĕленчи кăларса лартрĕ.

- Аннен запасне кăштах хухтарар-ха. Астăватăн-и?

- Астумасăр, ара. Иксĕмĕр тавлашнине те манман.

- Мĕнле, мораль тĕлĕшĕнчен аван пулать-ши халь?

- Вăрланă эрех пулсан, паллах, ĕçес килес çук. Куçпа курсах.

- Ан хăра, Эрхип. Анне ĕнтĕ кăлпасси цехĕнче ĕçлемест. Вăл халĕ эс шутланă пек вăрă мар. Кантурта, директор патĕнче, йышăну пÿлĕмĕнче ларать. Эрехĕ те вăрланăскер мар, директор парни. Юрĕ, ан турткалашса лар. Эс пĕрремĕш курс пĕтернĕ ячĕпе, килнĕ ятпа, тĕл пулнă ятпа ĕçер-ха пĕреххут. Атту çавскер сĕтĕрĕнсе çитме пултарать. Ялан ÿсĕр. Уçмасан - çĕмĕрет. Уçсан, тем пулса тухĕ сирĕнпе. Атя, ĕçсе пар пĕрре морякла. Вăт çапла.

Апатланнă хыççăн Эрхип кайма пуçтарăнчĕ.

- Ан кÿрен мана, чунăмçăм. Эпĕ эс кайнăранпа пĕртте улшăнман. Кĕтме тăрăшатăп сана. Эс вĕренсе тухиччен качча каймасан...

- Кĕт, Уля, кĕт тепĕр виçĕ çула. Вăхăт часах иртет, авă. Чăт. Хăвна ху хытарсах чăт ку таранччен чăтнине. Çирĕплен. Пăрах эс унпа çÿреме. Кинона кайса килнĕшĕн нимĕн те мар. Каçаратăп сана уншăн. Качча тухсан... Нихçан та каçармастăп. Килместĕп те, курмастăп та, калаçмастăп та. Çапла, çирĕп çын эпĕ. Каçармастăп!

Уля каччă майĕнчен уртăнчĕ те ăна пит-куçĕнчен йĕпеннĕ вĕри тутийĕпе çисе ярасла чуптуса пĕтерчĕ:

- Эх, мĕншĕн аякка вĕçсе тартăн-ши эсĕ манран?

Виçĕ каçĕнче те урăх пĕрле пулаймарĕç вĕсем. Директор ачи çилĕмлех çыпăçнă-мĕн ун çумне. Ульăна вăл хăйĕнчен вĕçертмерĕ пулас. Ăсатма та тухаймарĕ, шеремет.

Ласкин питĕ хуçăк кăмăлпа уйăрăлчĕ тăван станцăран. Кайран, тинĕсре ишнĕ чухне те лăпланаймарĕ, хулăн тетраде сăвă хыççăн

сăвă тултарчĕ. Анлă тӳпери пĕр çăлтăрне суйласа илсе Улина ятлă хучĕ. "Улина çăлтăр" сăвă та çырчĕ. Çулçӳреврен таврăннă çĕре Улхашоваран çыру килнĕччĕ. Вăл унран каçару ыйтать. Уля ăна директор ачипе улăштарма шутланине туйса Эрхип урăх çыру çырма пăрахрĕ.

8

Ригăра хĕр нумайччĕ ĕнтĕ. Тем тĕрли те пурччĕ вĕсем хушшинче: вăхăтлăх савăнмалли те, пурнăç çулĕпе юнашар утмалли те. Чăваш ачишĕн çеç пĕри те чĕрене çывăх марччĕ. Çаплах иртсе кайрĕç студент çулĕсем. Хăй теециссе юламайрĕ вĕренсе пĕтернине. Аслă пĕлӳллĕ инженер, тинĕс çулçӳревçи пулса тăчĕ. Каникулсенче яла таврăнманскер, Ласкин халĕ самолетпа Шупашкар урлă тăван вырăна васкарĕ. Ялне çитсе амăшне савăнтарчĕ.

- Анне, эпĕ хамăн ĕмĕтĕме пурнăçларăм. Вĕренсе тухрăм. Акă, дипломĕ. Акă, ромбикĕ. Отпуск вĕçленсенех, кĕçех тинĕсе тухатпăр. Инçетри, таçти инçетри курăнман çĕршывсене ишсе çӳреме тытăнатпăр. Мана пароходство хваттер парать. Сана унта илсе каятăп.

- Ай тур-турах, ачам. Халь те пĕччен нушаланса пурăнатăп та, унта тата тăр пĕччен усрасшăн-и эс мана? Кунта, хăть, ялта, çынсемпе калаçса чуна кантаратăп. Авлансан, унта, пĕнле пулĕ. Пырăп та-и, тен. Эй, çук, çук, пĕччен мĕн тăвăп унта. Эс таçта çĕр кĕтессинче. Эп - палламан хулара. Çук, çук, авланмасăр ан та шутла кун пирки, - хирĕçлерĕ амăшĕ.

- Эс пымасан мана аслăрах хваттер памаççĕ-çке.

- Пурпĕрех тăхта. Ялтах пурăнам-ха кăштах. Ял сывлăшĕпех сывлам. Итле-ха, сан Вăрнарта хĕр пурччĕ вĕт? Киле те илсе килсе кăтартрăн. Кӳршĕсем ун хыççăн "Сан Эрхипӳ авланнă-им?" - тесе тĕпчесе тăнран ячĕç. Мĕн, хирĕçрĕр-им? Шарлама пăрахрăн та ун пирки. Вăт, çавна качча илсе каяс пулсассăн, пырăттăм. Çапах вăл чăваш хĕрĕ. Калаçма та, пурăнма та хамăрла майлă. Шутсăр кăмăла кайнăччĕ те çав вăл мана...

Уля ятне илтнĕрен Эрхипĕн чĕри çĕçĕпе чикнĕ пек ыратса килчĕ. Мĕн калас-ха ăна ун пирки? Суйма хăнăхман вăл. Амăшĕ ахаль те кăштах тĕшмĕртнĕ пек туйăнать вĕсем хушшинче мĕн пулса иртнине. Унашкал усал сас-хура киле çитме пултарнă çав.

- Ăнăçлах пулса тухмарĕ-ха пирĕн, анне. Эпĕ ăна кĕтсе пурăнма ыйтрăм, вăл урăх каччă сăмахне парăннă. Курманни те виçĕ çул. Ăçта вăл халĕ, хам та пĕлместĕп.

- Эх, сирĕнпе, ухмахсемпе, тем хăтланатăр-çке эсир. Çынсем пек вăхăтра пĕрлешсе йĕркеллĕ пурнас чух...

Ку калаçу хыççăн хуйхă çеç пусрĕ Эрхипе. Ялтах пурăнса иртерчĕ вара вăл отпуска, Вăрнара тухса та курăнмарĕ. Килте ĕçĕ тупăнчĕ. Каяс кун колхоз председателĕ ăна хăйĕн çăмăл машинипе Вăрнара леçтерчĕ. Мускав пуйăсне нумаях кĕтмелле пулмарĕ. Виççĕмĕш вакуна кĕрсе ларчĕ те вăл тепловоз кăшкăртнине илтрĕ. Кустăрмисем рельс сыпăкĕсене вăраххăн шутлама пуçларĕç. Нумаях

та каяймарĕç, пуйăс сасартăк карт! туртăнса чарăнчĕ. Ласкин чӳречерен пăхрĕ. Вокзал тĕлĕнче халăх кĕпĕрленнĕ, мĕн пулнине ăнланма хĕн. Станцăсенче пуйăса стоп-кранпа час-часах тăратаççĕ те уншăн ним тĕлĕнмеллиех те çук. Проводник каярахпа такамсемпе калаçса тăратчĕ.

"Хĕре шалккă, - хуйхăрать хăй. - Качча кайма тăнăскер, тет. Туй тумĕпех пуйăс хыççăн чупнă. Вакуна ларасшăн пулнă, тыткăчран та ярса тытнă, вăрăм кĕпи çыхланнипе такăнса урапа айне пулнă. Икĕ урине те пуйăс каснă... шалккă çамрăка. Чĕрĕ юлсан халь унăн ĕмĕр нуша курса пурăнас пулать. Хăй нуша курни çитмест-ха, ухмах пуç миçе çынна пăтăрмах тăвать. Вилсен, хăть, пĕр хуйхă. Ой, турă усала сирех. Тĕлĕнмелле пулаççĕ çынсем. Упăшки ларса тарнăши пирĕн пуйăс çине, хăй упăшкинчен тарас тенĕ-ши е такама курса хыççăн хăваланă-ши - пĕлеймерĕм. Çулра тем мыскари те курăн".

Эрхип калаçăва хутшăнмарĕ. Унăн хăйĕн те ăшĕ вут хыпнă пек çунать. Хăйне те пуйăс çурмалла каснă пекех туйăнчĕ. Станци те, хырлăх та, водокачка пĕви те, тунката та хыçала тăрса юлчĕç. Ун умне ватăрах проводник калавĕнчи темле хĕр сăнарĕ куçне-пуçне чарса пăрахса таçтан муртан тухса тăчĕ. Пикен шап-шурă вăрăм тумĕ тăрăх вĕри юн шарласа юхать пек. Куçĕ чарăлса, чарăлса пырать унăн. Куçа хупсассăн та çухалма пĕлмерĕ-çке çав сăнар. Çул тăршшипе пуçран тухма пĕлмерĕ проводник сăмахĕ: "Икĕ урине те пуйăс каснă". Чĕлхе çине вара йĕкĕлтӳллĕ сăмахсем хăйсемех тухса пычĕç. Мускава çитиччен "Пуйăс каснă юрату" сăвă çуралчĕ. Ăна вăл Ригăра хулăн тетраде çырса хурать.

Тинĕсре инçе çула ишекен карап çинче Эрхип Ласкин малтан капитанăн иккĕмĕш помощникĕнче ĕçлерĕ. Карапĕ те тĕлĕнмелле ятлăччĕ: "Çилçунат". Карап ятне вуласанах ăна Вăрнарти шурă лаша аса килчĕ. "Тахçанах аша панă пуль ĕнтĕ манăн Çилçунатăма. Çав хĕрсене пула çĕвĕ фабрикинче вăхăтлăха вилĕмрен çăлăнса юлнăччĕ, халĕ пурăнмасть пуль çав. Хĕрĕсем те куç умĕнчен тарса çухалчĕç", - шухăшларĕ вăл.

Çур çул "килте" пулманччĕ Эрхип. "Çилçунатпа" темиçе çĕршыва та çитрĕ. Тĕнче курчă чăваш ачи. Улина çăлтăр çутийĕ çул кăтартса пынăнах туйăнатчĕ ăна тинĕсре. Ригăра ун валли пĕр çыру çеçчĕ. Амăшĕ янă пĕртен-пĕр хыпар. Ульăран та кĕтнĕччĕ çыру. Анчах унпа çыхăну пачах татăлчĕ. Тĕрĕссипе çав çыхăнăва вăл хăй татма пулăшрĕ-çке. Çырманшăн хĕр те кӳренчĕ пуль. Çавăнпах ответлемерĕ ĕнтĕ. Хальччен, тен, директор ывăлне качча тухса ачапăчаллă та пулчĕ пуль. Мĕн тума çыру çырса чĕрине тепĕр хут хускатать-ха ĕнтĕ вăл чипер çемьеллĕ пулнăскер.

Хĕр-хĕрарăм сывлăшĕпе сывламасăрах пурăнаймарĕ Эрхип те. Анчах хăйне валли мăшăр кăна шырамарĕ. Такампа паллашсан та вĕсен хушшине таçтан савăлласа çĕмĕрсе кĕрсе каять Уля сăнарĕ. Кăвак куçĕпе ик еннелле хĕм сирпĕтсе, сап-сарă çӳçне варкăштарса чуна кантармалла кулса ярать те вăл... Паллашнă хĕр-хĕрарăм Эрхип çумĕнчен вăшт кăна çухалать. Каллех пĕччен, тăр пĕччен

тӑрса юлать моряк. Юрать ҫулҫӳрев ҫӑлать. Ҫӗнӗ ҫул, ҫӗнӗ ҫӗршыв. Тинӗс, пӗрмаях кӑвак тинӗс... Капитанӑн аслӑ помощникне те ҫитрӗ ӗнтӗ вӑл. Амӑшне ялтан чӗнсе килчӗ. Хӑй каяймарӗ ӑна илме. Икӗ пӳлӗмлӗ хваттер пачӗҫ ӑна ҫакӑн хыҫҫӑн Шарлотес урамӗнче. Тепӗр рейсран таврӑннӑ ҫӗре Ласкина савӑнӑҫ хыпарӗ кӗтетчӗ. Вӗсен карап хуҫине пароходствӑна куҫарнӑ май, ӑна "Ҫилҫунат" капитанӗ туса хучӗҫ. Ҫамрӑк капитан "Волга" туянса ячӗ. Ҫӑмӑл машинӑпа Ригӑра чупкаларӗ. Унтан каллех рейса тухса кайрӗ. Таврӑнсан, амӑшӗ ӳпкелешрӗ:

- Авланмасан эс, Эрхип, ват хусах пулса юлӑн. Вӑтӑр пиллӗке ҫитрӗн вӗт. Ҫуралнӑ кунна та эпӗ пӗчченех палӑртрӑм. Ак ҫакна санне, темле акӑлчансен тшинне, тутанса пӑхрӑм. Кӳршӗри карчӑкпа старике те ӗҫтертӗм. Ялта эпир пӗччен вӑрттӑн хупӑнса ларса пурӑнма хӑнӑхман та, кунта та халӑхпа пуплес килет. Итле, кӑҫал та авланмасан, яла тухса тарап эп. Йӑлӑхрӑм тинӗс сассине итлесе ҫак ҫуртра. Ман тырӑ пуссипе хамӑр умри йӑмрасем кашланинех тӑнлас килет. Кунта тупаймастӑн пулсан, хамӑр пата, Чӑвашьенне кайса илсе килсе пар-ха пӗр-пӗр хӗрарӑм. Халь тин сана, ват хусаха, хӗр те качча пымӗ.

— Ют ҫӗршывран илсе килсе парас мар-и, анне? - шӳтлерӗ ывӑлӗ.

— Ан кул. Мана ахаль те кунти ҫынсем те ют ҫӗршыври пекех туйӑнаҫҫӗ. Калаҫма йывӑр вӗсемпе. Ни эп вырӑсла чаплах пӗлмес, ни вӗсем, тенӗ пек. Чӑвашах туп-ха. Хамӑр ҫыннах.

Вӑрӑм рейс вӗҫленнӗ хыҫҫӑн Ласкина икӗ уйӑх канма ирӗк пачӗҫ. Хӑйӗн "Волгипе" вӑл малтан юлташӗ патне Саратова кайрӗ, унта хӑналанчӗ. Ҫула май вара тӑвалла Чӑваш ҫӗршывне кӗрсе курма шутларӗ.

## 9

Хӑйсен ял ачине, Илле Дмитриева, темиҫе ҫул каяллах комсомол обкомне куҫарнӑччӗ. Эрхипӗн пӗрремӗш секретарӗ пулни — парти обкомӗнче. Вӑрнарта Ласкинӑн ҫывӑх юлташсем урӑх юлман. Ҫӗнӗ ресторана кӗрсе апатланнӑ хыҫҫӑн Эрхип кӗнеке лавккине кӗрсе тӗрӗслерӗ, чӑваш ҫыравҫисен хайлавӗсене икӗ ҫыхӑ таранах туянчӗ. Урамра пӗр паллакан ҫын та курӑнмасть. Таҫти ют хулари майлах туйӑнса кайрӗ ӑна. Тахҫанхи юрату хумӗ кӑна ӑнсӑртран пите ӑшшӑн пырса ҫапрӗ. Ӑнсӑртран-ши? Ҫук пуль ҫав, ҫилӗ вӑрман енченччӗ. Пырса ҫапрӗ те вӑл хӗве кӗрсе ҫухалчӗ, чӗрене хускатрӗ. Куҫ умӗнчен ун чухнехи савӑк самант ӳкерчӗкӗсем вӗлтлетсе иртрӗҫ. Ҫумри ларкӑч ҫинче выртакан хулӑн тетрадьре пушӑ страница юлман. Тӑп-туллиех ҫырса тултарнӑ. Юрату кӗнекине Эрхип тепӗр хут уҫрӗ, унта пуҫласа ҫырнине вуларӗ: "Ӗнер ҫуралнӑ юрату ячӗпе саламласа, чӗререн ырӑ сунатӑп. Уля Улхашова".

"Эх, Уля, Уля, ӑҫта-ши халӗ эсӗ? Ӑҫта ҫухатрӑн-ши ху ҫуратнӑ юратӑвна? Юрату кӑварӗ ҫине эпир иксӗмӗр те ҫаруран тӑнӑ пек астӑватӑп ун чухне. Пӗҫертрӗ пире вӑл пӗр вӑхӑт, чӗрене хӗмлентерчӗ, ӳт-пӗве хӑватлатрӗ. Ҫав ҫулӑм ман чӗре патне ҫитрӗ. Сан чӗрӳ

айккипе çеç иртсе кайрĕ пулас. Вăхăтлăх çунтармăш туйăмĕ вырăнĕнче кăна пулса юлчĕ иккен вăл саншăн. Эсĕ чăтаймарăн юрату кăварĕ çинче тăмашкăн. Сикрĕн, аяккалла пăрăнтăн унран. Ăçташи эсĕ? Курса каясчĕ хăть сана. Куллуна илтесчĕ санăнне, Уля", - çапла шухăшласа Эрхип машинине поселок хыçнелле хăваларĕ.

Урамсем нумай улшăннă. Йĕрки-йĕркипе çĕнĕ çуртсем каплантарса лартнă. Пилĕк хутли таранах пур. Çулсене асфальт сарнă. Акă вăл Ульăсен хăрах енлĕ Вăрман урамĕ, вĕсен икĕ хутлă сарăрах чул çурчĕ, килхушшийĕ. Пилешсем айĕнчи тенкел çинче хĕрарăмсем лараççĕ. Эрхип машинăна чарса алăка уçрĕ. Çав самнтра унăн хăлхине паллакă сасă кĕрсе кайрĕ: ах-ха-а-а-а-ха! Чуна тыткăнлакан уçă сасă çав ушкăнран илтĕнет вĕт! Уля-çке вăл! Машинăран мĕнле сиксе тухнине хăй те сисмерĕ Ласкин, унталла таплаттарса пычĕ те, "Уля!" тесе кăшкăрса ячĕ. Хура тĕслĕ капăр тум тăхăннă тăлпан кĕлеткеллĕ арçынна палласа илнĕ Уля "Ай-уй, эсĕ-çке ку, Эрхип!.." - тесе çухăрса ярса тăма пуçларĕ - тăраймарĕ. Çав вăхăтрах Ласкин ăна алă çине çĕклесе машина патнелле йăтса кайрĕ. Пăхрĕ те ун çине, куçĕнче куççуль тинĕсĕ курчĕ. Уля сасăпах макăрса ячĕ, машина патне çитерехпе аллипе тĕллесе кăтартрĕ:

- Туясем...

- Мĕнле туясем? Камăн? Кам валли? Мĕн тума? Пирĕн тăвата ура кăна мар, тăвата кустăрма та пур халь. Чупатпăр, чун каниччен чупатпăр, акă. Кĕрсе лар-ха? Упăшкунтан вăрласа тарам... Ан йĕр.

Уля урисене шаклаттарса кăтартсан тин Эрхип вăй пĕтсе килнипе лăштăрах кайрĕ. "Ара, унăн йывăç протезсем-çке? Мĕнле капла? Ăçта, хăçан аманма пултарнă-ха вăл?"

Эрхип Ульăна машинăна кĕрсе ларма асăрханса пулăшрĕ, хăй каялла çаврăнчĕ, сак çине сĕвентернĕ вăрăм туясене йăтса утрĕ. Хĕрарăмсем ун çине пĕр тĕлĕнсе, пĕр сехĕрленсе пăхрĕç. Пĕри хăйса ыйтрĕ:

- Ăçта илсе каятăн эс пирĕн Улькана? Мĕн тăван вăл инвалидпа, ĕçкĕçпе?

- Ригăна! Амăшне пĕлтерĕр. Балтика хĕррине илсе каятăп. Халех!

- Эй, турă усала сиртĕрех, - тесе лешĕ ура çине сиксе тăчĕ. - Тăхта-ха? Ригăна илсе каятăн пулсан... Улька манран вунă тенкĕ кивçен илсе ĕçсе янăччĕ...

- Манран та пиллĕк, - кăштăртатрĕ тепри.

- Манран...

Ласкин китель кĕсйинчен аллăлăх укçа кăларчĕ те сак çине хурса хăварчĕ:

- Мейĕр. Урăх никама та нимĕн те памалла мар-и унăн?

Хĕрарăмсем сăмах чĕнмерĕç. Моряк автомашина патнелле васкарĕ, туйисене шала хучĕ те мотора тапратрĕ. Вăл вăхăтра Уля хулăн тетраде куç илмесĕр вулатчĕ.

Вăрнартан тухсан, Эрхип ыйтрĕ:

- Мĕне пĕлтерекен япала ку, Уля?

- Эс ху кала-ха мĕн хăтланнине.

- Нимĕн те хăтланмастăп. Сана катаччи чуптаратăп. Упăшку çитесс çук ку çилçуната. Хулăн тетраде вуласа тухмасăр та каялла çаврăнмастпăр. Вула, вула. Эпĕ ăна вунă çул хушши çырнă.

- Апла вунă çулах вулăп та, унчченех чуптарăн-ши?

- Чуптаратăп, чуптаратăп. Вунă çул мар, çĕр çул чуптарма та хатĕр, хăв килĕшсен. Упăшку кĕвĕçмесен. Вула, тархасшăн. Сасăпах.

Уля тетраде хуллен хăй вырăнне хучĕ, пуçне каялла ухса сăмах чĕнмесĕр ларса пычĕ, унтан, тӳрленчĕ те, машинăна чарма ыйтрĕ:

- Ан васка, Эрхип. Эпĕ халь тин ниçта та вĕçсе тарас çук. Санпа юнашарах. Каласа парам апла хамăн кунçул нушине.

Ласкин итлерĕ, хăвăртлăха чакарса вăрмана кĕчĕ, машинине йывăç хӳттине тăратрĕ, хăй хыçалти ларкăч çине Ульăпа юнашар кĕрсе ларчĕ, унăн икĕ аллине те тытса чăмăртарĕ. Уля васкамасăр каларĕ:

- Ырă çынсем нумай çут тĕнчере. Анчах ыррисем хушшинче путсĕрсем те пуррине пĕлетĕп халь эпĕ. Çав çын вăл - директор ывăлĕ, аса та илес килмест ман ун ятне. Тĕнчере çук усал вăл маншăн. Суйрĕ,ултав çăмахĕ çитерчĕ вăл мана. Пĕртте юратман. Юратсан çапла путсĕрле те хăтланмастчĕ. Иксĕмĕр хушăра иккĕленӳллĕ шухăшлă калаçу хыççăн эпĕ чăн та çын сăмахне ĕнентĕм. Анне мана çав путсĕр çумнех çыпăçтарасшăн тăрăшрĕ. Паллаштарчĕ, çемйипе çывăхлатрĕ. Унпа çӳреттĕм, калаçаттăм, пуçра пурпĕрех эсĕччĕ, куç умĕнче сан сăнуччĕ. Паллах, сăнĕ-пуçĕпе вăл санран темиçе хут та хитререх, чунĕпе вара ... çĕр хут, пин хут хурарах. Хура кăмрăк ун ăшчикĕнче, ашшĕне те, амăшне те хывман вăл, путсĕр.

Чăн та питĕ йывăр пулас Ульăна çав çын çинчен аса илме. Пăчăртанса тухнă куççульне таса тутăрпа шăла-шăла калаçать вăл:

- Эс çыру çырма пăрахсан, манăн шанчăкăм çухалчĕ. Сĕкĕнсех анратас килмерĕ. Хамăн мăнаçлăха кăтартатăп-çке, ухмах. Çӳресех кайрăм вара унпа. Майĕпен качча тухмах килĕшрĕм. Эльвира тата хăйĕн пуян упăшкипе мухтанса пăсса ячĕ. Манăн та ун пек пурнăçа курас килчĕ пулмалла. Куртăм кайран... Малалла вĕренес шухăша та пăрахрăм. Эй, тăнсăр пуç эп. Каччи те васкасах авланчĕ. Тĕрĕссипе ăна ашшĕ-амăшĕ хăвăртрах авлантарса кăштах йĕркене кĕртес тенĕ. Кунта куçса киличченех ашкăнса пурăннă иккен вăл, эсремет. Туй пыратчĕ пирĕн. Культура çуртĕнче çырăнтăмăр. Ун хыççăн районти паллă вырăнсене курса çӳреме тухнăччĕ. Ленин палăкĕ умне чечек кăшăлĕ хутăмăр, унтан вокзал патĕнчи сквера çитрĕмĕр. Вăрçăра пуçĕсене хунă паттăрсен ячĕпе лартнă палăк умĕнче асăнмалăх сăн ӳкерттерме хатĕрленеттĕмĕр. Ах, çав Эльвирăн куçĕ-çке... Ăçтан, хăш вăхăтра курма ĕлкĕрнĕ вăл сана! Пычĕ те хăлхаран пăшăлтатрĕ: “Сан Эрхиппу вокзалра, çак пуйăспа каять пулас”. Эпĕ хумханса хыпăнса ӳкрĕм. Туй ушкăнĕнчен уйрăлса Эльвирăпа вокзалăн тепĕр еннелле чупрăмăр. “Çавах ларчĕ, виççĕмĕш вакуна ларчĕ!” тесе ма-

лалла тĕллесе кăтартрĕ Эльвира. Эпĕ сана курмарăм, çапах тантăшăмпа малаллах чупрăм. Çав вăхăтра пуçра арçурилле шухăш çуралчĕ. Пĕр-пĕр вакуна кĕрсе ларатăп та сана шыраса тупатăп, ниме пăхмасăр санпа Ригăна вĕçтеретĕп, тесе хистетĕп хама хам. Кĕç пуйăсĕ тапранчĕ. Эпĕ ларас тесе кармашрăм, икĕ тыткăчран та çакăннăччĕ... Урăх нимĕн те астумастăп. Пульницара тăн пырса кĕрсен, урасене татнине пĕлсен... çут тĕнчепе сыпулашма патнех çитнĕччĕ. Юрать палатăра пĕрле выртакансем пулăшрĕç çав усал шухăша сирсе ямашкăн. Тавах вĕсене, ырă çынсене. Врачсемпе сестрисене те, санитаркисене те тем пекех тав. Çур çул ытла тухаймарăм-çке пульницаран. Вăт мĕн чухлĕ ырă çынсем çут тĕнчере.

Нăшăкласа сăмсине туртса илчĕ те вăл пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ, унтан тарăннăн хашш сывласа, малалла каларĕ:

- Пăрахрĕ мана директор ачи. Малтан пульницана çӳрекелетчĕ те, эп унтан сывалса тухичченех тепĕр хĕр тупса янă. Ашшĕ ман куç умĕнчех тăна кĕртме тăрăшрĕ те çав ăна. Çук, итлемерĕ вăл ашшĕпе амăшне, алă сулчĕ ман çине. Пĕрлешсе пĕтмесĕрех судпа уйрăлтăмăр. Çапла пулса тухрĕ ман пурнăç. Тăварлă куççуль тинĕсĕ парнелерĕ мана шăпам. Çамрăк чухне пит качча тухас, ача çуратас килетчĕ. Каччине те каяймарăм, арçынне те кураймарăм, ачине те тăваймарăм. Пĕччен пурăнатăп, килте çĕвĕ çĕлетĕп. Тунсăхласан, эрех ĕçетĕп. Пĕтнĕ çын эпĕ, Эрхип. Кама кирлĕ ĕнтĕ... Эх, ку пурнăçа. Мĕн тăвас-ши? Вăт çапла, çакна пĕлтерекен япала ку, Эрхип, - протезĕсене шаккаса кăтартрĕ Уля. - Кала, эс ху мĕн хăтлантăн-ха?

Ласкин каллех руль умне ларчĕ, машинăна хуллен мăн çул çине илсе тухрĕ.

- Ригăна каятпăр! Акă мĕн хăтланатăп эпĕ, Уля чунăм.

- Мĕн тума?

- Пĕрле пурăнма, Уля, çемье чăмăртама. Пире анне кĕтет унта.

- Кайран ӳкĕнмелле, мана каялла килсе ямалла ан пултăр, Эпĕ... урасăр хĕр, ватăлса кăвакарса ларнă ĕçкĕç, сана мĕн тума кирлĕха? Юлташусем умĕнче намăс курма-и? Сусăра качча илнĕ тесе кулса вилĕç санран Рига майрисем. Пурах ĕнтĕ вĕсем санăн унта. Вăтанмастăн-и? Хăрамастăн-и? Утса та пăхман вĕт халĕ эсĕ манпа юнашар. Йăтрăн та кĕртсе лартрăн машинăна. Тен, эпĕ çĕр çине те пусаймастăп, тен...

- Тата мĕн?

- Тен, ĕçме те  пăрахаймăп. Хĕрарăмсене алкоголизмран сыватма йывăр, тет, май та çук, тет.

- Ĕненместĕп эпĕ эс хăвна алкаш тенине. Пустуй суятăн. Хуйхăрса кăшт ĕçкеленĕ пуль те...

- Суймастăп. Хăвах тӳлесе хăвартăн вĕт карчăксене маншăн. Чăнах та эрех ĕçме тесех кивçен илнĕ вĕсенчен, хуйха пусарма. Пĕччен ĕçмен, хăйсенех ĕçтернĕ эрехне.

- Ĕçнĕ пултăр. Малашне унашкал ĕçместĕн. Аннепе йĕркеллех пурăнăн. Лайăх вăл ман анне. Эпĕ те яланах тинĕсре ишмĕп. Çырана çакланăп хăçан та  пулин. Утатăн. Манпа юнашар утатăн. Вăтан-

мастăп эпĕ хамăн юрату юнашар пынăшăн. Хăв уксахласан та, юрату ан уксахлатăр. Шутласан, камăн мĕн ĕç пур манпа, пирĕнпе. Ан кулян, лайăхах, йĕркеллех пулать.

- Эпĕ вĕт аннепе те калаçаймарăм-çке,тумтир те...

- Урăх эпĕ каялла çаврăнса пăхмастăп, руле те пăрмастăп, тӳрĕ çулпа малалла хăвалатăп çилçунатăма.

Уля урăх турткалашмарĕ, çул тăршшĕпе хулăн тетраде вуларĕ. Каччăн чĕринчен тухнă çулăмлă йĕркесем. Хăйне халалласа çырнă сăвăсем ăна вăратрĕç, пуçне çĕклеттерчĕç, тахçан çуралнă юратăва тепĕр хут чĕртрĕç. Уля куçĕнчи куççуль тинĕсĕ типнине, сăнĕ сар хĕвеллĕн йăлкăшса çунма пуçланине Эрхип тĕкĕр çинче курса савăнса пычĕ. Мускава çитиччен вĕсем пĕр вăрман уçланкинче çĕр каçрĕç. Уля паçăр “качча та каяймарăм, арçынне те кураймарăм, ачине те тăваймарăм” тенĕ сăмахсем чĕре витĕр шăранса тухнă тĕп-тĕрĕс сăмахсем пулнине Эрхип ĕненмеллипех ĕненчĕ ĕнтĕ. Ун пирки вăл пустуях япăх шутланă. Хĕрĕн юратăвĕ шăранса пĕтмен иккен, Эрхип валлиех сыхланса юлнă. Мĕн тĕрлĕ йывăрлăх витĕр тухса ун патне тĕрĕс-тĕкел çитнĕ.

Акă, авалхи илемлĕ те шавлă Рига, Шарлотес урамĕ, саккăрмĕш çурт. Мускавра туяннă туй тумтирне хулана кĕричченех тăхăнтартнăччĕ вăл хăйĕн пикине. Халĕ, подъезд умне çитсен, “Волга” алăкне уçса савнă хĕрне алă çине илчĕ те йăтса хăпарчĕ, хваттерне уçрĕ. Шала кĕрсен вăл Ульăна урайне тăратрĕ те:

- Анне, акă пирĕн туй. Акă манăн арăм. Акă санăн юратнă кинӳ, Йышăн, - тесе туйисене стена çумне сĕвентерчĕ.

Амăшĕ хĕрарăмăн шăлавар пĕççи туртăннипе уçса тухнă протезĕсене тата туясене курнипе “Ай, тур-тур, мĕн пулчĕ капла сана, хĕрĕм”, - тесе Ульăна питĕнчен чуптурĕ те йĕрсе ячĕ, унтан майĕпен кинне çавăтса сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ. Уля аллинчи хулăн тетраде сĕтел çине хучĕ те:

- Сăпаççипă. Пурах иккен тĕнчере ырă çынсем. Тавах ырă кăмăлушăн, - терĕ, именсе.

Шампань эрехĕ уçма хатĕрленекен Эрхип Ласкин тетраде уçрĕ. Уля Улхашова тахçан саламласа çырнă сăмахсем айне ылтăн пероллă ручкăпа хушса хучĕ:

Çак вилĕмсĕр юрату ĕнер çуралчĕ,
Ман хваттере çитсе паян çутатрĕ.
Шур катанпир çинчи “Парнеллĕ туй”
Тин анчĕ пирĕн урама та...

Кĕленче пăкки хăватлăн сирпĕнсе тухрĕ. Уçă чӳречерен анлă пӳлĕме чарлансен сасси тата кăвак тинĕс хумĕн вĕçĕмсĕр кĕвви тулчĕ.

1984 çул.

## ТУПМАЛЛИ

Вăрланă юрату. Повесть ..............................................3
Çĕр пики. Повесть.........................................................47
Улина çăлтăр. Повесть..................................................61

**Владимир Прокопьевич Кузьмин**

**УКРАДЕННАЯ ЛЮБОВЬ**
Повести
На чувашском языке

Редактор *Ф. Г. Агивер*
Художник *В. И. Агеев*
Технический редактор обложки *Э. В. Исаева*
Корректор *Р. И. Кузьмина*

Лицензия ЛР № 040807 от 10.04.1997 г.
Подписано в печать 27.11.01. Бумага офсетная. Формат 60x84 1/16.
Гарнитура Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 5,58.
Учетно-изд. л. 6,68. Тираж 1000 экз. Заказ № К-3069. Цена свободная.

428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
РГУП «ИПК «Чувашия».



Владимир Прокопьевич Кузьмин Чăваш Республикинчи Вăрнар районне кĕрекен Хурăнсур Çармăс ялĕнче 1937 çулхи улма сăпасĕнче çуралнă. Вăрнарти вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Хресчен çемйинче ашшĕ-амăшĕпе пĕрле ачаранах ялхуçалăх ĕçне хăнăхнă, пĕрлешӳллĕ хуçалăхра вăй хунă. Салтака кайиччен ял ĕçченĕсене икĕ çул кино кăтартнă. Инçет Хĕвелтухăçĕнчен çар хĕсметĕнчен таврăнсан, Вăрнар район хаçатĕнче журналистика тата литература çулĕ çине тухнă. Редакцире ĕçленĕ хушăрах тăван колхозри ял çамрăкĕсене ертсе пынă, ра йонти, республикăри комсомол активисчĕ пулнă. 1960 çулта ăна СССР журналисчĕсен Союзĕн членне, 1961 çулта КПСС ретне илнĕ.

Каярахпа вăл Элĕк райхаçатĕнче, «Çамрăк коммунист», «Советская Чувашия» хаçатсенче, Чăвашрадиора ĕçленĕ, «Капкăнпа» «Тăван Атăл» журналсен, «Вучах» хаçатăн тĕп редактор заместителĕнче тăрăшнă, Йĕпреç райхаçачĕпе «Тракторострой» тата «Илем» хаçатсен редакторĕ пулнă.

Пĕлĕвне малалла И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче тата партин Чулхулари аслă шкулĕнче вĕренсе ӳстернĕ.

Владимир Кузьмин ачаранах илемлĕ литература енне чунĕпе сулăннă, ялта алăпа çырса илем журналĕ кăларнă. Вăл — «Шурăмпуç çăлтăрĕ», «Хулăн тетрадь», «Шăратнă сыпă», «Юрату каварĕ», «Çĕр пики», «Вăрланă юрату», «Касура», «Тур палли», «Вĕçев» повеçсен, «Тымар», «Çăлкуç», «Усламçă», «Исток» романсен, «Виçĕ юман», «Тип мунча», «Шухăшлама вăхăт пур-ха», «Картлашка», «Сава Савви савалать», «Аттесен çулĕпе», «Алăри пӳрнесем те тан мар», «Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕ курнă мыскарасем», «Пучок смеха», «Савнисĕр савăк çук» кĕнекесен, «Пахус паккусĕ», «Хĕрсĕр ял та хĕсĕр мар», «Чĕркуç шывĕ — чĕрĕ шыв» пьесăсен, нумайнумай калавсемпе илемлĕ очерксен, фельетонсен, кулăшсен авторĕ.

Ăна Алексей Талвир ячĕллĕ литература премине панă. Вăл 1992 çултанпа Раççей Федерацийĕнчи писательсен Союзĕн членĕ.